33-101

С. Лашман

# Полшевикла кĕрешĕве



йала валли

## пйессăсем

3 пп. листи

С. Лашман.

# Поԓшевикла кӗрешӗве.

(КӐВАК КИПКЕ)

Литмонташсем.

Акитпйессӑсем.

Хӗрлӗ улахсем.

Чуваш...ая
Кн...жная палата
г. Чебо-сары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

Ђӑвашсен Патшалӑх Истаттӗлстви.

Шупашкар 1933

# ТУПМАЛЛИ

| | | стр. |
|---|---|---|
| 1. | Акрокуљтпоххота | 3 |
| 2. | Аслă Октăпĕр | 18 |
| 3. | Пĕр йалта | 26 |
| 4. | Çураçу | 55 |
| 5. | Тăшман ĕçĕ | 70 |

Послано в производство 5 марта 1933 г,
Подписано к печати 25 ноября 1933 г.
Редактор Чувашгиза Н. Васянка.
Техредактор А Быков.

Уп. Чувашлита № 1356. Заказ № 324. Инд. Х—5. Чувгиз № 59
Тираж 3100. Ст. ф. б. 72×1(5. В п. л. 35000 зн.

## Акрокуљтпоххота.

### Литмонташ.

### Литмонташа вулакансем.

1. ПОЕТ.
2. ПĔРРЕМĔШ САСĂ.
3. ИККĔМĔШ САСĂ.
4. ВИÇÇĔМĔШ САСĂ.
5 ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.
6. МУСĂКÇĂ.

Хăш сасă мĕнле вырăнта каламаллине, вырăнти вăйа кура, рукковотиттĕл хăй валеççе парăт.

Мусăк Утарнĕксен маршне выљăт. Мусăк выљанă майĕпе стсенă çине вулакансем тухса тăраççĕ. 2—3 сыпăк каланă хыççăн мусăк ђарăнăт.

ПОЕТ.

Кĕрлет совет çĕрĕ,
Кĕрлет тĕппипе.
Çĕршыв пирĕн ђĕрĕ,
Вĕрет вăл ĕçпе.
Мĕлйун-мĕлйуншарлă
Ĕçхалăх çынни
Ĕçлет ак утарлăн—
Хавас, ывăнми.
Еçлет вăл вут тимлĕн
Хĕрсе, ăмăртса,
Пилĕкçул виçишĕн
Васкăт тупăшса.
Кĕрлет Совет çĕрĕ,
Кĕрлет тĕппипе.

Совет ҫӗрӗ ҫаплӑн
Ӳсет малалла.
Интустриалисатси,
Коллективисатси—
Тӗппех ытамлаҫҫӗ
Совет ҫӗршывне.

(*Елкер*).

Уралта, Ҫӗпӗрте
Шӑтӑнаҫ пур ҫӗрте
Вут ҫӗлхен рутана шӑратан
Тимӗр-тӑмӑр тӑван томнӑсем.
Тонпасра,
Куспасра,
Хулӑм ҫӗрӗн хутлам айӗнҫе
Тӑсӑлаҫ ҫухрӑмшар штоҫнӑсем,
Тарӑна алтӑнаҫ шахтӑсем.
Ӗп куратӑп:
Уйсем, хирсем урлӑ,
Куратӑп хура вӑрман урлӑ,
Тинӗс урлӑ куратӑп:
Паккура сквашнӗн „хура пурлӑх"
Хура пӗлӗт ҫумнех сирпӗнсе,
Хура пӗлӗт сӑнне тӗрлесе—
Хура нехтӑ
Вӑрхӑнаҭ,
Сӑрхӑнаҭ...
Пушхир урлӑ куратӑп:
Кавкас тӑвӗ
Пилӗкне пиҫӗхлеҫӗ пайан—
Трупа витӗр Паккуран
Хура нехтӑ
Йешӗл симӗс Паттума кайаҭ.
Партти!
Пар приккас рутана,
Приккас пар нехтӑна,
Кӑмрӑка!
Ирӗлмешкӗн,
Пулмашкӑн йан-хурӑҫ!
Татӑлмашкӑн—
Тухмашкӑн машшин! (*А. Петтоки*).

## ПĔРРЕМĔШ .САСĂ.

Итле, пролеттари! Итле, колхоçнĕк! Итлĕр, ђухăнпа вăтамсем, пулас колхоçнĕксем! Пĕрремĕш пољшевикла петтилеткăна çĕнтерӳллĕ тултарни çинђен, унăн калама çук пысăк çитĕнĕвĕсем çинђен сире каласа паратпăр. Итлĕр!

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Пĕрремĕш петтилетка тултарнă. Вăл пирĕн çĕршывăн економĕкле йĕркисенђе пит пысăк улшăнусем турĕ, епĕр сотсиалисăмла економĕк никĕсне хывса çитертĕмĕр.

## ВИÇÇĔМĔШ САСĂ.

ССРС историллĕ кĕске срукрах йăвăр промышлĕннăçа çирĕп ура çине тăратса хăватлăн вăйлатма, çапла вара хамăр çĕршыврах пĕтĕм халăх хуçалăхне реконструксилеме никĕс хывма пултарђĕ.

## ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.

Пролеттари револђутсин ђи паха та пысăк, ђи йăвăр сатађне пурнăçа кĕртнĕ—йалхуçалăхĕнђе тĕпренех улшăну пулђĕ: йалти ђухăнпа вăтам хресђенсен массисем сотсиалисăм йенне татăклăнах çаврăнђĕç. Талккăшпех колхоса куçнă никĕс çинђе кулаксене класĕпех пĕтерес ĕçре татăклă çĕнтерӳ тунă, „кам кама“ тенĕ ленинла ыйтăва хулара та, йалта та йаланлăхах кăпиталисăма хирĕç, сотсиалисăма майлă татнă.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Петтилеткă йалхуçалăхĕнђи ĕçхатĕрĕсене пĕтĕмпех çĕнетрĕ, çĕнĕ, ытларах тухăçлăн ĕçлемелли машшинсемпе ĕçхатĕрĕсем турĕ.

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Пирĕн çĕнтерӳсем йалти ĕçхалăх массисен пурнăçне пит пысăккăн ӳстерсе пыраççĕ, çавăнпа вĕсем (çитĕнӳсем) тата та пысăккăн, тата та катмарăн курăнса тăраççĕ. Мĕлйуншар çынсене йаланлăхах ĕмĕрхи кулак пусмăрĕнђен, çуклăхран, çаралса йулса выçăпа аптăрас хăрушлăхран хăтарнă.

## ВИҪҪЁМЁШ САСӐ

Совет сойусĕнҗи рапоҗҗисемпе ĕҫҫыннисем халӑх хуҫалӑхне реконструксилес ĕҫри ҫитĕнӳсемпе пĕрлех, вĕсен никĕсĕ ҫинҗе куљттурӑна халҗҗен нихӑҫан та пулманлӑх ӳстерме пултарҗĕҫ. Шкул ҫулĕнҗи аҗасене пурне те вĕрентни, хутпĕлменлĕхе пĕтерни, ĕлĕк, патша җухне, пурнакан халӑхран тӑватӑ пайĕнҗен виҫĕ пайĕ хут пĕлмен пулнӑ ҫĕршыв вырӑнне Совет сойусĕ талккӑшпех хут пĕлекен ҫĕршыв пулса тӑни—пит шутсӑрах пысӑк, историллĕ ҫитĕнӳ.

## ТӐВАТТӐМĔШ САСӐ.

Пĕрремĕш петтилеткӑра йатарса уҫнӑ шкулсенҗен, тата тĕрлĕрен аслӑ шкулсенҗен вуншар, ҫĕршер пин кӑмантирсем, иншенерсем, технĕксем, тухтӑрсем, уҗитлĕсем, акрономсем, халӑх хуҫалӑхне ваљҗи тата ытти катӑрсем те вĕренгсе хатĕрлесе кӑлагнӑ. Колхоссен хуҫалӑх орканисаттӑрĕсен катӑрĕсене, прикатирĕсене ӳстерсе хатĕрлес ĕҫ ӑнӑҫлӑн пырать, йалта колхос строиттĕлстви аталанса пынӑ майĕпе мĕлйунлӑ массӑсем хушшинҗи халҗҗен пытанса тӑнӑ талантсем палӑраҫҫĕ.

## ПОЕТ.

Ҫĕршыв пайан—тимĕрҫ лаҫĕ,
Ӳнта хурҫӑлаҫ пурнӑҫа.
Ҫĕршыв пайан
Пысӑк ĕҫ тытнӑ.
Мĕлйунлӑ алпа вӑл ĕҫлет.
Алли ун
Мосољсемпе хытнӑ,
Кив пурнӑҫа хӑвӑрттӑн ишет.
Алли ун
Фронтра та пиҫнĕ,—
Ҫĕнтернĕ.
Ҫĕнтернĕ ĕҫре! (*Уйӑп М.*).
Машшинсем ташлаҫҫĕ,
Таврара вĕлт, вĕлт сикеҫҫĕ.
Ей,васкар, васкар ха, теҫҫĕ,
Хӑвӑрт хӑвӑртлаҫҫĕ.
Васкӑр, васкӑр, җупӑр, выљӑр,

Сирĕн йурра итлĕп!
Пуçăмра вăрман кашлавĕ,
Лăпкă ир илемĕ.
Куçăмра ак савăт шавĕ,
Кам ăна итлемĕ?!
Ак станок, станок хаваслă,
Шеçтернепе туслă.
Ех, выђаť! Ес хăв та ташлăн,
Хăв йурруна пуçлăн... (*Уйăп М.*).

Мусăк Итталири рапођђисен кимăнне выђаť. 2—3 сыпăк каласан, каллех вулакансем пуçлаççĕ.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Раппăртлатпăр Ђăваш çĕршывне!

### ПОЕТ.

Ķашкăр ĕшни, тесе калаттăмăрђђĕ
Ĕлĕк, револђутсиђђен,
Вăл вырăна.
Кĕмсĕртетсе, çĕпре пек
Сарăлса
Ларађђĕ унта
Çеливан арманĕ.
Йĕри-тавра куршанак,
Хупах, йўç ерĕм,
Упа тухйи—
Ўсеђђĕç кунта арканса
Çўлĕ çĕмĕртрен те çўлĕрех.
Тискерђђĕ. Тĕттĕмђђĕ.
Майĕпен çаврăнађђĕ
Арман урапи.
Тикĕт пек хура шыв
Майĕпен йухађђĕ
Валака.
Çĕрĕн-кунĕн
Кĕмсĕртететђђĕ арманĕ.
Çĕрĕн-кунĕн
Арман патĕнђе
Тăрађђĕç лавсем.

...ВАШ... ...АЯ
КН...ЖНАЯ ПАЛАТА
...АССР

Пуранаҫҫӗ кунта саралса
Ҫапла хуҫа Ҫеливан.
Арман авӑртса,
Кивҫен укҫа парса,
Тара ҫӗр илсе,
Ӗмеҫҫӗ вӑл ерешмен йевӗрлӗ
Ҫухӑнпа патракӑн,
Вӑтамӑн йунне...
Ылханатӑп,
Ырӑпа асӑнмастӑп
Кивӗ тӗнҫене.
Пӗт.
Салан.
Вутпа ҫунса кай, ес,
Кашкӑр ӗшни! *(Лашман)*.

Хӗмпе ҫиҫен йалав хӳттинҫе
Тӑрса ураланнӑ хаҫ ҫӑваш ӗҫҫынни,
Авал ҫух, патшалӑ хӗсу айӗнҫе
Мӗн ҫухлӗ ҫунман ес ҫӑн ирӗк пирки?
Ак ҫав кӗтнӗ ирӗк
Хаҫ сан аллӑнта;
Ес сывӑ, ес ҫирӗп,
Ҫут пурнӑҫ—пирте.
Пайан сан уйав:
Ав—
Ҫиҫет вут йалав,
Йӗри-тавра шав,
Хаваслӑ йӑслав!.. *(Елкер)*.

Ката хӗрринҫен инҫе мар
Ларать ҫӗн савӑт—
Симӗс тумтирпе
Пӗркенсе.
Савӑт ҫуртӗнҫен
Ман савнӑ тус—
Пӑс—
Пӗр вӗҫӗмсӗр вӗҫтерет
Ман йенне
Сар саппан.
Ун йулташӗ—

Ђейе машшин—йурлаҭ
Пĕр вĕçĕмсĕр.
Хăйĕн йуррипеле илĕртсе
Мана ђĕнет хăй йенне.
Ĕнерхи патрак,
Ђухăнпа вăтам—
Утарнĕксем кунта, хуçа,
Ĕçлеççĕ кунта
Хĕрсе, çĕкленсе.
Сиксе вĕре, хуран,
Ђашлаҭ пăсĕ,
Хăвăрттăн çавăрăн урапа,
Çĕнĕ йурă йанăра
Таврана.
Ей, машшинис,
Тĕплĕрех пăхсам
Ес пăс хуранне!
Петтилеткă планне
Тултараççĕ вĕт кунта
Васкавлăн...
Йĕри-тавра уйхир—
Колхос уйхирĕ.
Талхăраҭ те кĕçенет
Кунта
Хурçă лаша
Хурçă сасăпа.
Вăрман урлă ав
Сгвăг
Ĕçлет унта кĕрлесе.
Йалкăшаҭ електритсăра
Совхос.
Инçе мар ӳсет
Колхос... (*Лашман*).

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Ђăваш респуплĕк çитĕнĕвĕсем çинђен раппăртлатпăр. Итле, пролеттари! Итле, колхоçнĕк!

Ђăваш çĕршывĕнђи пĕрремĕш петтилеткăна тăвата çулта тултарнă. Петтилеткăна тăвата çулта тултарнă

çĕрте пирĕн хăвăртлăхсем хăшпĕр ĕçсем тăрăх Совет сойусĕпе Раççей фетератсинђи хăвăртлăхсенђен те пысăкрах пулђĕç.

## ВИÇÇĔМĔШ САСĂ.

Хамăр респуплĕк çĕршывĕнђе малта пыракан технĕклă çĕнĕ машшинсемпе лартса тунă Çĕмĕрлепе Куславкка кăмпинађĕсем—„петтилеткăпа туса çитерне сотсиалисăмла интустри крепĕçĕсем"—çаксем вĕсем Ђăваш çĕршывне интустрилес йенĕпе хамăр тунă пысăк çитĕнӳсене питех те лайăх кăтартса параççĕ.

## ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.

Патша самани вăхăтĕнђе Ђăваш ĕçхресђенĕсен 3—5 кектар çинђе тытăнса тăракан, суха пуçĕпе ĕçлекен, акротехнĕккă тĕлĕшĕнђен пуçĕпех нимĕн те пĕлмен вакă хуçалăхсем йухăнса çитес, çукка йулас, ĕмĕрлĕхех ђуралăха кĕрсе ӳкес, пĕтсе ларас çулпа пынă. Çак хуçалăх килйыша тăрантмалăх та тупăш пама пултарайман. Çитменнине тата патша правиттĕлствипе унăн ђиновникĕсем тӳсме çук пысăк куланайсем хурса сĕвеленĕ; пупсем, усламçăсем, ростовшђиксем ăна експлоататсилесе çаратса пураннӑ.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Халĕ Октăпĕр тивлеђĕпе ирĕке тухнă колхоссене пĕрлешнĕ ђăваш çĕршывĕнђи ђухăнпа вăтамсен масси пролеттари патшалăхĕнђен машшинсем, çĕре çемçетмелли йапаласем, суртлă вăрлăхсем, акрономсем илсе, хут пĕлекен пулса, патшалăх парăмĕсене тӳлесе татнă хыççăн, колхоспа совет сутуилĕвĕ урлă хăйĕн пурнăçне витсе пымаллăх çеç мар, тата хăйĕн кулђтт̧урĕ хăпарнă таран кирлĕ ыйтусене витсе пымаллăх та çителĕклĕ таран тупăш илекен пулђĕ. Халĕ лайăх ĕçлекен кашни колхоçнĕках пĕђђен хуçалăхлă ĕçхресђенĕ илекен тупăшпа танлаштарсан 1,5—2 хут ытла тупăш илет.

## ПОЕТ.

Йалсем те ак пирĕн
Çĕнелђĕç кăкран,
Вакланђăк уйхирĕн
Сирлет ђик-йăран.

Кив йал ҫине шăтрĕ
Ҫĕн опҌă.
Ҫеҫен хире шăтрĕ
Тыр хапрăк—совхос.
Усет колхос,—ҫĕнҌĕ
Кулаклă йала.
Хастар хресҌен пĕлҌĕ:
— Телей—колхосра! (*Елкер*).

## ИККĔМĔШ САСĂ.

КуљттурĂ ÿсĕмне кăтартакан паллăсем тата ытларах тĕлĕнтермелле. РевољутсиҌҌенхи вăхăтра хута пĕлекенсен хисепĕ пурĕ те 18 проҌ. ҫеҫ пулнă пулсан, пĕрремĕш петтилеткă иртнĕ ҫĕре вĕсен хисепĕ 95% ҫитрĕ. 8 ҫултан 15 ҫула ҫитеҌҌенхи хушăри аҌасем тăвата ҫуллă шкулсенҌе кăна мар, ҫиҌĕ ҫуллă шкулсенҌе те укҫа тÿлемесĕрех вĕренеҫҫĕ. Ҫак аҌасене вĕрентнине патшалăх йалхуҫалăх налокĕпе культспор тăрăх пухăнакан укҫаран икĕ хут ытларах расхут кăларать. ҌăвашсенҌен аслă шкулсенҌе, рапфаксенҌе, техникумсенҌе, ФСУ, совпартшкулсенҌе, курссенҌе, т. ыт. шкулсенҌе, ăслăлăхпа тĕпҌев институҌĕсенҌе 20.000 ҫын ытла вĕренеҫҫĕ, вĕсем хамăр респуплĕкре те, респуплĕк тулашĕнҌе те вĕренеҫҫĕ. Вĕсене вĕрентме патшалăх кашни вĕренекен аҌа пуҫне ҫулталăк хушшинҌе 500 тенкĕ ытларах расхут кăларать. Аслă шкулсенҌе 1500 ҫын ытларах вĕренеҫҫĕ, вĕсене патшалăх кашни вĕренекен ҫын пуҫне ҫулталăкне вăтамран 1.200 тенкĕ таран парса тăрать.

## ВИҪҪĔМĔШ САСĂ.

РевољутсиҌҌенхи вăхăтра Ҍăвашсен пĕр хаҫат та пулман пулсан, хаљхи вăхăтра, респуплĕк ҌентăрĕнҌе тухса тăракан хаҫатсемпе шурналсемсĕр пуҫне, кашни районтах хаҫат тухса тăрать. РевољутсиҌҌенхи вăхăтра хаҫатсене кашни кил мар, кашни йал та ҫырăнса илме пултарайман. Халĕ кашни 2—3 кил пуҫне пĕр хаҫат тивет. Тата кашни кил пуҫне пĕр хаҫат ытларах тивекен йалсем те пур пирĕн.

## ПОЕТ.

Кашкăр ĕшни текех çук.
Ĕлĕкхи мĕскĕнлĕх,
Ђуралăх
Пĕтнĕ.
Патрак ађи—
Кĕтӳç—пайан
Атăлстройра,
Унта вăл
Иншенер!
Инке „Канаш“ вулаť,
Йалта вăл прикатир.
Йамăкăм—технĕк шкулĕнђе.
Шăллăмăм—паллă ăстаçă.
Респуплĕкĕм, савăн,
Кĕрле ес хыттăн,
Пайан вĕт есĕ—
Талкăшпех хут пĕлен çĕршын!
Пайан вĕт санăн менелник!
Çĕмĕрле,
Куславкка,
Улатăрпа
Вăрнар—
Тăрса тухăр ĕретĕн
Менелник йаđĕпе
Парата... (*Лашман*).

## ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.

Патша самани вăрмансене, тип çырмасене хăваласа кĕртнĕ, хуласенђен, çырмасенђен айакра тĕттĕм „Вăрманкас“, „Упа çырми“ йалĕсенђе пурăннă ђăваш ĕçхалăх масси Окťапĕрте вăранса, рапођђи класпа унăн партти йертсе пынипе Сотсиалисăмла Совет респуплĕкĕнђи ытти халăхсемпе пĕрле Окťапĕр çапăçăвĕнђе, краштăн вăрçинђе хăйĕн ирĕклĕхне тискер кăпиталисăм пусмăрĕ аллинђен туртса илђĕ, вăл нихçан пулман пысăк хăвăрглăхсемпе ĕлĕкхи самана йулашкисене пĕтерес çулпа пыраť. Вăл комуниссен парттипе пролеттари патшалăхĕ йертсе пынипе хăйĕн автономине орканисатсилерĕ. Унăн хушшинђен совет, хуçалăх, суту-илӳ, коп-

тератси, патшалăх тытăмĕн тата ытти аппараҕĕсенҕе ĕçлеме çĕршерĕн, пиншерĕн тухрĕç; ҕăваш ĕçхалăхĕ пĕрремĕш петтилеткăн аслă ĕçĕсене туса çитерессишĕн мухтавлăн, паттăрăн, ҕаплăн кĕрешрĕ.

ПОЕТ.

Кунçулăмăр ҕапĕ—
Çул ҕапĕ—
Октăпĕр!
Октăпĕр—йыхравçă,
Вăл ирĕк хĕвелĕ,
Пăлхав—ĕç çул пуçĕ.
Сӳнми Çут Йупа. (*Ваçанка*).

Мусăк „Çамрăк кварти" маршне калаť.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Пĕрремĕш петтилеткăна çĕнтерӳллĕ тултартăмăр. Иккĕмĕшне кĕтĕмĕр. Пĕрремĕш петтилеткăра тунă çитĕнӳсене иккĕмĕшне те куçарассишĕн, поҕшевикла хăвăртлăхсене тивĕçлĕн тытса пырассишĕн, пахалăхшăн çапăçассишĕн, классăр сотсиалисăмлă опҕăлăх тăвассишĕн—çĕнĕ çĕнтерӳсем патне малалла!

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Петтилеткăн тăваттăмĕш йулашки çулĕнҕе епĕр нумай ĕçсемпе Сойусĕпе пĕрремĕш ĕрете тухрăмăр: тырпулсене пухса кĕртессипе, кĕрхи акапа, тырпул хатĕрлевĕпе, аш-какай хатĕрлевĕпе, вăрман хатĕрлевĕпе укçа-тенкĕ мопилисатсилессипе, експăртпа, çулйĕр строиттĕлствипе, пур аҕасене те 7 çул вĕрентессине сарассипе, тата ыттипе те. Ку ӳсĕмсем парторканисатси йертсе пынипе рапоҕҕисен, колхоçнĕксен, пĕтĕм ĕçхалăхĕн активлăхĕ, политтĕкла ăнланăвĕ, куҕттурлăхĕ ӳснине кăтартаççĕ. Вăл ӳсĕмсем, пĕрремĕш петтилеткăра тунă ӳсĕмсем, иккĕмĕш петтилеткăра хамăр ĕçе тата малалла сарма, хăвăртлама май туса панине кăтартаççĕ.

## ВИÇÇĔМĔШ САСĂ.

Пĕрремĕш петтилеткăра тунă çитĕнӳсене никĕсе хурса, ПСК(п)П 17-мĕш конферентсийĕ çапла кăтартса хăварҕĕ: „Иккĕмĕш петтилеткăн политтĕкла тĕп саłаҕĕ

вăл—кăпиталисла елементсене, çавăн пекех тата классене те татăклăнах пĕтересси, каслă уйрăмлăхсемпе експлоаттатсине кăларса тăракан сăлтавсене пĕтĕмĕшпех пĕтересси, еккономĕккăра тата çынсен ăстăнĕнђе те кăпиталисăм йулашкисене çĕнтересси, çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăхне классăр сотсиалисăм опђĕствин ăнланулла, тата хастарлă строиттĕлĕсем тăвасси пулат“.

## ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.

Йалхуçалăх йенĕпе çакăн пек сатађ тăрат: „Йалхуçалăх йенĕпе сотсиалисăмла рекконструкси ĕçне пурнăçа кĕртсе çитерсе машшинпа трактăр стантсисем пĕтĕм колхоссене çавăрса илмелле тумалла, тата йалхуçалăх происвотствине механисатсилессин тĕп ĕçне туса çитермелле. Колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетесси, тата колхоçнĕксен массине сотсиалисăмла вĕрентсе çитĕнтерес сатађсем иккĕмĕш петтилеткă тĕп вырăнта пулмалла“.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Иккĕмĕш петтилеткăн çак тĕп сатађсене пурнăçлама тĕплĕ никĕс хывассипе, иккĕмĕш петтилеткăра та полђшевикла çитĕнўсем пулђђăр, ĕçхалăх массисене иккĕмĕш петтилеткă ĕçĕсем тавра мопилисатсилес, тесе, 1932-мĕш çулта теккапĕр уйăхĕнђе пулса иртнĕ Партти Ђăваш Опкомĕн 4-мĕш пленăмĕ 1933-мĕш çулăн малтанхи кварттăлĕнђе пĕтĕм Ђăваш респуплĕкĕпех акрокуђтпоххот туса иртерме йышăнђĕ.

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш петтилеткă ђиккинђе иртекен акрокуђтпоххот массăллă ĕçсен формисенђен пĕри пулмалла, çак акрокуђтпоххотра ђи малтан пур ĕçсем тăрăх та, кĕрешўсен пур уђаскисенђе, конкретлă ĕçсемпе примерсем çинђе Совет сойусĕн, крайра, тата хамăр респуплĕкĕн пĕрремĕш петтилеткăра тунă çитĕнўсене кăтартса ăнлантармалла, пĕрремĕш петтилеткăна ăнăçуллă тултарни Совет сойусĕнђе малалла сотсиалисăма тата хыттăн та вăйлăн ўссе пыма никĕс хатĕрлени—иккĕмĕш петтилеткăн сатађĕсене, кĕрешў çулĕсене уçса панине ăнлантармалла.

## ВИҪҪĔМĔШ САСĂ.

Иккĕмĕш петтилеткăна, классăр сотсиалисăм опђĕстви тăвакан петтилеткăна кĕрсе, пирĕн пĕрремĕш петтилеткăра тунă кĕрешӳпе ҫĕнтерӳсен урокĕсем тăрăх, 1933-мĕш ҫулăн, тата иккĕмĕш петтилеткăн халăх хуҫалăхĕн планĕсене тултарассишĕн массăсен кĕрешӳ йухăмне тата та ытларах вăйлатмалла.

## ТĂВАТТĂМĔШ САСĂ.

Акрокуљтпоххот кăпиталисăм йулашкисене—хуҫалăхри, происвотстăври, сотсиалисăм опђĕствинђе ĕҫлекен ҫынсен пурнăҫĕпе ăстăнĕнђи куљттурсăрлăха пĕтерме орканисатсиленĕ массăллă штурм пулмалла. Акрокуљтпоххот вăл ҫĕршер пинлĕ ĕҫхалăхĕн хăйĕн ĕҫĕ пулмалла. Акрокуљтпоххот технĕккăна алла илме, тырпул тухăҫлăхне хăпартма, ĕҫтухăҫлăхне хăпартма, пĕтĕм ĕҫĕн пахалăхĕсене ӳстерме, ĕҫре, шкулта, килте тасалăхпа куљттурлăх тума, колхоссенђе, прикатăсенђе, савăтсенђе, тсехсенђе, вăрманта, стройккăра сотсиалисăмла ăмăртăва, хастарлăха, пуҫарăва вăйлатма орканисатсилемелле!.

## ПĔРРЕМĔШ САСĂ.

Пирĕн умра пит те пысăк сатађсем тăраҫҫĕ:

Массăллă политтĕклă вĕрентĕвĕн ĕҫне пит те нумай лайăхлатмалла,—ҫакна тума пире, уйрăмах, колхос строиттĕлстви тавра пыракан клас кĕрешĕвĕн ҫĕнĕ тапхăрĕ, колхоссем ăшĕнђе клас кĕрешĕвĕн елеменђĕсем палăрнисем хушаҫҫĕ.

## ИККĔМĔШ САСĂ.

Ĕҫĕн пур уђаскисенђе те ăнлануллă ĕҫ тистсиплинине хăпартмалла,—ĕҫ тистсиплинине ҫӳлĕ пусăма ҫитиђђен хăпартас пулаť, сатанисене пурне те хисеплĕхпе пахалăх кăтартăвĕсем тăрăх тултармалла, массăна опђăлăх пурлăхне сыхлама, ĕҫхатĕрĕсем ҫине сотсиалисăмла пăхма, ĕҫ патне сотсиалисăмла пыма вĕрентмелле, йаланах ҫакна асра тытас пулаť: ăнлануллă тистсиплинăна ĕҫре туни вăл—сотсиалисăмлă ăмăртупа утарлă ĕҫ пулаť.

## ВИҪҪĔМĔШ САСĂ.

1933-мĕшҫулта йалхуҫалăхĕнђе тырпул тухăҫлăхне хăпартассинђе татăклă улшăну тумалла, ҫакна тума колхоссене орканисатсипе хуҫалăх тата политтĕк йенђен тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕҫлемелле,

уйрӑм районсенҗе, йалсенҗе, колхоссенҗе паларакан кулакла сапотташа ҫӗмӗрмелле, колхоссене хӗсӗнсе кӗнӗ кулаксенҗен тасатмалла, акротехнӗккӑпа политтӗк пӗлӗвӗсемпе хӗҫпӑшалланнӑ ҫирӗп колхос активне тумалла, ҫуракине лайӑх, орканисатсиллӗ тата кӗске вӑхӑтра иртерме хатӗрленес пулаť.

## ТӐВАТТӐМӖШ САСӐ.

Ҫак сатаҗсене пурнӑҫа кӗртесси массӑсен куҗттурлӑхне хӑпартассипе таҗӑ ҫыхӑнса тӑраť. Куҗттурӑпа ҫутӗҫ уҗрештенисен җӑннипе сотсиалисӑмла ҫӗнӗ куҗттурӑн вуҗахӗсем пулмалла, партти кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе хайсен ӗҫӗсене тӗпрен лайӑхлатмалла.

## ПӖРРЕМӖШ САСӐ.

Куҗттурӑ вӑл Ленин вӗрентни тӑрӑх—тӗнҗере пирвайхи хут ҫӗнтерсе илнӗ ҫӗршыври пролеттариатӑн пӗтӗм хуҫалӑхпа политтӗк пурнӑҫне тытса тӑма пӗлни пулаť. Куҗттур револютсинҗе кивӗ йӑласемпе, кивӗ хӑнӑхусемпе, харпӑрлӑ шухӑшсемпе клас тӑшманӗ итейӑ йенҗен хирӗҫнипе йулашки татӑклӑ кӗрешу пыраť. Ленин пире ҫак хирӗҫу вӑл „җ и т а р ӑ н н и, җи вӑйли“—тесе вӗрентнӗ, ҫак хирӗҫу темӗн тӗрлӗ формӑсемпе палӑраť, вӑл питӗ җӑтӑмлӑ. Ку вӑл—марксисӑмпа-ленинисӑма усҫӑнах хирӗҫ пыракан теорисене сӗтӗрсе кӗртме тӑрӑшни кӑна мар, вӑл тата усламҫӑ, експлоататтӑр, кулак итеолокийӗ, ӗнер харпӑрлӑ пулнӑ, пайанхи колхоҫнӗкӑн ӑнланӑвӗнҗе пурӑнакан харпӑрлӑ хуҫалӑхӑн йӑлипе хӑнӑхӑвӗ, вак харпӑрлӑ тратитсине происвоıствӑна илсе килнӗ рапоҗҗин ӑнланӑвӗ. Ҫакӑ вӑл—патшалӑхпа копператси аппараҗӗсен практӗклӑ ӗҫӗнҗи пӳрократтисӑм, кивӗ йӗркепе ӗҫлени, ҫӗннине йышӑнса ӗҫлеме пӗлменни.

## ИККӖМӖШ САСӐ.

Ҫак кӗрешӳре кам кама ҫӗнтерес ыйтӑва истори сотсиалисӑма, сотсиалисӑмла куҗттурӑ майлӑ татса паҗӗ. Акрокуҗтпоххот вӑхӑтӗнҗе пӗтӗм вӑйа, пӗтӗм вӑйхӑвата мопилисатсилемелле, политминимума, техминимума, акроминимума, санминимума пурнӑҫа кӗртни пире иккӗмӗш петтилеткӑн малтанхи ҫулӗнҗех, җи малтан—тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартма, унӑн пахалӑхне ӳстерме, тата куҗттурлӑха хӑпартассине анлӑн сарса йама пулӑшмалла.

## ВИҪҪЁМЁШ САСӐ

Кашни рапотнӗкӗн, вӑл кирек мӗнле ҫӗрте ӗҫлет пулсан та: рапоҙҙи, колхоҫнӗк, партрапотнӗк, совет ӗҫне тӑвакан, копператтӑр, хуҫайствӗннӗк, иншенер, технӗк, уҙитлӗ, враҙ, акроном, лавккара, савӑтра, претприйатти, колхос кӗнҙелерӗнҙе ӗҫлекен кашни ҫыннӑн ӑнланулла ҫирӗп ӗҫ тистиплинишӗн кӗрешӗве вӑйлатмалла, сатанисене ытлашшипех тӳлтармалла, хӑйӗн примерӗпе, хӑйӗн паттӑрлӑхӗпе ыттисене те лайӑх ӗҫлеме вӗрентмелле.

## ТӐВАТТӐМӖШ САСӐ

Акрокуљтпоххотӑн ҫак тӗп сатаҙӗсене пурнӑҫласси районсемшӗн, колхоссемшӗн, йалсемшӗн ҙаплӑлӑх, мухтавлӑх, ҙыслӑлӑх ӗҫӗ пулса тӑрать.

Акрокуљтпоххота!

## ПОЕТ.

Ӗмӗр сӳнми,
Пролеттари вуҙӗ
Йунра.
Алура тӗреклӗ.
Тӗрӗссӗн тапать
Ҙӗре.
Кунҫулӑмӑр ҫутӑ,
Пуласси тата ҫутӑрах.
Ишех, ишех, ес, малалла,
Респуплӗкӗм.
Ҫулу сан паллӑ,
Тӗрӗс.
Ҫитех, ҫитех есӗ
Комун тӗнҙине.
Руљре вӗт санӑн
Ленинла Тӗпком.

(*Лашман*).

Мусӑк „Хӗрлӗ снамӗллӗ“ марш калать. Ҫак мусӑкпа вара литмонташ пӗтет.

## Аслӑ Октӑпӗр*).

(XV-мӗш Октӑпӗр)

**Вулакансем:**

ПӖРРЕМӖШ САСӐ (1)—комсомолӗс.
ЙККӖМӖШ САСӐ (2)—хӗраҫа комсомолккӑ.
ВИҪҪӖМӖШ САСӐ (3)—пионер.
Улттӑн, йе 8—9 вулама та йурат.

*) Иортански литмонташӗ тӑрӑх ҫырнӑ.

## I.

1. 1917-мĕш çул. Апрелĕн 3-мĕшĕ.

2. Кам астумĕ-ши çак савăнăçлă куна?!

3. Çак кун, апрелĕн 3-мĕшĕнђе, йут патшалăхсенђе пурăннă хыççăн, Питĕре, халђхи Ленинкрата, полђшевиксене йертсе пыраканĕ В. И. Ленин таврăнаť.

1. Кам астумĕ-ши çак савăнăçлă куна?!

2. Раççей çĕрне кайалла таврăнсанах, вăл вăхăтра пуршуаçи хуçа пулса тăнине хирĕç пулса, Влатимĕр Илйиђ ĕçхалăхне çакăн пек лосăнк параť:

ПУРТЕ. „Пур влаç та **со-вет-се-не**!“

Стсенă хыçĕнђе халăх шавĕ. Мусăк. Калаçусем.

3. Питĕрте, Финђанги ваксалне Ленина кĕтекенсем пухăннă. Кунта такам та пур: хапрăк-савăт телекађĕсем, çар ушкăнĕсем, ĕççынnисем... Кронштатри матроссем Ленина кĕтсе илекен хисеплĕ хурала тăнă.

1. Акă пойăс та çитрĕ. Акă В. И. Ленин вакontан тухаť... Акă вăл ваксал умĕнђе.

2. „На караул!“

3. Хисеплĕ хурал В. И. Ленина çар йĕркипе ђысласа кĕтсе илет.

Стсенă хыçĕнђе мусăк Интернатсионал калаť, парапан сасси. Кĕтсе илекенсем Ура! кăшкăраççĕ.

1. В. И. Ленин ваксал патне пынă халăха проневик çине тăрса сăмах калаť.

2. Акă мĕн каланă ĕçхалăхне вăл вăхăтра В. И. Ленин:

3. Вăхăтлăх правиттĕлстваă ĕçхалăхне суйа сăмахсемпе улталаť. Халăха çимĕç, çĕр парас вырăнне вăл вăрçă тата выçăллă пурнăç параť. Пирĕн Вăхăтлăх правиттĕлствăпа кĕрешме кирлĕ. Сотсиалисăмлă револђутси пĕтĕмпех çĕнтериђђенех пирĕн кĕрешмелле.

Стсенă хыçĕнђе Ура! кăшкăраççĕ.

1. Çак сăмахсене илтсен, рапођђисемпе салтаксен ђĕрисем Ленин ĕçĕпе пĕрлешнĕ.

2. Вăхăт çитнĕ ĕнтĕ! Çĕмĕр те, тапта ултав тĕнђине!

3. Кĕрешĕве!

1. Ленин пирĕнпе!

2. Сывă пултăр Ленин!

3. „Пур влаç та советсене!“

Стсенă хыçĕнђе „Смело товарищи“ юурлаççĕ. Ура! кăшкăраççĕ.

## II.

Стсенă хыçĕнҫе пăшал, пулемет сасси. Мусăк.

1. Аслă кунсем...

2. Ленин каланă: Октăпĕрĕн 24-мĕшĕнҫе тухма иртерех, 26-мĕшне йулсан, кайарах пулĕ, тенĕ.

3. Октăпĕрĕн 25-мĕшĕнҫе, „Аврора" карап çинҫен малтанласа халăх тăшманĕсем çине тупă пеме тытăннă.

Стсенă хыçĕнҫе тупă сасси.

1. Акă проневиксем çĕре ҫĕтретсе Çимний творес йенелле кайаççĕ. Матроссем, салтаксем çавăнтах пĕрле ҫупаççĕ.

2. Револҫутсилле вăй, револҫутси хăй пырат Çимний творесра ларакан Вăхăтлăх правиттĕлствă çине.

Стсенă хыçĕнҫе пăшал, пулемет, тупă сассисем.

3. Çимний творес патĕнҫе пулеметсем ҫарăна пĕлмесĕр йанăраççĕ. Хĕçпăшаллă ĕçхалăхĕ Çимний твореса сыхлакан йункĕрсем çине наступлени тăват.

1. Çынсем ўкеççĕ, ҫупаççĕ малалла.

Стсенă хыçĕнҫе çапăçу сассисем.

2. Çимний твореса илтĕмĕр... Револҫутсилле фронт Невски урамне куçрĕ. Унтан вăл ҫукунçулсем тăрăх Твер хулине, Мускава, Сараттăва, Калукăна, Ҫулхулана Тоншывĕ çине куçрĕ.

3. Револҫутси!

1. Кашни хула, кашни шыв, сăртпа ту, кĕпер урлă йала куçрĕ револҫутси!

2. Револҫутси! Пролеттарисен револҫутсийĕ!

3. Ленин полҫшевиксем револҫутси пуçĕнҫе!..

Стсенă хыçĕнҫе сасăсем: Сывă пултăр Ленин! „Пур влаç та советсене!"

1. Çак тапхăр çинҫен В. И. Ленин çапла каланă:

2. Раççей историнҫе халĕ çĕнĕ тапхăр пуçланҫĕ. Çак виççĕмĕш револҫутси хăйĕн ĕçĕсемпе пире сотсиалисăма илсе пырат, тенĕ В. И. Ленин.

3. Пролеттарисен револҫутсийĕ!

1. Пĕрисемшĕн çак сăмахсенҫе çĕнтерў савăнăçĕ!

2. Теприсемшĕн—хăрушăлăх, йулашки пурнас кунсем!

3. Ей, кăпитал ҫурисем!

1. Хура çăхансем!

2. Есĕр вĕт çав вăхăтра пирĕнпе çапăçакансем.

3. Вунпилĕк çул маларах, есĕр вĕт, улпут-хуçасем, хăвăр пĕтес кунçулăрсене шута илсе, пролеттарисен револӡутсинӡен хăраса, хăвăр ирĕкĕре сыхласа пирĕн çине тапăнтăр.

1. А епĕр çавах ӡĕрĕ!

2. Мĕн калама пултарттăр-ха çакна хирĕç çурма хисеплĕ кăпиталçăсем, тата вĕсен ӡурисем—тĕрлĕ йышши сотсиал-фашшиссем?

### III.

Ку сыпăкра кăпиталçăсем каварлашнине кăтаргнă. Кăпиталçăсем вăрттăн, хуллен калаçаççĕ.

1. Влаçа хăйсен аллине çавăрса илнĕ.

2. Камсем?

3. Рапоӡӡисемпе хресӡенсем.

1. Панксене, хапрăк-савăтсене хуçасенӡен хăйсен аллине илнĕ.

2. Кун пек ĕç вăл çарату, аслă çул çинӡи çаратăвах...

3. Харпăрлăх тивлеӡĕ çине вĕсем тапăннă.

1. Вĕсем ухмаха йернĕ.

2. Куӡттурăпа тсивилисатсине çĕмĕреççĕ.

3. Ку йапала Йевроппăшăн та, Америкшĕн те хăрушлăх.

1. Хас-па-та! Ман пуç çаврăнса кайрĕ.

2. Хас-па-та! Кашни сехет, кашни самант пирĕншĕн хаклă.

3. Пĕтерес пулаť вĕсене халех.

1. Пур йенӡен те вĕсене çавăрса илес тимĕр унка.

2. Вара вĕсене—каппут!

3. Планĕ çапла: Хĕвелаҥăç йенчен паӡаксем; хĕвелтухăç йенӡен ӡеххо-словаксем; çурçĕрте хамăр епĕр, тата Анкли, кăнтăр йенӡе Франтси çарĕсем.

1. Мускав пирĕн çулйĕр стантсийĕ.

2. Вара Раççей каллех пирĕн алăра. Ес мĕнле шутлатăн ку тĕлĕшпе?

3. Икĕ уйăхран хĕрлисенӡен шăрши те йулмĕ.

1. Тĕншĕн, патшашăн, çĕршывшăн, епĕр йаланах хатĕр çапăçма...

2. Астăвăр, нимĕнле хĕрхенӳ те ан пултăр.

3. Йаланах хатĕр!

1. Усала çийĕнђех пĕтерес пулаӗ, унсăрăн вăл пĕтĕм тĕнђене сарăлма пултараӗ.

2. Вутпа çунтарсах тасатас пулаӗ ăна.

3. Пирĕнпе турă! Ей, пурте вăрçа! Аллăрсене хĕçпăшал тытăр. Пурте вăрçа!

Стсенă хыçĕнђе шавлаççĕ, йĕреççĕ, кăшкăрашаççĕ.

## IV.

1. Çук, кăпиталçăсем, харам-пырсем, шутланă ĕçĕрсем пулас çук сирĕн.

2. Сирĕн шурă квартине хирĕç епĕр хамăр Хĕрлĕ çар тăватпăр.

3. Ей, пролеттарисем, советсене сыхлама!

Стсенă хыçĕнђе Хĕрлĕ çар йурри „Как родная меня мать провожала". Çикнал. Шав.

1. Пур йенђен те плоккатă.
2. Пур йенђен те тупă.
3. Шурă тинĕсе-и,
1. Хура тинĕсе-и,
2. Палтти тинĕсне-и,
3. Йе тага Каçпи тинĕсне пырса перĕнен—
1. Праххутпа тухма майсем çук.
2. Приттани йытисем сыхлаççĕ тинĕсе.

3. Ей, пролеттарисем! Тулă, Калукă, Кавкас, Украйнă, Тон, Купаӈ çыннисем, пурте кенералсемпе çапăçма çĕкленĕр!

1. Ей, пролеттарисем, утсем çине!

Стсенă хыçĕнђе Пуӗоннăй маршĕ.

2. Пуӗоннăйăн утлă çарĕ,
3. Ворошшилов полккисем,
1. Ђаппайăв тивиçийĕ,
2. Фрунçĕ çарĕсем—
3. Çĕршер пин ĕççынни—
1. Тăрса тухнă
2. Револђутсийе сыхлама.

Стсенă хыçĕнђе Хĕрлĕ снамĕллĕ марш выђаççĕ.

3. Çак вăхăтра В. И. Ленин çапла ăнлантарађђĕ:

1. „Хĕрлĕ салтаксем, йулташсем! Патша кĕнералĕсем çĕрулпуђĕсемпе кăпиталçăсен влаçне çĕнĕрен лартасшăн

çапăçаççĕ. Хĕрлĕ салтаксем, йулташсем, çирĕппĕн тăма тăрăшăр".

2. „Рапоѕѕисемпе хресѕенсен влаçĕшĕн патша кĕнералĕсене хирĕç çапăçăва!"

3. „Çĕнтерӳ пирĕн йенѕе пулĕ. Малалла, йулташсем!" тенĕ В. И. Ленин.

Стсенă хыçĕнѕе „Путоннăй утлă çарĕ" йурă.

1. Хĕрлĕ çар çĕнтерѕĕ...

2. Урала, Çĕпĕр çĕрне кайалла туртса илтĕмĕр.

3. Шурă çар кайалла тарать.

1. Анкли карапĕсем хăйсен çĕрне кайма тухса йакăрсене хăпартаççĕ.

2. Хĕрлĕ штыксем паттăрăн плоккатă ункине çĕмĕреççĕ.

3. Крым та тасалать. Хĕрлĕ паттăр çар шурă çара Хура тинĕсе хăваласа кĕртет...

Стсенă хыçĕнѕе—„Мы первые из первых" револѕутсилле йурă.

1. Пирĕн Хĕрлĕ çар халĕ те ĕлĕкхи пекех сотсиалисăм стройттĕлстви хуралĕнѕе, комунисла опѕăлăх тăвас кĕрешĕве сыхлать.

2. Хĕрлĕ çар! Пролеттарисен револѕутсийĕ умĕнѕе тумаллисене есĕ турăн. Октăпĕр револѕутсине есĕ тивĕçлĕн сыхларăн.

3. Анѕах епĕр халĕ те сыхă тăмалла. В. И. Ленин каланă пек:

1. „Нийепле те епĕр малашне вăрçă пулас çук, тесе калама пултараймастпăр. Хĕрлĕ çара кирек мĕнле пулсан та çапăçуллă хатĕрлĕхре усрамалла, унăн çапăçуллă хатĕрлĕхне вăйлатсах пымалла", тенĕ вăл.

2. Пĕтĕм тĕнѕери пролеттарисен çулпуçĕ Сталин йулташ сăмахĕ:

3. „Пире йут çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар, анѕах хамăр çĕре те пĕр вершук никама та парас çук".

## V.

1. Вăл вăхăтра совет труписенѕен тĕтĕм тухмасѕĕ.
2. Хуласенѕе çуртсем саланнăѕѕĕ.
3. Йалсене шуррисем çаратса пĕтернĕѕѕĕ.
1. Çĕрсене акманѕѕĕ.
2. Шахтăсем ĕçлемесѕĕç.

3. Ђукунçул кĕперĕсене тарпа сиктере-сиктере йанăђђĕ.

1. Çак пур усал ĕçе те шурă çар, тата интервентсем турĕç.

2. Пољшевиксем аллине çаратса пĕтернĕ ђухăн çĕршыв йулнăђђĕ.

3. Анђах çамрăк совет респуплĕкĕ аптăрамарĕ. Вăл хăйĕн пур вăйĕпе ишĕлнĕ хуçалăха йусама тăрăшрĕ. Комуниссен парттийĕ йертсе пынипе, рапођђи клас хăйĕн ĕçĕсене пурне те туса çитерђĕ.

1. Çĕршыва кăмрăк, пăравус, меттал, тырă кирлĕ.

2. Пролеттарисен алли çаксене пурне те пађĕ. Йухăнна хуçалăха вăл йусарĕ.

Стсенă хыçĕнђе „Утарнĕксен маршне" йурлаççĕ.

3. Ей, йулташ! Пролеттарисем! Йусав фронтне!

1. Кирпĕђ, тимĕр, петтон, йăвăç—

2. Стройккăна!

3. Станок, пăс хуранĕ, машшин—

1. Хапрăксене!

2. Шпал, ређсса, пăравус—

3. Транспăрт çине!

1. Акă трупа хыççăн трупа ўсет пĕлĕтелле... Савăт трупиçенђен шурă пĕркенђĕкĕн вĕлкĕшет çўлелле тĕтĕм...

## VI.

2. Историре ђи кĕске вăхăтра пирĕн кăпиталисла патшалăхсене хăваласа çитсе иртсе каймалла.

3. НЭП-ла Раççейран Сотсиалисăмла Раççей тумалла.

1. Çулйĕр—петтилеткă!

2. Туркçип, Тнепрострой, Макнитту, Уралпа Куспас урлă тухмалла.

3. Партти прикасĕ çапла пулђĕ:

1. Станок патне, машшин патне тăр!

2. Ĕç хăвăртлăхне виçĕ хут ўстер.

3. Хăваласа çитсе иртсе каймала.

Стсенă хыçĕнђе пойăс пынин сасси.

1. Пур вăй та петтилеткăна тăват çулта тултарма!

2. Йулташсем, тĕнђен ултăмĕш пайĕнђе ĕнтĕ епĕр сотсиалисла екknономĕк никĕсне хывса çитерне.

3. Епĕр халĕ сотсиалисăм тапхăрĕнђе пурăнатпăр.

Пойăс пынă сасă илтĕнет.

## VII.

1. Пур срукђен те малтан, пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе туса лартрӑмӑр ҫӗнӗ хапрӑк, савӑтсем.

2. Акӑ халӗ Харккӑвра, Мускавра, Сталинкратра, Ростовра, Ђељапинскинђе ҫӗнӗ стройккӑсем, тӗнђе курман пысӑк кикантсем ҫуталса ларaҫҫӗ.

3. Рапођђи клас ҫӗнӗ пурнӑҫ майакӗсене лартса тухрӗ.

1. Ђулхулари автосавӑт!

2. Макнитту ҫинђи ђукун шӑратакан томнӑсем!

3. Тнеппӑр ҫинђи китростантси!

Ерет хыҫҫӑн ӗрет хапрӑк-савӑтсем тӑрса тухрӗҫ ҫӗршыв талккӑшпех петтилеткӑ вӑйӗпе.

Кутоксем йанраҫҫӗ. Машшин шавӗ. Ӗҫ шавӗ.

## VIII.

1. Пӗрремӗш петтилеткӑна ҫӗнтерӳллӗн тӑватӑ ҫулта тултартӑмӑр.

2. Йӑвӑр промышлӗннӑҫа ҫирӗп ура ҫине тӑратрӑмӑр.

3. Йалхуҫалӑхӗнђе тӗпренех улшӑну турӑмӑр, ӑна сотсиалисӑмла ҫул ҫине кӑлартӑмӑр.

1. Кӑпитал ҫӗршывӗнђе криҫӗс.

2. Совет ҫӗршывӗнђе хунаса ӳсекен ҫӗнӗ вӑй.

3. Кӑпитал ҫӗршывӗнђе кӑпиталӑн йулашки пурнас кунӗсем.

1. Совет сойусӗнђе кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсем савӑнӑҫӗнђен ҫуралнӑ сотсиалисӑм.

2. Ленинӑн ђи лайӑх уђђеникӗ Сталин й-ш ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӗве йертсе пыраҭ пире малалла, Октапӗр ҫулӗпе.

3. Халӗ епӗр классӑр сотсиалисӑмла опђӑлӑх тӑвакан иккӗмӗш петтилеткӑра.

1. Малалли—пӗтӗм тӗнђери револютси, малалли—комунӑ!

2. Сывӑ пултӑр! Октапӗр 15 ҫул тултарни! Сывӑ пултӑр пӗтӗм тӗнђери пролетарилле револютси!

3. Ленин йалавне ҫӳлерех! Револютси йалавне ҫӳлерех! Сывӑ пултӑр комуниссен парттийӗ!

ПУРТЕ. Тӗнђери Октапӗр патне малалла!

Стсенӑ ҫинђе пурте Интернатсионал йурлаҫҫӗ.

# Пĕр йалта*)

(6 карттинлă пйессă)

## Пйессăра выљахансем.

1) ВАÇÇИЛЙĔВ — колхос претçетаттĕлĕ.
2) МАРЙЕ ИНКЕ — претçетаттĕл арăмĕ.
3) УРИНЕ — колхоçнĕтсă, ђухăнскер.
4) УЉКИ — колхос шђетовођĕ.
5) ИВАНОВ — колхос савхосĕ.
6) МИХАЉА — колхоçнĕк.
7) ТИМĔРККЕ — тимĕрçĕ.
8) ÇЕМЕН — колхосран тасатнăскер.
9) ТИХĂН КАВРИЛЂĂ — кулак.
10) КĔРКУРИ—Çемен ывăлĕ.

Колхоçнĕксем. Рапођђисен прикати.

*) Краповски çырнă „Льновод" йатлă пйессăна майлаштарса куçарнă.

## 1-мӗш карттин.

Колхос правлени пӳлӗмӗнҫе. Ваҫҫилйӗвпа Ҫемен хутсем пӑхаҫҫӗ.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Колхос хуҫалӑхне вара есӗ ҫавӑн пекех пӑхрӑн-и?

ҪЕМЕН. Мӗнле пӑхасси пирки ҫынсенҫен ыйтман.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ҫакӑншӑн сана сута пани те сахалтарах пулӗ.

ҪЕМЕН. Сута... Хӑт урӑххине калаҫасҫӗ пӗреххут...

ВАҪҪИЛЙӖВ. Лашана улӑштарса йатӑнҫке, тата мӗн кирлӗ сана? Ҫитмӗл тенкине ху кӑсйуна ҫикрӗн.

ҪЕМЕН. Ӳкҫине епӗ панӑ.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Хушсан парӑн...

ҪЕМЕН. Ан калаҫ текех.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Колхос хӗвелҫавӑрнӑшне парса йанӑ. Кулаксемпе ҫулӑхса ҫӳретӗн. Колхос пурлӑхӗ вӑл опҫӑ пурлӑхӗ, есӗ ӑна нийепле те тӗкӗнме пултараймастӑн.

ҪЕМЕН. Ӗҫсене ил. Халех ӗҫсене илни ҫинҫен мана хут ҫырса пар.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Комиҫҫисӗр илместӗп.

ҪЕМЕН. Ил тетӗп. Ман санпа пуплеме вӑхӑт ат сахал.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Каланӑ сана пӗрре илместӗп тесе... Урӑх ыйтмалли те ҫук.

ҪЕМЕН. Апла пулсан епӗ актӑсӑрах ӗҫсене паратӑп... Шереметсем (тухма тӑрат).

ВАҪҪИЛЙӖВ. Пӗр саманҫта йул-ха.

ҪЕМЕН. Мӗн кирлӗ пулҫӗ тата?

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ӗҫкунӗсене ҫырса пани ӑҫта?

ҪЕМЕН. Сӗтел ҫинҫех ҫавӑнта. Шыра.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ӑҫта хунӑ есӗ ӗҫкунӗсене ҫырса пыракан кӗнекене, тетӗп епӗ.

ҪЕМЕН. Калап вӗт сӗтел ҫинҫе, тесе.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ҫакӑ-и? (хут таткине кӑтартат). Кай еппин тухса.

(Ҫемен кайат, Иванов кӗрет.)

ИВАНОВ. Мĕнле? Ишăнтăни ĕçĕсене?

ВАÇÇИЛЙЕВ. Акă, мĕн пур кĕнҫелерĕ те çак хут татки çеç

ИВАНОВ. Хут сахал пĕлетпĕр, çавăнпа та çапла пулнă.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Кунта вăл кăна мар, Иванов й-ш, кунта урăх ıшăршă та кĕрет. Маншăн пулсан, хăвăртрах шҫеттовот килтĕрҫҫĕ кунта. Вара вăл тупса кăларĕҫҫĕ.

ИВАНОВ. Пайан килмелле мар-и-ха районран?

ВАÇÇИЛЙЕВ. Тăвата уйăх хушшинҫе пĕр паллă та çук вĕт. Мĕнле есĕ тата ĕçкунĕсене шутласа пăхрăн-и? Как нипуй тăвасах пулаŭ.

ИВАНОВ. Астунă тăрăх палăртас пулаŭ ĕнтĕ.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Астунипе ăçтан унта? Манса та хăварăн...

ИВАНОВ. Мĕнле те пулсан шутласа кăларăпăр çапах.

(Кĕрет Михаҫа. Аллисенҫе икĕ кивĕ хăмăт).

МИХАҪА (Иванова). Пăхха, икĕ хăмăт, иккĕшне те тислĕк çине пăрахмалла. Хăмăт-и вара ку?

ИВАНОВ. Ес тўрлет.

МИХАҪА. Мĕн тўрлетмелли пур вĕсене? Есĕр хăвăрăнне тўрлетмелле марринех тупса парăр.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Мĕнле апла? Хăмăтне те Çемен илсе кайнă-и вара?

МИХАҪА. Кам пултăр тата урăххи?

ИВАНОВ. Вăхăтлăха тўрлет-ха кăсенех, унтан куç курĕ.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Урăх хăмăтсем тата пур и, йе çук-и?

МИХАҪА. Çавăн пеккисемех, пурте пĕр йышши.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Апла пулсан, есĕр мĕн пăхнă-ха? Ăçта пулнă сирĕн куçăрсем?

МИХАҪА. Авă, Иванов йулташран ыйтăр.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Аŭăр, тўрлетмеллине тўрлетмех уйăрса хурар. Хăмăт-пăйавсăр, спруйсăр мĕн пултăр вăл.

(Тухма тăраççĕ. Кĕрет Укçине).

МИХАҪА (Укçинене). Ăçта кĕретĕн? Ларасҫĕ пĕрех хут хыçна хĕссе. Тула тухма ирĕк памасŭ...

УКÇИНЕ. Ҫим-ха, ҫим-ха... Ман санпа пĕрик сăмах çеç.

МИХАҪА. Куратăн, ĕçпе кайатпăр. Ман санпа каласма пĕр саман та вăхăт çук.

УКÇИНЕ. Мĕншĕн-ха есĕ Аннасене йамарăн?

МИХАЉА. Кăтартса тăр тата мана. Килте кирлĕ пулђĕç.

УКÇИНЕ. Ĕнесене камăн сумалла?

МИХАЉА. Ăна сан хăвăн пĕлмелле. Ку ĕçе епĕ пĕлместĕп.

УКÇИНЕ. Аннасем кун пирки пыман. Тепри ђирлĕ. Виççĕмĕшĕ хăнана тухса кайнă. Ĕнисем çаплах сăвăнмасăр тăраççĕ. Ĕç-и вăл? Кала-ха мана? Е, еп сана?

(Михаља кайалла ђакăт).

ВАÇÇИЛЙЕВ. Ĕнесене сăвакан çукки çинђен халђен мана мĕншĕн каламастăр-ха?

УКÇИНЕ. Йалан хыçалтан ђупса. Калама вăхăт та тупăнмарĕ.

ВАÇÇИЛЙЕВ (çиленсе). Йĕркесĕрлĕх. Куншăн сире ответ тыттармалла. Аťа, кайăпăр.

(Ваççилйĕвпа Михаља тухаççĕ).

УКÇИНЕ (Иванова). Иванов йулташ, тўррипех калатăп. Выђăхсем патне урăх çынна тупса лартăр. Епĕ тата урăх ĕçлеместĕп.

ИВАНОВ. Мĕншĕн тата?

УКÇИНЕ. Ĕçлеместĕп, ĕçĕ те пĕтнĕ. Пуринпе те харкашмалла. Ахаљ каласан итлемеççĕ. Мĕн епĕ йăтă-им вара?

(Пилĕк-улт колхоçнĕк кĕрсе лараççĕ... Тапак туртма тытăнаççĕ).

ИВАНОВ. Есĕ, Укçине ан ухмахлан.

УКÇИНЕ. Ĕçлеместĕп. Ĕçлеместĕп. Йăтă мар епĕ унта харкашса çўреме.

ИВАНОВ (çиленсе). Мĕнле ĕçлеместĕп? Ху ирĕкўпе ĕçлесшĕ... (Колхоçнĕксене). Есĕр тата мĕн ĕçпе килсе ларнă?

ПУРТЕ. Тапак туртма кĕнĕ.

ИВАНОВ. Тапак туртма правленине килеççĕ-и вара? Ех, ĕçлевçĕсем...

ПĔРИ. Лаша хатĕрĕсем пар, вара кайăпăр.

ИВАНОВ. Мĕншĕн хăвăр тўрлетместĕр?

ПĔРИ. Пирĕн ĕç мар вăл. Вăл ĕç çинђе хăйне çынсем лараççĕ.

УКÇИНЕ. Иванов й-ш, есĕ çапах мана ĕçрен хăтарах.

ИВАНОВ. Каланă сана. Халех ĕнесем патне кай.

УКÇИНЕ. Епĕ урăх ĕçлеместĕп. Урăххине тупăр. Харкашса çӳреме епĕ йатă мар. (Укçине кайат̆).

ИВАНОВ (колхоçнĕксене). Хăçанђђен кунта ларма шутлатăр?

ПĔРИ. Акă туртса пĕтеретпĕр те кайăпăр. Мĕн пире?

ИВАНОВ. Çуракине ыран пайанах тухмалла. Пирĕн ним те илсе килмен-ха.

ПĔРИ. Е, мĕн васкамалли пур, ĕлкĕрĕпĕр-ха.

(Михађа кĕрет).

МИХАЂА. Мĕн сарăлса ларнă? Сирĕншĕн лашасене такам муђи килсе кӳлсе парĕ-и?

ПĔРИ. Лаша хатĕрĕсем пулсан тухатпăр. Мĕн пире?

МИХАЂА. Çаврăнкалăр, çаврăнкалăр. Е, çаврăнкалăр.

ПĔРИ. Капла майĕпен те пырĕ-ха.

МИХ. Ех, колхоçнĕксем. Колхоçнĕксем мар есĕр, тĕвесем.... Тухăр, тухăр. Кĕтеççĕ вĕт унта сире. (Майĕпен тухаççĕ).

МИХАЂА (Иванова). Шђетовоткă килнĕ. Хĕрађалласкер. Çуçĕсене арçынла касса йанă. Ей, çивђĕ те çивђĕ... Ђĕлхи хăйĕн çĕçĕ пек турат̆.

ИВАНОВ. Ăçта, вăл?

МИХАЂА. Выљăхсем патĕнђе, ĕнесем сунă çĕрте çӳрет-ха.

ВАÇÇИЛЙĔВ (кĕрсе). Ну-и йĕркелĕх кунта. Ирĕксĕрлетсех кăларса йатăм вĕт.

МИХАЂА. Есĕ çарти пек: пĕрре, иккĕ, виççĕ! тех çемçерех çĕртен урупа тапса сиктерсех йар.

ИВАНОВ. Шђетовоткă килни çинђен илтнĕ-и-ха есĕ?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Килнĕ-им вара? Килнĕ пулсан пит те лайăх.

МИХАЂА. Килнĕ. Çӳçĕсене арçынла кастарса йанă. Кĕписем кĕске, ђĕркуççисем курăнса тăраççĕ. Фу, паккăç.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Вĕсене те пăхма ĕлкĕртĕн еппин. Ат̆а, вĕçтер. Ырана мĕн пур лаша спруйĕ хатĕр пултăр.

МИХАЂА. Йурат̆. Тумаллине тăвăпăр. (Кайат̆).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ку колхос — колхос та мар. Пĕтĕм хуçалăхĕ йухăннă. Кам хăмăт пăйавне татнă — пĕлмеççĕ. Урапине çĕмĕрнĕ — пĕлмеççĕ. Кам лаша вĕрилле шăварса пăснине пĕлмеççĕ. Пĕлме те шутламаççĕ. Пур хатĕре те пăснă, çĕмĕрсе пĕтернĕ, ватнă. Пăхас та килмест.

ИВАНОВ. Пур айăп та Ҫемен ҫинђе.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Есĕр ăҫта пулнă ун ђухне?

ИВАНОВ. Ун пек ĕҫсене вăл пире кăтартмасť-ђĕ.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Ухмаха ан хывăр ĕнтĕ.

ИВАНОВ. Еп кайам-ха. Шђетовоткăна епĕ сан пата килме калăп. Акă вăл хăйех...

(Иванов тухаť. Кĕрет Уљки. Ваҫҫилйĕвпа Уљки пĕр-пĕрин ҫине пăхса тăраҫҫĕ).

УЉКИ. Ваҫҫилйĕв.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Уљки.

(Пĕр-пĕрин патне пырса аллисене ђăмăртаҫҫĕ).

УЉКИ. Есĕ кунта мĕнле майпа.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Есĕ тата мĕнле? Епĕ килте.

УЉКИ. Мĕнле „килте"?

ВАҪҪИЛЙĔВ. Ку епĕ ҫуралнă йал. Епĕ Хĕрлĕ ҫартан таврăнни пĕр ерне те ҫук. Акă колхоса ĕҫлеме суйларĕҫ. Колхос тата саланма патнех ҫитнĕ. Есĕ тата мĕнле?

УЉКИ. Епĕ ликвитаттăрта ĕҫлерĕм. Халĕ колхоса йађĕҫ. Шђеттовот ĕҫĕпе ĕҫлес, тетĕп.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Есĕ парттире-и?

УЉКИ. Парттире-ҫке. Кăнтитаткă.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Апла пулсан пĕрле. Ĕҫсем кунта мăй таранах. Йађейккă тăвăпăр. Кунта шанђăклă колхоҫнĕксемех пур. Хăшне-пĕрне хамăр ҫуммах ĕҫлеме пĕрлештерĕпĕр. Епĕ ку тĕлĕшпе ĕҫлеме те пуҫланă ĕнтĕ.

УЉКИ. Епĕ кунта хĕрарăмсемпе паллашрăм-ха. Вĕсем темĕскер те калаҫаҫҫĕ.

ВАҪҪИЛЙĔВ. Ун ҫинђен кайран та калаҫăпăр-ха... Мĕнле есĕ ӳссе кайнă, ҫитĕннĕ... Паллама та ҫук.

УЉКИ. Сана та паллама ҫук. Мĕнле епĕ савăнăҫлă? Ку кĕтесре епĕ хам пĕлĕше тупма шутламанђђĕ. Ну, халĕ шикленсе тăмастăп ĕнтĕ.

(Савăнăҫлăн калаҫса тăраҫҫĕ).

(Иванов, Михађа, Укҫине, тата Марйе йнке кĕреҫҫĕ.)

УКҪИНЕ. Пăх-ха, пăх-ха. Ҫитнĕ ҫитменех, пĕр-пĕринпе кăвакарђăн пек калаҫса тăраҫҫĕ. Вăт пырта калаҫ хађхи хĕрупраҫпа.

МИХАЂА. Мĕн унта шутламалли пур. Епĕр пурте ҫавах ĕнтĕ.

МАРЙЕ ИНКЕ. Ађам, камђа калаҫса тăратăн? Кам вăл?

ВАÇÇИЛЙЁВ. Ку ман пӗлнӗ çын. Кӗтмен çӗртен тӗл пултӑмӑр та калаçатпӑр-ха.

УКÇИНЕ. Е, ав йепле иккен...

УЉКИ. Есӗ çынсем çинђен усаллине сахалтарах шухӑшла, вара сана çӑмӑлтарах пулӗ пурӑнма.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Мӗн ушкӑнпах килтӗр тата?

ПУРТЕ. Ёçкунӗсене пӗлесђӗ. Ёçкунӗсене пӗлместпӗр-çке...

УЉКИ. Ан хуйхӑрӑр-ха. Тупӑпӑр, тупӑпӑр. Акӑ кӗнекесемпе паллашам-ха.

МАРЙЕ ИНКЕ. Хуйхӑрмасӑр. Хуйхӑрас пулаť çав. Мӗн ђухлӗ ӗçленӗ кӑçал... Çухалтӑр-ха... Кирек кама та хуйхӑртгарӗ.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Çемен пӑтратса йанӑ. Вӑл çырса пыман. Унтан ыйтмалла.

МАРЙЕ ИНКЕ. Путсӗрскер.

УКÇИНЕ. Ах вӑл йатӑ.

УЉКИ. Ну, ан вӑрçӑр, тупӑпӑрах. Пур ёçкунӗсене те тупса çырса хурӑпӑр. Анђах есӗр те пулӑшӑр.

МАРЙЕ инкепе УКÇИНЕ. Пиртен килнине пулӑшӑпӑрçке.

МИХАЉА. Анђах хӑвӑртрах, тата килӗшӳллӗрех... Хӗрлӗ çарти пек: пӗрре, иккӗ, виççӗ. Пӗрре, иккӗ виççӗ.

## 2-мӗш карттин.

Тихӑн Каврилђӑ кулак пӳрђӗ. Пӳртре хуçипе Çемен.

ТИХӐН (кӑшкӑрса). Пултарайманӑн. Акӑ халӗ колхосран урама йатӑ пек хӑваласа кӑларђӗç. Каланӑђђӗ сана малтанах...

ÇЕМЕН. Темле хӑйамађӗ илсе килђӗ ӑна. Вӑл пулмасан ..

ТИХӐН. Хӑйаматах кайалла илсе каймалла тӑвас пулаť.

ÇЕМЕН. Ун пеккисене кӑна мар курнӑ. Уретниксене, тӗрлӗ улпутсене улталанӑ. Кусене ним те мар.

ТИХӐН. Кусене урӑхларах кирлӗ.

ÇЕМЕН. Çавӑнтан пуçлӑпӑр та. Акӑ ман алӑра колхос ӗçкунӗсем. Шырађђӗр-ха пӑртак. Хӗрарӑмсем тапратсан тӳрех карлакинђен йарса тытӗç.

ТИХĂН. Вăт маттур... Кармаçăварсене хĕтĕртсе çӳре. Ытларах ĕçлесе кăларнă, тесе суй. Вара пирĕн ĕç тухаť те.

ÇЕМЕН. Епĕ ăна кăтартăп-ха Çеменрен кулмаллине.

ТИХĂН. Ман çине çирĕп пару хурасшăн. Аçу сан сутуилӳ тунă, ху спекуљатси тăватăн, тет. Ав ăçталла вăл хăвалаť.

ÇЕМЕН. Майра тата килнĕ колхоса?

ТИХĂН. Майри мĕн вăл? Сур та, шăлса пăрах, ĕçĕ те пĕтнĕ. Çав тĕп тымарне касса ӳкерес пулаť.

ÇЕМЕН. Йе вăл пире пĕтерĕ, йе епĕр унăн майне пăрса пăрахăпăр.

ТИХĂН. Комсомолта та хамăр çынах пултăр. Ывăлна кӳртме тăрăшас пулаť.

ÇЕМЕН. Шуйтан кӳртĕ ăна. Нийепле те кĕресшĕн мар.

ТИХĂН. Есĕ тата каласа пăх-ха. (Кантăкран пăхса). Ав тимĕрçĕ. Тимеркке те килет. Тухса уçам-ха.

(Тухса Тимĕрккепе пĕрле кĕрет).

ТИХĂНПА ÇЕМЕН (пĕрле). Ну мĕнле?

ТИМĔРККЕ. Ĕçсем нађар. Ним те тухмаст. Пурне те халĕ йĕркелеме тытăнђĕç.

ТИХĂН. Есĕ ху?

ТИМĔРККЕ. Епĕ хам ĕлĕкхи пекех. Тимахвипе Сантăр йађейкăна çырăнђĕç.

ТИХĂН. Вĕсем ĕлĕк те парттийтсăсем пекех ĕçлетђĕç.

ÇЕМЕН. Ман шугпа, пирĕн каллех колхоса кĕме тăрăшас пулаť, вара епĕр хамăр тумаллисене тăвăпăрах.

ТИХĂН. Манăн та-и?

ÇЕМЕНПЕ ТИМĔРККЕ (пĕрле). Санăн та çав.

ÇЕМЕН. Мĕн тата хăраса кайрăн-и?

ТИМĔРККЕ. Çуртна, хуçалăхна пурĕ пĕрех тустараççĕ ĕнтĕ. Ав сире парусем такçанах хатĕрлесе хунă ĕнтĕ.

ТИХĂН. Сайавлени парса пăхăпăр. Анђах илеççĕ-и-ха вĕсем?

ÇЕМЕН. Тепĕр алăкран кĕме тăрăшăпăр.

(Шаккаççĕ. Пурте хăраса шартах сикеççĕ).

ТИХӐН. Кам шуйтанне тата илсе килҫӗ? Пытанӑр ҫакӑнта...

(Ҫеменпе Тимӗркке ҫӑлана кӗрсе тӑраҫҫӗ. Тулта Тихӑн сасси).

ТИХӐН. Ҫук... Килмен вӑл пирӗн пата. Ак хӑвах кӗрсе пӑх. (Пӳрте пӗр колхоҫнӗк кӗрсе пӑхать... Унтан тухать). Тимӗркке сана шыраса килнӗ. Тимӗрҫ лаҫҫинҫе пысӑк ӗҫ пур, тет.

ТИМӖРККЕ (ҫӑлантан тухса). Шуйтан ӗҫлесе пӗтерӗ вӑл ӗҫсене... Тимӗрҫ лаҫҫи хамӑн пулнӑ ҫухне ӗҫлемен мар. Халӗ ним те ӗҫлес килмест... сехетсене ҫеҫ шутлатӑп...

ТИХӐН. Есӗ хатӗрӳсене ҫас-ҫасах пӑсмалла ту. Хатӗрӳсем сан хӑвӑн вӗт... Епӗр Ҫеменпе иккӗн сана ӗҫсӗр хӑвармӑпӑр...

ТИМЕРККЕ. Епӗ акӑ мӗнле шутлатӑп. Итлӗр-ха... (Пӑшӑлтатаҫҫӗ).

ТИХӐН. Нумай-и вара унта?

ТИМӖРККЕ. Ҫӗр ҫентнӗр та пуртӑр.

ТИХӐН (савӑнӑҫлӑн). Ну, маттур та шутласа кӑларнӑ. Ку ӗҫе тӑвасах пулать. Епӗр сана пулӑшакансем пулӑпӑр.

ҪЕМЕН. Вӑрлӑхсӑр акана та тухас ҫук... Ҫынсенҫен намӑс. Ӗҫкунӗсемшӗн пӑлхав... Вара хӑйех колхосран хулана тухса кайать. Вара пире те йалта сывлама ирӗкрех пулӗ.

ТИМӖРККЕ. Тимахвипе Сантӑрне вара хамах...

(Шакканӑ сасӑ, хӑраса шартах сикеҫҫӗ. Ҫеменпе Тимӗркке чӑлана пытанаҫҫӗ. Тихӑн тула тухать. Унтан алӑкне уҫса кӑшкӑрать).

ТИХӐН. Ан хӑрӑр, тӑвансем. Паҫӑшка, таса Ҫеркей атте.

## 3-мӗш карттин.

Колхос правленийӗ. Ҫӗнӗ лосӑнксем. Пуху. Сӗтел хушшинче Васҫилйӗв, Иванов, тата Уҫки.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Йулташсем, йулташсем!.. Хуллентерех. Тимӗркке, ан шавла унта. Ӗҫкунӗсене ҫакӑн пек шутланипе пурте килӗштерпӗр-и?

ПУРТЕ. Килӗшетпер. Килӗшетпӗр. Малалла!

ТИМӖРККЕ (тӑрса). Епӗ килӗшме пултараймастӑп. Епӗ тимӗрҫӗре те ӗҫленӗ, уйра та ӗҫленӗ. Ман ӗҫкунӗсем сахалтан та вунӑ кун ытларах пулмалла.

ПĔРИ. Илйин кунĕнђе, Спасра тата кам ĕçе тухмарĕ

ТИМĔРККЕ. Ну, тăвата кун тейĕпĕр, çапах вунă кун мар вĕт.

ПĔРИ. Çеменпе пĕрле пуп патне кайнă кун мĕнле?

ТИМĔРККЕ. Есĕ те арăмна пођнитсана илсе кайрăнçке... Ыттисем те есĕр шутланипе килĕшмеççĕ.

(Хăй çумĕнче ларакансемпе калаçма пуçлать).

УЉКИ. Есĕ хушăн калаç ыттисемпе ан пăшăлтат унта.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Çитĕ. Пĕрре сасăланă, калаçмалли те çук. Тепĕр ыйту çине куçатпăр.

ТИМĔРККЕ. Ку ĕçе епĕ ахаљ хăварас çук. Епĕ шалăпа çыратăп. Вунă кун вăл ахаљрен ĕçлени мар вĕт.

МИХАЉА. Мĕн пăхмалли пур ун çине. Çемене кăларса çапнă пек, куна та, пĕрре, иккĕ, виççĕ, кăларса çапас пулать. Вара хуйхи те пĕтет.

ТИМĔРККЕ. Е, мана колхосран сирпĕтме аллăрсем кĕскерех-ха.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пухупа устава пăхăнмасан, кăларса та сирпĕтĕпĕр.

ТИМĔРККЕ. Çамрăк-ха есĕ. Çемене кăларса çапрăн, ман çумма пырса та ан çыхлан... Епĕ Çемен мар...

УЉКИ. Йулташсем, вăл пире хăратасшăн. Ку ĕçшĕн ăна...

КОЛХОÇНĔКСЕМ (шавласа вырăнĕсенђен тăраççĕ). Колхосран кăларас ăна! Вон колхосран! Çемен патне кай!

ВАÇÇИЛЙĔВ (лăпкăн). Йулташсем, лăпланăр. (Хытăрах). Йулташсем, ђарăнăр. Çемене епĕ кăларман, ăна есĕр пухупа кăларнă. Ман çине вăл хăйĕн тĕтгĕмлĕхĕпе кăшкăрать Михаља. Çитĕ Тимĕрккепе аппаланма. Малалла ать.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Малалла, йулташсем, прикатăсем тăвасси çинчен калаçар. Малалла пирĕн прикатăсемпе ĕçлемелле пулать. Ĕлĕкхи пек йĕркесĕр ĕçлени урăх пулмалла мар. Пирĕн пĕтĕм ĕçе план тăрăх шутласа хурса, сруксем кăтартса, пур ĕçе те çав кăтартнă сруксене пĕтерме тăрăшас пулать. Ĕç вăйĕсем çук мар-ха, вăрлăхĕ те пур, лаша хатĕрĕсене те тӳрлететпĕр ĕнтĕ. Ман шутпа, халĕ

пирĕн чи кирли вăл ĕç вăйне тĕрĕссĕн тăратса тухасси Кашни колхоçнĕкех пирĕн унăн вăйĕ, ăсталăхĕ тăрăх ĕç памалла.

САСĂСЕМ. Тĕрĕс, Ваççилйĕв, тĕрĕс.

МИХАЉА. Такçанах çапла кирлĕччĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Апла пулсан, итлĕр: сухалакансен прикати Алекçейĕв.

САСĂСЕМ. Тĕрĕс.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Сÿрекенсен прикати—Никколайĕв. Акакансен—Кăçтук пиччи.

САСĂСЕМ. Çапла, çапла, çапла.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Выљăхсем патне Марйе инкене.

МАРЙЕ ИНКЕ (тăрса). Çук! Çук! Пулмастăп. Нийепле те пулмастăп. Хăтарăр, тархасшăн.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕн калĕ ав пуху.

ПĔРИ. Тĕрĕс, тĕрĕс. Выљăхсем патĕнче самăй вăхăтлă.

МАРЙЕ ИНКЕ. Каланă сире пулмастăп, тесе. Хуратăр, пулмастăп.

УЉКИ. Марйе инке, мĕн кутăнланса тăратăн тата? Епĕр сан çинчен сÿтсе-йавнă—есĕ шанчăклă çын.

МИХАЉА. Малалла, малалла.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Йалхуçалăх машшинĕсене тÿрлетес ĕçе Тимĕрккене.

САСĂСЕМ. Тимĕрккене хурас мар, вăл праçниксем тума йуратаť.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Вăл тимĕрçĕ. Унсăр пуçне кам тÿр летĕ-ха?

ПĔРИ (тăрса). Найан вăл, епĕ унпа ĕçлеме килĕшместĕп.

ТЕПĔРИ. Епĕ те ĕçлеместĕп. Унпа ĕçлес пулсан, тăвар илмеллĕк те укçа тăвас çук.

ИВАНОВ. Йулташсем, есĕр йăнăшатăр. Ĕçлеместĕп те ĕçлеместĕп. Мĕнле-ха вăл ун пек йапала? Епĕ пухуран ыйтатăп—мĕнле, Тимĕркке лайăх ăстаç-и?

ПУРТЕ. Лайăх.

ИВАНОВ. Ун пек çын пирĕн колхоса кирлĕ-и?

ПУРТЕ. Кирлĕ!

ИВАНОВ. Тата мĕн кирлĕ? Найанлана пуçласан епĕр ăна турткалама та пĕлĕпĕр. Епĕ ăнах çирĕплетме сĕнетĕп.

САСĂСЕМ. Çирĕплетес, çирĕплетес...

ВАҪҪИЛЙЕВ. Сортлӑ вӑрлӑх акас ӗҫпе Иванов йулташа.

САСӐСЕМ. Тӗрӗс. Пултаракан ҫын.

ВАҪҪИЛЙӖВ Пирӗн колхосра халҙҙен ӗҫре нимӗнле ответлӑх та пулман. Сӑмахран, лашине тӑварсан, урапине, хӑмӑт-пӑйавне, тилкепене, пӗккине уҫӑ ҫӗрех, ҫӑмӑр айнех лартса хӑварнӑ. Хатӗре ватнӑ, ҫӗмӗрнӗ, кӑларса пӑрахнӑ. Лашасене мӗнле тыткалас тенӗ ҫавӑн пек тыткаланӑ, вӗсене кирлӗ пек пӑхман, кӑкӑрӗсене хӑмӑтпа пӑснӑ, йӗнерҙӗкпе те лаша ҫурӑмӗсене суранлатнӑ. Лашана пӑснӑшӑн ответ тытаканни никам та пулман. Пайантан вара кун пек хӑтланакансене ҙаратпӑр. Малашне ответсӑрлӑх пулас ҫук. Панӑ ӗҫшӗн ответ тыт. Пӗр-пӗр хатӗр панӑ пулсан, есӗ ӑна упра, сыхла. Уншӑн санранах ыйтмала пулать.

САСӐСЕМ Тӗрӗс, Тӗрӗс. Такҫанах ҫапла кирлӗ.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ӗҫе мӗнле тунине тӗрӗслесе пыма Йакур пиҙҫепе Проххӑр пиҙҙене уйӑратпӑр. Кам мӗнле?

САСӐСЕМ. Ку вара кирлӗ мар йапала. Мӗн пӗлеҫҫӗха вӗсем калӑпӑр, тимӗрҫӗ ӗҫӗнҙе? Ним те пӗлмеҫҫӗ. Ман шутпа, суйламалла та мар.

МИХАҘА. Е, мӗн калаҫать вӑл? Шӑйрӑклӑ сухаласа пӑхха—епӗ кӑтартӑп сана. Сан ӗҫӳнте те вӗсем кӑтартма пултараҫҫӗ.

ВАҪҪИЛЙӖВ. Ҫирӗплететпӗр и?

САСӐСЕМ. Ҫирӗплетес. Мӗн унта? Кирлӗ ҫынсем. (Тихӑнпа Семен кӗреҫҫӗ).

ВАҪҪИЛЙӖВ. Йулташсем, ырантан пуҫласа ҫӗнӗлле ӗҫлеме тытӑнатпӑр. Прикатирсем пайанах правленире наретсем илеҫҫӗ, малашне вӗсем хӑйсен прикатишӗн пӗтӗмӗшпех ответ тытаҫҫӗ. Кашни каҫах правленине кӑнтӑрла мӗн ӗҫлени ҫинҙен пӗлтерсе тӑмалла. Пирӗн шҙетоводка Улҙки кашни прикатӑ ӗҫне, кашни колхоҫнӗк ӗҫне ҫырса пырӗ. Капла тусан, малашне ӗҫкунӗсене утарлӑ ӗҫлекенсем пулӗҫ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн епӗр малашне парнелеме йышӑнӑпӑр. Ку тӗлӗшрен правлени халӗ виҫҫӗр тенкӗ таран укҫа уйӑрса хунӑ.

САСӐ. Нумайтарах мар-ши, Ваҫҫилйӗв йулташ?

УЛҘКИ. Ӑҫтан нумай пултӑр-ха? Вӑл укҫа лайӑх ӗҫлекенсем пулсан хӑйне хӑй тавӑратех.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Çирĕплететпĕр-и? Çак иртнĕ вăхăтра колхоса тăвата çемйе кĕҫĕç: Темйан муҫи, Çаҥук Çумкки, Мавра, тата тăлăх Урине. Пурте кусем хамăр çынсем, совет çыннисем. Пурте вĕсене пĕлетĕр. Илетпĕр и?

САСĂСЕМ Илес! Илес!

ТИХĂН КАВР. (мала тухса). Йулташсем Ыйтатăп. Совет влаçĕ колхосемшĕн. Епĕ те колхосшăн. Мана ҫлена, колхоса илме ыйтатăп.

ПĔР САСĂ (хуллен). Илес Илес Кулаккова та.

ИВАНОВ (хĕрÿллĕн). Çук. Илмелле мар! Иртнĕ çулла мĕнле хĕтĕртсе çÿренине мантăр-им? Мĕнле вăл вăрттăн пухусем тăватҫĕ. Кам пирки колхосран Çемене кăларса çапмалла пулҫĕ? Астуса илĕр. Каҫакана купăста пахҫине йамаççĕ ăна.

ТИХĂН КАВР. Йулташсем, илме ыйтатăп. Ĕлĕк пĕртак епĕр ҫухрах пурăннă ĕнтĕ. Анҫах халĕ епĕ ҫухăнланса йулнă Илме ыйтатăп.

МИХАЛҪА. Илместпĕр. Каларĕ вĕт-ха Иванов й-ш. Каҫакана купăста пахҫине йараççĕ-и вара?

ÇЕМЕН (хĕрÿллĕн). Краштăнсем. Епĕ те колхоса кĕме ыйтатăп. Епĕ ĕçлеме пулатăп. Епĕ ĕçлĕп.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Сана пĕлетпĕр епĕр. Есĕ халиҫҫен ĕçлени колхоçнĕксен ĕнси çинҫе халĕ те ларать-ха.. Илсен, пĕр ернеренех хăвăнне.

МАРЙЕ ИҤКЕ. Илес пулать. Капла йурамĕ.

ВАÇÇИЛЙЁВ (хĕрÿллĕн). Вăл колхоса курайманнине пĕлетпĕр епĕр. Вăйĕ пулсан вăл пире халех салатса йарĕҫҫĕ. Вĕсем кулаксем, поткулаҫнĕксем, шулĕксем, пуп таврашсем пурте çавăн пек. Анҫах, çук, колхоса йамăпăр. Кашкăра хамăр ĕрете хутшăнтармăпăр-ха. Йулташсем. Тихăн Каврилҫăпа Çемен çинҫе урăх ҫарăнса та тăмăпăр. Кун йĕркинҫе урăх ыйтусем çук. Пухăва хупатăп.

## 4-мĕш карттин.

Теккоратси çавах. Ҫаршав уçăлас умĕн стсенă хыçăнҫе ҫастушкăсем йурлаççĕ. Хуткупăс, тăмра калаççĕ. Йурăсем пĕрре çывăхрах, тепре инçерех илтĕнеççĕ. Стсенă çинҫе Улҫки хăйĕн сĕтелĕ хушшинҫе ĕçлесе ларать. Стсенă хысĕнҫе йурăсемпе кулăшсем илтĕнеççĕ.

ВАСИЛЙЁВ (кĕрсе). Йури колхоçнĕксене мăшкăлас шутпа çÿреççĕ ĕнтĕ.

УЉКИ. Мăнкун тени, сан шутупа, ахалех иртсе каймалла-им вара?

(Стсенă хыçĕнђе йурăсемпе хуткупăс калани хытăрах. Инçетре сасăсем).

САСĂ. Колхоçнĕксем, пирĕн пата...

ВАÇÇИЛЙĔВ. (Пÿлĕм тăрăх сÿреме пуçлать). Кайса хăваласа йарас-ши ку путсĕрсене. Хăваламасан тата ĕçе те пăсĕç.

УЉКИ. Пăсаймĕç. Пайан ав мăнкунăн пĕрремĕш кунĕ те мĕнле ĕçлеççĕ ав пирĕн.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ђăнахах, комсомолĕссем маттур та маттур, пурте пĕр çын пек ĕçлеççĕ. Вĕсем çумĕнђе колхоçнĕксем те ĕçлеççĕ.

УЉКИ. Епĕ сана малтанах каланăђђĕ ун çинђен. Малтан вĕсене ăнлантарса парас пулать, вара ĕç тухатех.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Вăрлăхсене тасатассине срукђен виçĕ кун малтан пĕтереççĕ вĕт.

УЉКИ. Пахђаçăсен те ĕçĕсем ăнăçлă пыраççĕ. Планра кăтартнинђен вĕсем икĕ кун малалла ĕçлесе пыраççĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Сантăркка Петĕрĕн мĕнле?

УЉКИ (уђђот хутне илсе). Виçĕмкун çуркун ĕçлемесĕр йулнă.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Укçинен мĕнле?

УКÇИНЕ (ђÿређерен). Акă епĕ хамах кунта (кĕрет). Мĕн, кирлĕ пултăм-и тата?

УЉКИ (уђђот хутне илсе). Вунçиђђĕмĕшпе вунсакăрмĕш ђисласенђе ĕçе тухмасăр йулнă.

ВАÇÇИЛЙĔВ (Укçинене). Мĕншĕн тухмасăр йулнă?

УКÇИНЕ. Йамăк патне те кайса килме йурамасть-им апла?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕнле йурамасть, йурать. Анђах каламаллађђĕ сан.

УКÇИНЕ. Ман калама асра та пулман.

(Стсенă хыçĕнђе йурăсем хытăрах илтĕнеççĕ. Пĕр сасă: Ей, колхоçнĕксем, мĕн ĕçлетĕр унта, килĕр пирĕн пата, тесе кăшкăрать).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Каплă йурамасть. Ата, Уљки, кайса калаç.

(Ваççилйĕвпа Уљки тухаççĕ. Пăртак тăрсан кĕнђелере Михаља кĕрет).

МИХАЉА. Еçĕ кунта мĕн пирки килнĕ?

УКÇИНЕ. Сана кĕтетĕп. Ирт, ирт, ан хăра, çисе йамăп-ха... (кулаť).

МИХАЉА (çумне пырса). Ес мĕн капла пайан кулкаласа çӳретĕн?

УКÇИНЕ. Çапах аван мар вĕт, Михаља. Йалта тем те пĕр калаççĕ. Капла пурăниђђен пĕреххут..

МИХАЉА (ыталаса). Авланасђĕ. Çапла каласшăнђђĕ-и Укçине?

УКÇИНЕ. Тата урăхла мĕнле пултăр? Атту çынсем тем те калаççĕ.

МИХАЉА. Йуратмастăн пулĕ есĕ мана?

УКÇИНЕ (ыталаса). Йурататăп-çке, Михаља.

МИХАЉА. Аťа, пайанах куç еппин ман пата. Вара пайантан пĕрле арлă-арăмлă пурăнма пуçлăпăр.

УКСИНЕ. Йурататăп сана, Михаља (ыталаť).

МИХАЉА. Ну, халĕ авлантăмăр ĕнтĕ. Есĕ—арăм, епĕ—упăшки. Пар аллуна. (Алă параççĕ). Ман прикаťă патне каймалла-ха.... Пайан куçатăн еппин?

УКÇИНЕ. Йурĕ, йурĕçке.

МИХАЉА. Малтан панă сăмаха епĕ улăштармастăп. Улăштарма шутламанта. Çапла вĕт, Укçине. Пĕрре каласнă ĕнтĕ.

(Михаља тухаť, кĕрет ђухăн тумланнă хĕрарăм).

ХĔРАРĂМ. Епĕ Ваççилйĕв патне, ĕçпе.

УКÇИНЕ. Тухса ђĕнсе кĕрем-ха епĕ вĕсене. Есĕ лар кунта.

(Укçине тухса кайаť, кĕреççĕ Ваççилйĕвпа Уљки).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕн кирлĕ сана, инке?

ХĔРАРĂМ. Колхосран вăхăтлăха плук илсе кайма ирĕк памăн-ши, тесе килтĕм те.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Çук, памастăп.

ХĔРАРĂМ. Мĕншĕн тата?

УЉКИ. Ваççилйĕв й-ш, пулăшас пулаť.

ВАÇÇИЛЙĔВ (хĕрарăм патне пырса). Апла пулсан, акă мĕнле, инке. Епĕр сана анусене сухаласах парăпăр.

ХĔРАРĂМ. Мĕнле апла?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Колхос лашисемпе пырăпăр та, анусене сухаласа та парăпăр... Ађусем сан пĕђĕккĕ, арçыну çук... Санăн пĕреххут колхоса кĕмелле, Мавра инке.

ХĔРАРĂМ. Тазтапуç сана Ваççилйĕв й-ш. Сухаласа парсан, пит лайăхҙĕ те...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пĕ) самантра туса парăпăр.

ХĔРАРĂМ. Колхоса, темĕн. Ман аҙасем нумай вĕг. Аҙасемпе илетĕр-и?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Илетпĕр,ма илес мар аҙасемпе? илетпĕр... Çĕрне сухаласа паратпăрах.

ХĔРАРĂМ. Тавтапуç сана, Ваççилйĕв. Колхоса кĕресси пирки шухăшласа пăхăп ха...

(Кĕрет Иванов, аллинҙе шăтарса пăхнă вăрлăхсем. Хĕрарăмтухса кайаť).

ИВАНОВ. Акă пăхăр-ха, мĕнле лайăх шăтнă. Çĕр пĕрҙĕрен 98 мĕш шăтнă.

УЉКИ. Ҙăнах-и. Апла пулсан, вăрлăх аван еппин.

ИВАНОВ. Ес пăх-ха, пăх-ха, Уљки, мĕнле лайăх шăтнă.

УЉКИ (пăхса). Ку тата мĕнле вăрлăх?

ИВАНОВ. Ку пăри. Анҙах пăри шăтни мĕн пурĕ те 85 проҙҙăн çеç. Кĕркунне ҙĕрĕлле çапмалла пулҙĕ. Сĕлĕ вăрлăхĕ лайăх. ку вара пĕтĕм ĕçе пăсрĕ. Пĕр ерверен акмалла та акă.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Улăштарас пулаť. Кун пек вăрлăха нийепле те акас марҙҙĕ.

ИВАНОВ. Микула урапана çĕмĕрсе пăрахнă, Карпи хăмăт йăвăçне катса пăрахнă.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕнле апла вăл?

ИВАНОВ. Ан кала та ĕнтĕ. Пăхса çитереймĕн.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Уљки, ҙĕнсе кил-ха Микулайпа Карппине (Уљки тухаť).

ИВАНОВ. Тимĕркке тата темскер кутăнланма пуçларĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Акă комиççи кăна тĕпҙесе пĕлтĕр, вара хĕстерĕпĕр.

(Икĕ колхоçнĕк кĕреççĕ).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пайан сирĕн хулана каймалла пулаť.

1-МĔШ. Манăн урапа...

II-МĔШ. Манăн хăмăт...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Нимĕнле урапăра, нимле хăмăтăра та пĕлместĕп. Каçалла пайан тийетĕр те çĕрĕпе уттаратăр хулана.

ИВАНОВ. Урапа? Лашăрсене пăхса пымаллаҙҙĕ.

ИККĔШĔ ТЕ. Епĕр айăпла-им? Кĕперсене тўрлетменте..

ВАÇÇИЛЙЁВ. Пайан кун çинђен çтена хаçатне çырас, кайран пухура сӳтсе йавăпăр.

I-МĔШ. Есĕр каçђен те тӳрлетсе çитерес çук.

II-МĔШ. Тимĕркке те тата хăйĕн тимĕрçлаççине уçман.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Еп калатăп: тытăнăр ĕçе, тетĕп. Иванов й-ш ав тимĕрçлаççине хăйех уçса парĕ. (Колхоçнĕксем тухса кайаççĕ).

ВАÇÇИЛЙЁВ. Çуракине тухиђђен пур кĕперсене, пур çулйĕрсене те тӳрлетсе тухас пулаť. Ку ĕçе халех тытăнасђĕ.

ИВАНОВ. Сакăр çын пайан ахаљ те йал хĕрринђи кĕпер çинђе ĕçлерĕçха.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Акă ил нарет. Ку Кăçтук пиђђене. Ыран ирех вăл хăйĕн прикатипе йал таврашĕнђи кĕперсене йусама тухтăр. (Кĕрет Михаљђа).

МИХАЉЂА (савăнăçлăн). Пĕтерсе килтĕмĕр вĕт леш кĕтесе.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Парне памалла тăватпăр. Леш çĕнĕ çĕре сухалама тытăнмарăри-ха?

МИХАЉЂА. Çук ха. Ыран тытăнас, тетпĕр.

ИВАНОВ. Ман шутпа, çĕнĕ çĕре пуçламасан та кĕтет-ха.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Акма вăхăт çитне те ĕнтĕ, ăçтан кĕтес-ха?

ИВАНОВ. Акă тата тислĕкне те тăкмалла. Ёнесем тислĕк ăшнех анса ларнă.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Кăçал иртерех акасси çинђен сасăламарăни-ха?

ИВАНОВ. Вăл çапла та-ха, анђах ĕнесен ђĕрнисем çĕрме пуçланă-çке. Мĕн тăвас-ха апла?

ВАÇÇИЛЙЁВ. Иккĕшне те тăвас пулаť, çĕнĕ çĕрне те çĕклемелле, тислĕкне те тăкмалла.

ИВАНОВ. Унта тислĕкне тасатасси кăна вунă куна пырĕ.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Вунă куна. Ик виç кунтах пĕтерес пулаť. Пĕтĕм халăха хускатас пулаť ку ĕçе.

ИВАНОВ. Тата кĕл пухса хуни пур. Ăна та сапса тухас пулаť. Ăçтан кăна ĕлкĕрĕпĕр?

ВАÇÇИЛЙЁВ. Ну, нăйкăшма тытăнђĕ ĕнтĕ.

ИВАНОВ. Пĕртте нăйкăшмастăп. Кунĕн-çĕрĕн епĕ

çавсем çинҫен шутлатăп. Çĕрле выртсассăн та çывăрса кайаймастăп. Çав тислĕк тăкасси, кĕлне сапасси, вăрлăхĕ-мĕнĕ çинҫен шутласах çывăрса кайатăп. Çывăрсан тата тĕлĕкре те куратĕп. Есĕ нăйкăшаť,тетĕн...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Апла пулсан, ĕç тухаť, еппин.

МИХАЉА (Иванова). Нумай шутласа ан тăр. Пĕрре, иккĕ, виççĕ—ĕçĕ те хатĕр.

ИВАНОВ. Сан йаланах шӳтпе вара.

МИХАЉА. Шӳтпе пулмасăр. Йаланах çапла ĕнтĕ... Ыран ирех çĕнĕ çĕре сухалама кайатпăр.

(Тухса кайаť. Кĕрет Марие инке).

МАРИЕ ИНКЕ (Ваççилйĕва). Аҫам, аťа çиме... Сивĕнсе кайаť вĕт.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕншĕн сан ĕнӳсем тислĕкре?

МАРИЕ ИНКЕ. Иванова епĕ кашни кунах каласа пынă.

ИВАНОВ. Еп сана каласа пымани?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Апла пулсан, айăпли епĕ пулатăп, еппин. Ыранах ĕнесене тасатнă пултăр.

МАРИЕ ИНКЕ. Тата сысна çӳрисен асав шăлĕсем ӳсеççĕ, мĕнле те пулсан хуçасҫĕ пĕреххут.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Санăн пур çĕрте те йеркесĕрлĕх.

МАРИЕ ИНКЕ. Аťа, аҫам. Сивĕнет вĕт йашка. Мĕнле кăна тӳсетĕн есĕ? Иртенпе çимен вĕт пайан.

(Аллинҫен тытса алăк патнелле сĕтĕрет. Кĕрет Уљки).

УЉКИ. Ҫăн-ҫăн сапотташнĕкех. Сăтăрçа. Акă кам вăл. Мĕншĕн кăна тытатпăр епĕр ун пек шулĕксене?

ИВАНОВ. Кама ес капла?

УЉКИ. Кама? Тимĕрккене. Ку та çук, вăл та çук. Куна тăваймасť вăл, кун ваљљи хатĕрĕ çитмест. Тимĕркке ĕсĕнҫе комиççи прорывсăр пуçне нимех те тупаймарĕ. (Кĕрет Тимĕркке).

ТИМĔРККЕ (вăрçса). Кашни майранах епĕ хама хам вăрçтарма пултараймастăп.

ВАÇÇИЛЙĔВ (хыттăн). Урапасене мана вăхăтра тӳрлетнĕ пултăр.

ТИМĔРККЕ (кăшкăрса). Тимĕрне тупса панă-и есĕ мана? Кăмрăкĕ ăçта тата?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Шыра, шырасан тупăн.

ТИМĔРККЕ. Епĕ шырамастăп.

ВАҪҪИЛЙЁВ (сӗтеле шаккаса). Урапасене тӳрлетнӗ пултӑр?

МАРЙЕ ИНКЕ. Ђарӑн, ђарӑн тетӗп.

ВАҪҪИЛЙЁВ. Кулаксемпе ҫӳретӗн. Тихӑн Каврилђапа ҫулӑхатӑн. Асту.

УЛЂКИ. Акӑ акт. Пилӗк плука ним та йусаман. Икӗ ҫейӑлккине пуҫтарман, ҫаплах лараҫҫӗ.

ТИМӖРККЕ. Каларӑм вӗт—кӑмрӑк ҫук, тесе.

ВАҪҪИЛЙЁВ. Иванов й·ш, халех кӑмакара вутӑ хутса кӑмрӑк туса парӑр ӑна.

ИВАНОВ. Тӗрӗс. Халех кӑмрӑк туса парӑпӑр. Урапасене кӑна туса пар. (Иванов тухаӑ. Улђки ӗҫлет. Марйе инке Улђки патне пырса тӑраӑ).

ВАҪҪИЛЙЁВ. Кивӗ тӑрантассене сӳтсе, тимӗрне йусав ӗҫне.

ТИМӖРККЕ. Епӗ пӗђђен ӗҫлеместӗп.

ВАҪҪИЛЙЁВ. Прикатӑ ӑҫта?

ТИМӖРККЕ. Саланђӗҫ.

ВАҪҪИЛЙЁВ. Ху салатрӑн пулмалла. Каласа пар мана тӳррипе: хӑҫан пӗтеретӗн есӗ йусав ӗҫне?

ТИМӖРККЕ. Икӗ ернерен пӗтерӗп.

ВАҪҪИЛЙЁВ. Ӑслӑ-и есӗ, ухмах-и? Икӗ ернерен пирӗн ҫураки те пӗтет вара. (Тимӗркке тухса кайаӑ. Стсенӑ хыҫӗнђе каллех йурӑсем, хуткупӑс сасси илтӗнет).

ВАҪҪИЛЙЁВ (Улђкине). Кам ӗҫленипе ӗҫлеменнине пайан тӗплӗрех хисепе илес пулаӑ. Ӗҫлеменнисене, прокулђшђӑксене пурне те хура хӑма ҫине. (Икӗ хӗрарӑм кӗреҫҫӗ).

МАРЙЕ ИНКЕ. Аӑа, ађам. Апат сивӗнсе кайӗ тата.

ХӖРАРӐМ. Малтан пирӗн пахђа ӗҫне пырса пӑх-ха.

МАРЙЕ иНКЕ. Выҫӑ вӑл. Пайан иртенпе ҫимен...

ВАҪҪИЛЙЁВ. Ҫийесси тармӗ-ха. Хаđ апатпа аппаланмалла-и вара? (хӗрарӑмсене): Аӑӑр, кайса пӑхӑпӑр. (Тухса кайаҫҫӗ, тулта йурӑсем, хуткупӑс сасси илтӗнет. Марйе инке пуҫне сулласа ҫеҫ йулаӑ).

МАРЙЕ ИНКЕ. Пӗрисем карланкисене ҫурса йурӑсем йурлаҫҫӗ, теприсене апат ҫиме те вӑхӑт ҫук.

## 5-мĕш пайĕ.

Çав теккоратсийех. Çтенисем çине çураки лосăнкĕсем çапса тултарнă. Стсенă çинђе Ваççилйĕв, Иванов, Михађа, Тимĕркке тата комсомолĕссем. Прикатирсен канашлĕвĕ пулаť.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Йулташсем, пайан пирĕн малтанхи ака кунĕ. Пайан пирĕн ĕç уйавĕ. Пайан пирĕн уйа уйавлăн тухмалла. Малтанхи кун тухма йышăнса хунисене пирĕн ђаплăн туса иртерес пулаť. Малтанхи кун мĕнле ĕçлетпĕр, çавăн пекех ытти кунсенђе те ĕçлемелле пулĕ.Çавăнпа та епĕ сире, прикатирсем, хăвăр прикатăсенђе тăракансене пример парса ĕçлеме ђĕнетĕп. Икĕ ерне хушшинђе епĕр çуракине пĕтерме йышăннă, пирĕн ăна тумаллах.

МИХАЂА. Пĕрре, иккĕ, виççĕ—ĕçĕ те пĕтнĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Сан йаланах хатĕр.

МИХИЂА. Лашасене кÿлнĕ, аťăр, кайăпăр.

ВАÇÇИЛЙĔВ (Иванова). Сан мĕнле?

ИВАНОВ. Вăрлăх тийеççĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Кăçтук пиђђе прикати мĕнле? (Амăшне) Санăн тата мĕнле?

МАРЙЕ ИНКЕ. Пахђа ĕçĕпе ман ĕçсем пыраççĕ-ха. Кашни ушкăна хăйне уђаскă виçсе панă, кашнийĕ хăй уђаскине пĕлет

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пăхса парас пулаť.

МАРЙЕ ИНКЕ. Ан хăра ађам. Пурте вăхăтлă, тата тĕрĕсех пулĕ

ВАÇÇИЛЙĔВ. Есĕ, Тимĕркке, çĕмрĕлнĕ тунă пулсан— хатĕрех тăр. (Комсомолĕссене). Есĕр çыхăну тытакансем пулăр. Ăçта прорыв, тÿрех ман пата. Прикатăсем уйрах апатланаççĕ. Апатне пырса памалла тăватпăр. Хамăр епĕр çакăнтах тешурĕт туса ларăпăр. Ну, урăх ман ним те çук.

(Ђупса кĕрет Укçине.)

УКÇИНЕ. Хурах,хурах пуснă. Халăхсем шутлăр-ха мĕн пулнă?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕн пулнă тата?

УКÇИНЕ. Акмалли вăрлăха çĕртсе йанă, шуйтансем...

ИВАНОВ (хăраса) Тĕплĕрĕх кала.

УКÇИНЕ. Вăрлăх çине шыв йанă. Пăхăр ав мĕнле пăсăлса кайнă.

ИВАНОВ. Ку ђи лайăх вăрлăхђĕ пирĕн... Çĕр пĕрђĕрен 98 пĕрђĕ шăтнăђђĕ. Мĕн тăвас ĕнтĕ? Мĕн акас? Нумай пăсăлнă-и?

УКÇИНЕ. Çурри ытла çĕрнĕ. Тийеме тытăнсан пăхатпăр та пăсăлса кайнă.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Мĕнле апла пулнă?

УКÇИНЕ. Кĕлет виттине шăтарнă та шыв йанă. Вон вĕсем мĕн тунă, шуйттансем.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Комсомолĕссем, аťăр пĕлсе килĕр. Ĕç мĕнле пулнă. (Пурте тухаççĕ. Тимĕркке çеç йулаť).

ТИМĔРККЕ. Акă сире икĕ ернере пĕтеретпĕр..

ТИХĂН КАВР. (тепĕр алăк уçса). Ăçта капла ђупса тухрĕç?

ТИМĔРККЕ. Çурри ытла пăсăлнă, теççĕ.

ТИХ. КАВР. Хайхи, епĕр ту... Ха-ха-ха...

ТИМĔРККЕ. Çапла кирлĕ те...

ТИХ. КАВР. Халĕ тепĕр ĕçне те тăвăпăр ĕнтĕ...

ТИМĔРККЕ. (ђÿређерен пăхса). Пурте кунталла ђупаççĕ.

ТИХ. КАВР. (стсенă çинђе ђупкалама пуçлаť). Тарас... Пытанас кунтан...

ТИМĔРККЕ. (Кăшкăраť). Ђарăн... Ан кай! Тытсан халех çапса пăрахĕç.

(Стсенă хыçĕнђе шавлаççĕ. Тимĕркке. Тихăн Кавр. хăраса ђупкаласа çÿреççĕ. Стсенă хыçĕнђе Ваççилйĕв калаçаť).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пирĕн вăрлăха кулаксем пăсиă. Вĕсем пире выçă хăварасшăн пулнă. Анђах кунпа кăна пирĕн ĕç тытăнса тăмĕ. Хамăр вăйсене икĕ хут ÿстеретпĕр те çуракине сруках пĕтерĕпĕр. Халех вăрлăх илме куршĕри Сталин колхосне 10 лав йаратпăр. Вĕсен вăрлăх ытлашши те пур-ха. Ытти прикатăсем пурте хăйсен ĕçне. Малтанхи кун тумалла ĕçсене тăватпăрах. (Ырланă сасăсем).

САСĂ. Тĕрĕс! Тĕрĕс! Аййăплисене тупас. пулаť...

ИВАНОВ. Йулташсем. Пирĕн вăрлăха пăсрĕç вĕсем. Кун пек усал ĕçе нийепле те тÿсме çук. Вăл пантитсене епĕр шыраса тупатпăрах... Халĕ пурте ĕçе. Хамăр вăй-

сене вунă хут ытларах ӳстерсе, ĕçе утарлăн туса, тăвас ĕçе сруках туса пĕтерĕпĕр.

(Сасă Тĕрĕс. Утарнĕкле ĕçлес).

1-МĔШ САСĂ. Акакансем, манпата.

2-МĔШ САСĂ. Сӳрекенсем, кунта.

3-МĔШ САСĂ. Пахҙаçăсем, сарай патне.

ТИХ. КАВР. Ху, ты. Саланҙĕç. Кайам-ха епĕ. Ыран пирĕн пуху пулаť. Асту, асăрханса çӳре.

ТИМĔРККЕ. Хăвăртрах кай. Кай!

ТИХ. КАВР. Тата çакна каласшăнҙĕ... (Кĕрет Улҍки, кулак çине пăхаť).

УЛҌКИ. Есĕ кунта мĕн тума?

ТИХ. КАВР. Кун патне килтĕм шыраса... Тимĕрçлаç-синҙе ĕç пурҙҙĕ...

ТИМĔРККЕ. Мĕнле ĕç? Ăçта?

УЛҌКИ. Хăйаматсем. Сирĕн ĕç вăл унта... Есĕр таватăр...

ТИХ. КАВР. Кирлĕ мара ан калаç-ха есĕ. Турă сых-латăр ун пек ĕçрен (сăхсăхаť).

УЛҌКИ. Пĕҙҙен мар тата ушкăнпа. Çавăн ҙухлĕ вăрлăха пăсма, ампар витти çине вуншар витре шыв йатмалла пулнă.

ТИХ. КАВР. Епĕ тухатăп. Ес пыр вара (тухаť).

УЛҌКИ. Кала, мĕншĕн килҙĕ?

ТИМĔРККЕ. Тимĕрçлаççине. Хăйех카ларĕ вĕт. Илт-мерĕн-и?

УЛҌКИ (кăшкăрса). Суйатăн. Путсĕр. Ку ĕç сирĕн.

ТИМĔРККЕ. Мĕн кăшкăратăн? Есĕ куртăн-и пире? (Тухма тăраť, кĕрет Ваççилйĕв).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Сволăҙсем... Пирĕн плана ҙарасшăн... Çук, пире ҙараймăр... (Тимĕрккене). Сталин колхосне кайакан урапасене халех пăхса тухнă пултăр. Есĕ, Улҍки, трепăвани çыр.

ТИМЕРККЕ. Каллех ман кăмрăк çук...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Каллех кăмрăк çук. Мĕн ес çапотраш тума тытăнтăн-и? Хăй вăрман варинҙех пурăнат, хăй кăмрăк çук, тесе тăраť.

ТИМЕРККЕ. Мана кăмрăк кирлĕ... Тупса параканни есĕр пулмалла.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Аťа, кай. Икĕ сехетрен урапасене

пăхса тухнă пултăр. Тумасассăн—кол косран сирпĕтсе кăларатпăр.

ТИМĔРККЕ. Есĕ ан кăшкăр. Пурмис мар вĕт... (тухаť).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Кам тума пултартăр-ха вăл ĕçе?

УЉКИ. Тихăн Каврилђ ун патне килнĕђђĕ...

ВАÇÇИЛЙĔВ Тихăн Каврилђ... (Паусă).

УЉКИ. Маруçкă ĕне ђирленĕ, терĕ аннў.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Тата ку çитмен.

(Комсомолккă ђупса кĕрет. Кĕрсенех кăшкăраť).

КОМСОМОЛККĂ Пилĕк кектар акрăмăр. Тата сĕлĕ кирлĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Çейăлккă мĕнле?

КОМСОМОЛККĂ. Калама çук лайăх ĕçлет.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Акă сана кĕлет уççи. Кĕрĕр те, илсе тухăр.

КОМСОМОЛККĂ (алăк патĕнђен). Пирĕн прикатă срукђен пĕтерсен мĕнле?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Преми парăпăр.

УЉКИ Хулана та екскурççине-и?

ВАÇÇИЛЙĔВ Хулана та. Кино.., театр унта.

КОМСОМОЛККĂ (савăнса). Вăт ку ĕç... Ну, унта мана кĕтеççĕ. Епĕ кунта калаçса тăратăп. Уљки, пырса пăх пирĕн пата. (Тухаť).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ес ђăнахах хулана кайасшăн-и?

УЉКИ. Санăн та пĕрер кунлăха кайса килмелле... Акă, çыру, хуларан çыраççĕ. Пирĕн тата шефсем килмелле.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ку пит лайăх-ха. Плуксем йусама пулăшĕç

УЉКИ. Сан Тимĕрккў ĕнтĕ вĕçнех çитнĕ... (Кĕрет Тимĕрккe). Епĕ уйа апат йарам-ха... (Тухаť).

ТИМĔРККЕ. Вĕркĕçе вĕртекен çук. Çын кирлĕ мана.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Урапасем çумĕнђи кайкка та пĕђђен пăраймастăн пулаť?

ТИМĔРККЕ. Пĕђђен ĕçлеместĕп епĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Пĕлместĕни есĕ, вăрлăха çĕртекенни кам-ши?

ТИМĔРККЕ. Ăçтан пĕлем епĕ анă. (Кĕрет Иванов).

ВАÇÇИЛИĔВ. Пĕлетĕн пуђ. Асту, Тимĕрккe...

ИВАНОВ (Тимĕрккене). Есĕ мĕн туса çўретĕн кунта?

Пурте ĕçлеççĕ, вăл пур—ĕççĕрех çÿрет. Каллех кăмрăк çитмерĕ мар-и?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Кайккăсене пĕђђен пăраймастăп, тет. Уншăн пулсан акакансене илсе, ăна пулăшакан тумалла. Тихăн Каврилђпа çулăхнă..

ИВАНОВ. Тихăн Каврилђăпа (Паусă).

ВАÇÇИЛЙĔВ Тихăн Каврилђ патне ăна йамалла та.

ИВАНОВ. Ку сахал-ха ăна...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Тухса кай... Çур сехетрен урапасене тÿрлетнĕ пултăр. (Тимĕркке кайаť).

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ку етеме тĕрĕслес пулаť. Урăх никам та тăвас çук.

ИВАНОВ. Халех тĕрĕслес пулаť. Унсăрăн вăл хăй йĕрне пăсма та пултараť. У, сволăђсем.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Акă аллă ђенгнĕр вађђи треповăни. Хăвах кайса тийесе кил. (Кĕрет комсомолĕс).

КОМСОМОЛĔС. Кĕçтук пиђђе прикати хăй нормине тултарђĕ. Мĕн тумалла тата?

ВАÇÇИЛЙĔВ. Ыранхи нормăна тытăнђђăр.

ИВАНОВ. Апатлантăр-и?

КОМСОМОЛĔС. Лайăх апатлантăмăр. Уйра çиме пит тутлă пулђĕ. Марйе инке те хăй нормине пĕтернĕ. Килнĕ ђухах куртăм. Вăл калама хушрĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Иккĕшĕ те ыранхи уђаскăсене тытăнђђăр.

КОМСОМОЛĔС. Йураť, Ваççилйĕв йулташ. (Тухаť, алăк патĕнђе комсомолккăна тĕл пулаť те ăна тĕртсе хăвараť, хăй тухаť)

КОМСОМОЛККĂ. Машшинă çĕмрĕлђĕ.

ИВАНОВ. Çейăлккă-и?

КОМСОМОЛККĂ. Çейăлккă çав. Вăрлăхне кăна тултарнăђђĕ, тĕнĕлĕ шартлатсах хуçăлса кайрĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ. Хаљ çеç тÿрлетнĕђђĕ-çке.

ИВАНОВ. Вăт хаљ тийеме кай ĕнтĕ.

ВАÇÇИЛЙĔВ (комсомолккăна). Çейăлккăна хăвăртрах тимĕрç лаççине илсе килĕр. (Комсомолккă кайаť). Хăť шефсем килтĕрђђĕ хăвăртрах... Прикатăна урăх ĕçе тăратас пулаť.

ИВАНОВ. Акассине ђарас мар. Тÿрлетиђђен кунтăкран та акмалла тăвас. (Кĕрет комсомолĕс).

ВАÇÇИЛЙЁВ. Кай еппин хăвăртрах. (Иванов кайаť).

КОМСОМОЛЁС. Епĕр пăрçа акса пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Халĕ пăри акма пуçларăмăр.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Мĕнле пăри?

КОМСОМОЛЁС. Çаплах, пăри акатпăр.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Мĕнле пăри? Пăри акма хађ иртерех. Пăрине пĕр ерне йулса акас та вара лайăх. Хăвăртрах уйа ђуп та кала: халех пăрахђђĕр пăрийе акма.

КОМСОМОЛЁС. Сотсиалисăмлă ăмăрту, теççĕ пирĕн прикатăра.Ыгтисенђен малтан пĕтересшĕн тăрăшаç ĕ вĕт.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Сотсиалисăмлă ăмăрту, тесе есĕр капла темскер те туса лартăр. Пăри вађђи халĕ çĕрĕ те хатĕр мар. Ђуп, халех акма ђарăнђђĕр.

КОМСОМОЛЁС. Пĕр кĕтессине çеç пуçланăђђĕ-ха. (Тухаť, кĕрет Иванов).

ИВАНОВ. Каллех сийен. Çил тата çĕкленђĕ.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Çил вара кансéрлет-им? Шăналăк карăр. Çиле хирĕç шăналăк карăр та утса пырăр. Çапла пынипе вăрлăх кирлĕ пек ӳкĕ.

ИВАНОВ. Ех, тăмпуç. Çилпе кĕрешме пĕлмен.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Хăна пулăшма пăрçа акнă çĕрте ил çынсене. (Кĕрет Уђки).

УЂКИ. Маруçкă ĕнине тухтăр пусса пăрахма хушрĕ.

ИВАНОВ (пĕрле). Мĕн калатăн есĕ, Уђки?

УЂКИ Пырĕнђе суран пулнă, тет.

ВАÇÇИЛЙЁВ. Мĕн калатăн есĕ?

УЂКИ. Çăкăрпа пĕрле йĕп панă, теççĕ.

ВАÇÇИЛЙЁВ. (Стсенă тăрăх ђупкалаť). Вăт, сволăђсем, ђи лайăх ĕнене пĕтернĕ... Çук. Ман алăран ĕçĕрнеймĕр... (Кĕреççĕ рапођђисен шеф прикати—икĕ арçын, пĕр хĕрарăм).

I-МĔШ РАПОЂ. Сывă-и, йулташсем? Акă епĕр те çитрĕмер...

ВАÇÇИЛЙЁВ (алă параť). Сывă-ха. Хăвăр мĕнле? Пит те вăхăтра çитрĕр.

РАПОТНЕТСĂ. Пурте йĕркеллĕ пуђ?

ИВАНОВ. Урапасем, сăвăракан машшинсем, сӳресем хатĕр мар-ха.

III-МĔШ РАПОЂ. Куна епĕр хăвăртрах тӳрлетсе парăпăр.

РАПОТНЕТСĂ. Пулăшма килнĕ те епĕр.

І-МĔШ РАПОЂ. Акма та пулăшăпăр. Хаљ сирĕн акма тухнă ĕнтĕ.

ІІІ-МĔШ РАПОЂ. Куçса çÿрекен тимĕрç лаççине уйа кăларăпăр. Кирлĕ пулсан çийĕнђех тÿрлетĕпĕр.

І-МĔШ РАПОЂ. Аťа, Иванов пар пире ĕç...

УЉКИ. Маруçкă ĕнипе тата мĕнле?

РАПОЂ. Мĕн пулнă тата ĕнĕре?

ВАÇÇИЛЙЕВ. Сăтăрçăсем ĕнене суран тунă. Çакăн пек сийенсемпе пĕтересшĕн вĕсем пирĕн колхоса. Анђах епĕр пĕтес вырăнне тĕрекленсех пыратпăр. Аťăр, йулташсем, тимĕрç лаççине. (Кĕрет васкаса Кĕркури).

ВАÇÇИЛЙЕВ. Есĕ мĕн тата?

КĔРКУРИ. Акă, вула. (Ваççилйев панă хута вуласа тухаť. Пурте Ваççилйев çине пăхаççĕ).

ВАÇÇИЛЙЕВ (Уљкине хутне параť). Вула... (Уљки тавра пурте тăрса тухаççĕ те куçпа вулаççĕ. Кĕркури пуçне ђиксе тăраť).

ВАÇÇИЛЙЕВ. Ку сăмахсене есĕ пур колхоçнĕксем умĕнђе те калама пултаратăн-и?

КĔРКУРИ. Калама пултаратăп.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Мĕншĕн-ха есĕ кун çинђен каламасăр тăнă?

УЉКИ. Мĕн калаçмасăр тăратăн?

КĔРКУРИ. Мĕн калас? Малтантарах каламаллађђĕ те.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Есĕ вĕсем шÿт тума хушаççĕ, тесе тăтăн-им мĕн?

І-МĔШ РАПОЂ. Çемçеккей есĕ.

ВАÇÇИЛЙЕВ (пурне те). Йулташсем, Халех миттĕнк пуçтарăпăр. Мĕн пулни çинђен колхоçнĕксене каласа парăпăр та ĕçне сута парăпăр. Аťăр, йулташсем. (Пурте тухаççĕ).

## 6-мĕш карттин.

Миттĕнк. Стсенă çинђе Ваççилйев тата рапођђишеф. Ытти артиссем куракаисемпе пĕрле ларса тухнă.

РАПОЂЂИ. Миттĕнка уçнă, тесе шутлатăп. Малтанхи сăмах колхос претçетаттĕлне Ваççилйев й-ша паратпăр.

ВАÇÇИЛЙЕВ. Йулташсем! Пирĕн колхоса çĕлен-

калтасем кĕрсе выранаçнă. Вĕсем кашни кунах пире сăхса пынă. Епĕр вĕсене хаҌ тытнă. Халĕ ĕнтĕ хамăр аларан Ҍасах кăлармăпăр. Çак çĕлен-калтасем хăйсен тавра ыттисене те пĕрлештерме тăнă. Вĕсем хăйсен мĕн пур вăйĕпе пирĕн колхоса салатасшăн тăнă. Ку сăтăрçăсенҌен пĕрне епĕр колхосран кăларса сирпĕтнĕ те ĕнтĕ. АнҌах тепĕри çак кунҌҌенех пирĕн хушăра тăнă. Вăл кашни утăмрах пирĕн ĕçе пăсса пынă. Акă çак кунсенҌе çеç вĕсем пирĕн Ҍи лайăх сортлă вăрлăха ампар çивиттинҌен шыв йарса пăснă. Ҍи лайăх ĕнене пĕтерҌĕç.

ТИМĔРККЕ (малти еретрен). Еп мар ăна...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Çейăлккăна пăсаканни кам тата? Йалхуçалăх машшинĕсене тӳрлетес ĕçе кам Ҍарса пыҌĕ?

ТИМĔРККЕ. Кăмрăк памарăн та ху...

ВАÇÇИЛЙĔВ. Кăмрăк çукран еппин есĕ таканланă хыççăн лашасем ернешерĕн уксакласа çӳреҌҌĕç? Каласа пар пире, урапасенҌе кайккăсене кăмрăк çуккипе-и пăрса лартмасăр хăварнă? Çук, кăмрăк çукки мар кунта айăпли, кунта есĕ ху айăплă. Есĕ хăвăн пантитусемпе пирĕн колхосăн çураки ĕçне пĕтересшĕн пулнă.

САСĂСЕМ. Вон колхосран! Сута парас ăна! Вон колхосран!

РАПОҌҌИ. Хуллентерех, йулташсем. Хуллентерех.

ТИМĔРККЕ. Мĕншĕн-ха сута?

КĔРКУРИ (стсенă çине чупса хăпарса). Акă мĕншĕнне хамах каласа парăп. Йулташсем. Мана атте йаланах колхоса хирĕç вĕрентеҌҌĕ. Пĕр вăхăтра вăл мана ампар патне шыв йатма та хушрĕ. Епĕ ун Ҍухне мĕншĕнне пĕлмесĕрх йулнă. Ун Ҍухне ман вăрлăха пăсас пирки шыв йатни пуçра та пулман. Вăл вăрлăха пăсма шыв йаттарнă мĕн. Кун хыççăн вара вăл кайран колхос çинҌен темтепĕр калама пуçларĕ. Ун патне Тихăн КаврилҌ, Тимĕрккĕ, тата ыттисем те çӳреҌҌĕç. Мĕн çинҌен канашланине мана пĕлтерместҌĕç. Вăрттăн пăшăлтататҌĕç. АнҌах халĕ ĕнтĕ вĕсем вăрттăн ĕçлени куç умне тухрĕ. Вăрлăха пăсаканнисем ман атте, Тимĕрккĕ, тата Тихăн КаврилҌă. Ытти йенҌен сăтăр туни те вĕсен ĕçех.

САСĂСЕМ. Сута парас сăтăрçăсене. Сута çĕлен-калтасене.

САСĂ. Вăт маттур Кĕркури, ашшĕне шеллемерĕ.

РАПОҌҌИ. Йулташсем. Сирĕн хушăра сăтăрçăсем

пулнă. Вăл сăтăрçăсем вăрлăха пăсса, машшинăсем йусассине ђарса, тата ытти пĕђĕк сийенлĕхсемпе те колхоса салатасшăн пулнă. Анђах вăл сийенлĕх пирки сирĕн колхос ўсме, тĕрекленме ђарăнас çук. Йулташсем. Сирĕн хушăра ĕçленĕ сăтăрçăсем ђи усал сăтăрçăсем пулнă. Вĕсем пур ĕçе те пăсма тăрăшнă. Вĕсем вăрлăхне те, кайккине те пăснă. Кулакпа поткулађнĕксен ĕçĕ вăл мĕнле те пулсан сăтăр тăвасси, сийенлесси. Йулташсем! Кулаксем пирĕн колхоса çĕмĕрме тăнине хирĕç пирĕн хамăр колхоса тата та çирĕпрех, тата та лайăхрах тĕреклетес пулаť.

САСĂ. Тĕрĕс, калатăн. Тĕрĕс!

РАПОЂЂИ. Йултащсем! Сăтăрçăсене ответлесе хамăр йенђен пирĕн çуракине срука пĕтерме сăмах парас пулаť. Мĕн пур вăйпа тăрăшса ĕçлесе, таврари колхоссем хушшинђе ђи малтан, тата ђи лайăххăн çуракине пĕтерер. Ку çеç мар, колхоса тата халђђен колхоса кĕреймен ђухăнсемпе вăтамсене кўртер. Йулташсем! Хамăра хамăр утарнĕке çырăнса ĕçлер!

САСĂ. Утарнĕке çырăнас. Тĕрĕс калаť.

ИВАНОВ (стсенă çине хăпараť). Йулташсем, хуларан килнĕ йулташ тĕрĕс калаť. Сăтăрçăсене ответлесе пирĕн хамăр ĕретсене тата та çирĕплетмелле. Йулташсем, ман прикатă çураки вăхăтĕнђе утарлă ĕçлеме, ĕçсене срукђен пĕтерме сăмах параť. Хамăр йенђен утарлă ĕçлеме Кĕçтук пиђђе прикатине сотсиалисăмлă ăмăр ăва ђĕнетпĕр. Ак ку сволăђа (Тимĕркке çине кăтăртса) колхосран сирпĕтсе кăларса, сута!

КĔÇТУК ПИЂЂЕ (вырăнтан). Ђĕннине йышăнатăп. Хамăра хамăр утарнĕк пулатпăр. Марйе инке прикатине ăмăртăва ђĕнетĕп.

МАРЙЕ ИНКЕ (стсенă çине ђупаť). Епĕр, хĕрарăмсем, тата мĕн пăхса тăратпăр? Епĕр те пахђа-çимĕç, тата выђăх пăхассине утарлăн туса пыма пултаратпăрçке. Епĕр те утарнĕк. Михаљасене ђĕнетĕп.

МИХАЉА (вырăнтан). Епĕр те утарнĕк. Епĕр те кайа тăрса йулмăпăр. Срукђен тултарма сăмах паратпăр.

ВАÇÇИЛИЕВ. Йулташсем! Пайантан пуçласа пĕтĕм колхосĕпех утарнĕк. Пĕтĕм çураки планне срука тата пĕтĕмпех тултарма сăмах паратпăр.

САСӐСЕМ. Тӗрӗс, Ваççилйӗв й-ш. Утарнӗкле ӗçлӗпӗр.

ВАÇÇИЛЙӖВ. Хамӑр кӳршӗри колхоса „Хӗрлӗ партисана" ӑмӑртӑва ђӗнес.

САСӐСЕМ. Ђӗнес, ђӗнес!

ВАÇÇИЛЙӖВ. Ак ку çӗрнӗ етеме (Тимӗркке çине кӑтартса) колхосран сирпӗтетпӗр те пӗтӗм ушканӗпех сут аллине паратпӑр.

САСӐ. Сута! Сута!

РАПОЂЂИ. Йулташсем. Сопранине хупнӑ, тесе шутлатӑп. Атӑр халӗ утарнӗкле ӗçлеме. Колхоса хуçалӑхпа орканисатси тӗлӗшӗнђен çирӗплетер, колхоса кулаксенђен тасатса пырса, тырпул тухӑçлӑхне партти кӑтартнӑ таран туса кӑларассишӗн кӗрешӗве тухар! Иккӗмӗш петтилеткӑн малтанхи çуракине полђшевикла иртерер. Сталин йулташӑн ултӑ историллӗ кӑтартӑвне пурнӑçласа пырар.

*Ђаршав.*

# Çураçу.

(Хĕрлĕ улах)

**Вылђакансем:**

1. ВАÇÇА—ратио ăсти.
2. КИРУК—стройкăран вăхăтлăха колхоса таврăннă çесоннĕк.
3. ВЕРА }
4. УЉЉИ } хĕрађасем.
5. ЙАККУ ПИЂЂЕ—уйрăм хуçалăхлă вăтам хресчен.
6. УРИНЕ ИНКЕ—Йакку пиђђе арăмĕ.
7. РАТИО САССИ.

Ĕç колхосра, çамрăксен клупĕнђе каçпала пулса иртет.

Хĕрсем, каҫҫăсем улах лараҫҫĕ. Майĕпен йурăсем йурлаҫҫĕ. Йакку пиҫҫе кĕрет.

ЙАККУ. Ырă каҫ пултăр, ҫамрăксем! Ват пуҫăмпах пĕрре килсе ларас-ха, терĕм... Сирĕн кунта тата ратио та пур. Шупашкар сăмахне илтеймĕп-и, терĕм. Ҫĕнĕ ыпар, ҫĕнĕ саккун пĕлесех килет вĕт...

ВАҪҪА. Аťа, ирт, ирт тĕпелелле, Йакку пиҫҫе. Епĕр сана йаланах тарават. Есĕ вĕт пулас колхоҫнĕк. Пайан акă есĕ колхос тулашĕнҫе, ыран пирĕнпе, колхосра... Ну, хăҫан сайавлени паратăн-ха колхоса кĕме, Йакку пиҫҫе?

ЙАККУ. Пўрте кĕме те ирĕк памарĕ—тўрех колхоса. Ҫим-ха, пăхкалам пăртак... Васкакан арăмĕнҫен те намăс курнă, тетҫĕҫ ĕлĕкрех, ҫавăнпа та, ан васкатăр-ха мана?

ВЕРА. Ăҫта васкамалли пур, хыҫалтан хăваламаҫҫĕ вĕт. Лар, лар, Йакку пиҫҫе, хăна пулăн.

ВАҪҪА. Епĕ сана пĕртте васкатмастăп, Йакку пиҫҫе. Ес хăвах пĕлетĕн. Епĕ пĕркун ху сăмах хускатнăран ҫеҫ астуtарас, терĕм.

ЙАККУ. Вăхăт пур ха, ун ҫинҫен те калаҫăпăр.

ВЕРА. Калаҫăпăр-ха, калаҫăпăр, вăхăт пур-ха... Аťа, лар, Йакку пиҫҫе...

ЙАККУ. Ларăп ҫке, ларăп, ҫамрăксем. Малтан пăхкалам-ха йĕри-тавра... Мĕнле сирĕн кунта ҫутă, мĕнле уҫă!.. Ĕлĕк ҫухне епĕр, ҫамрăксем, хура мунҫара улах ларатtăмăр. Ҫĕпкуҫ ҫутса йаратtăмăрҫҫĕ, тĕтĕмĕ тухаҫҫĕ вара, тапак туртаťҫĕҫ, ҫыхăнса ҫеҫ ларатtăмăр... Халĕ есĕр мĕн тĕрлĕ лайăх ҫўртра ларатăр.

ВЕРА. Ку, пирĕн, Йакку пиҫҫе, клуп. Клупра вăл йаланах таса. Ҫĕнĕ пурнăҫ вăл ҫапла тума хушаť.

ЙАККУ. Ĕлĕк ҫухне, аван, епĕр „клуп" тенĕ сăмаха та илтмен. Пураннă ҫав выҫăх пек тĕттĕмре... Пĕр

10—15 çул хушшинҫе мĕн тĕрлĕ çав улшăнҫĕ пурнăçĕ! Ĕлĕкхине халĕ паллас та çук. Пур çĕрте те халĕ çĕнĕлĕх.

ВАÇÇА. Нумай та пулмасť авă шыв хĕрринҫе Иван Çеменҫăн шыв арманĕ хăлтăртатса ларaҫҫĕ, халĕ пăх-ха: колхосăв крахмал савăҫĕ çуталса ларať, електритсă çунať, çĕрле хула пек курăнса ларať...

УЉЉИ. Таврара çук пысăк пуљнитса туса хуҫĕç. Шкул турĕç...

ВЕРА. Миçе çул кĕперсĕр аптăраса лартăмăр, халĕ кĕперлĕ пултăмăр.

ЙАККУ. Ан калаçăр та ĕнтĕ, шăлт тĕлĕнмелле... Çулсем тăрăх автопуссем ҫупаççĕ, çӳлте йероплансем кĕрлекĕрле иртсе кайаççĕ...

ВАÇÇА. Çыннисем те улшăннă, Йакку пиҫҫе. Хăçанха ĕлĕк хĕрарăмсем хут пĕлни пулнă? Халĕ пĕлеççĕ. Пухăва çӳреççĕ, тĕрлĕ халăх ĕçпе ĕçлеççĕ. Ав, Верапа Уљљи Шупашкара рапфака вĕренме кайасшăн-ха...

ВЕРА. Кайăпăр-ха, кайăпăр, ак çулана тухар-ха, кайнине сисмесĕр те йулăр...

УЉЉИ. Пĕр вĕренсе килĕпĕр тĕк, паллаймăр та кайран, „вăрман улпуҫне“ тухăпăр! Вара пырса курăр пире... Нăш! тутарса çеç иртсе кайăпăр хирĕç пулсан-тусан...

ВЕРА. Çаплах ĕнтĕ вăл, тата урăхла мĕнле пултăр.

ВАÇÇА. Ав куратна, хаљхи çамрăксем мĕнле! Пырса та ан перĕн... Хăçан вăл çавăн пек пулнă-ха? Сотсиалисăм тунă май, çынсен ăнланăвĕсене те улăштарса пыратпăр.

ЙАККУ. Хам куçпах куратăп-çке. Ҫăнахах, пурăнăçĕ шăваť малаллах, çĕнни çĕнтерсех пыrať, кивви путсах пыrať... Вăт, аҫасем, каллех хама ыраттаракан ыйтăвах илем ха. Паçăр сирĕн пата кĕрсенех, Ваççа мана хăçан колхоса кĕме сайавлени паратăн, терĕ... Ыйтма вăл çăмăл, а мана, ватăлнă çынна,—ĕмĕр кивви çинче ӳснĕ çынна, кун çинчен калаçма çăмăлах мар. Пурне те епĕ куратăп, ҫăнахах манăн колхоса кĕмелле, мĕншĕн тесен, тăрăшакан колхоçнĕк колхосра ĕлĕкхинҫен лайăхрах пурнať. Неуштă вара епĕ çакна курмастăп?! Куратăп. Анҫах епĕ икĕленсе тăратăп-çке. Пĕрре ку йенне, тепре тепĕр йенне туртăнатăп. Супинке кăмăлĕ те тата пире пĕте-

рет-ҫке. Еҫлесе илен тыррине пӗр ҫӗре хумалла. Унта найанӗ те илет вара.

Неуштӑ найанщӑн ман ӗҫлемелле?

Пӗртте килӗшес килмест...

ВАҪҪА. Ес каллех хӑвӑн ыратакан ыйтӑву ҫине куҫрӑн иккен... Мӗн ђухлӗ епӗ санпа калаҫнӑ, есӗ хӑвӑннипех... Найана памаҫҫӗ ӑна, колхосра ӗҫлекен ҫеҫ ҫийет, ӗҫлеменнине ҫитермеҫҫӗ... Асту-ха, авӑ, Куҫма Танилђӑ, мӗн ђухлӗ ӗҫлесе илнӗ: ырашӗ, тулли, пӑрҫи, хуратулӑ, сӗлли... Ҫийӗнђен тата укҫапа та илнӗ... Ӗҫленӗ– илнӗ... Колхоса кӗмен ђухне—ҫине тӑхӑнма аҫамӗ те ҫукђӗ...

УЉЉИ. Йакку пиђђе, есӗ ватӑ ҫын, хурапа шурра уйӑрма пӗлетӗн, сан пек пулсан, епӗ тахҫанах колхоса кӗмелле...

ВЕРА. Анваскат, кӗрӗ-ха хӑйех...

ЙАККУ (шухӑшласа). Кӗмеллех пулат пуђ ҫав. Ҫулӗ ҫавӑнта ҫеҫ.

ВАҪҪА. Вӑт ку тӗрӗс сӑмах... Ку ҫӑмахсене епӗр санран тахҫанах кӗтнӗ. Аҭӑр, ађасем, Йакку пиђђене, ҫакӑншӑн ура! ҫӗклер...

Ҫӗклеҫҫӗ: Ура! Ура! Ура!..

ЙАККУ... Анђах арӑм мӗн калаҭ-ха?..

ВЕРА. Ху килӗшнӗ пултӑр. Арӑмупа епӗр килӗшӗпӗр Аҭа, Уђђи, Урине инке патне кайса килер. Ӑна та колхоса кӗртӗпӗр...

УЉЉИ. Аҭа, аҭа.. Епӗр ӑна хӑйне те кунта илсе килӗпӗр...

ЙАККУ. Илсе килмесен те йурӗ.. Вӑл ҫывӑрма вырт-нӑ ӗнтӗ. (Уђђипе Вера тухса кайаҫҫӗ).

ВАҪҪА (хыҫалтан). Хӑвӑртрах илсе килӗр...

ЙАККУ. Ахалех, Ваҫҫа, арӑма илме йатӑр. Унсӑр та ӗҫ пулнӑ ӗнтӗ... Вӑл манӑн колхоса йуратсах каймасҭ те, килсен темле шавласа, ҫуйӑхса пӗтӗ тата... Ђӗнмелле те марђђӗ. Ей, кайса калами?..

ВАҪҪА (ратиона ӗнерлесе). Ђимӗр-ха, ђимӗр, хуллен-терех. Ратиона ӗнерлем. Шупашкар калаҫаҭ... Ђимӗр, ђимӗр, тетӗп...

РАТИО. (Йурӑсем йурлани, мусӑк калани илтӗнет). („Пахђи пахђи").

ЙАККУ. Ваççа, есĕ йурланине кăна мар, калаçнине те тыт ха. Маншăн пулсан калаçни тата интереслĕрех...

ВАÇÇА. Çĕнĕ хыпарсем пĕлесшĕн им вара есĕ?

ЙАККУ. Ратиона çавăншăнах лартаççĕ пуђ, тетĕп епĕ. (Тулта сасăсем, йăтă вĕрни, шавлани. Верапа Уђђа кĕреççĕ).

УЂЂИ. Ну, Йакку пиђђе, аран тăратрăмăр арăмна. Шаккарăмăр, шаккарăмăр çапах вăранмасĭ. Ђўређине çĕмĕрсе кĕме тытăнсан çеç тăђĕ...

ВЕРА Тăратрăмăр та каласа патăмăр, çапла-çапла сана Йакку пиђђе хăй патне ђĕнет, тесе.— Мĕншĕн тата?—Колхоса кĕме санран ăс ыйтасшăн, тетпĕр...

УЂЂИ. Капла калани йурамарĕ .. Вырăнтанах туласа кайрĕ Урине инке... Турђăка йăтрĕ те пире... Аран тухса тартăмăр. Çĕрне-кунне пăхмасăр çўретĕр, тет...

ВЕРА. Епĕр тухса карăмăр, вăл кĕрĕк тăхăнса йулђĕ. Ђим-ха еп ăна, вахă пуçĕпе улахсем тăрăх çўреме вĕрентĕп, тесе йунаса йулђĕ.

УЂЂИ. Пытан, хăвăртрах, пытан, Йакку пиђђе. Ак çакăнта кăмака хыçне кĕрсе тăр.

ВЕРА. Пытан, пытан хăвăртрах... Авă арăму урам тăрăх шайлашса килет...

ЙАККУ. Пашалăй, пытансан та йурĕ. Унсăрăн алли хĕрнĕ вăхăтра çакланĕ те.... (йурĕ).

(Урине инке кĕрет). („Вĕлле хурђĕ" йурă йурлаççĕ).

УРИНЕ. Ăçта-ха вăл ман упăшка, кунта и? Парăр ха ăна кунталла... кăларса тăратăр ăна ман куç умне... Ей, Йакку, тух ман ума...

ВАÇÇА. Па, Урине инке те пирĕн пата... Ирт-ха, иртсе лар ха, тĕпелелле. . Ку мĕн йапала тата сан? Турђăка мар и?

УРИНЕ. Ăçта кунта ман упăшкам Йакку? Вера, Уђђи, есĕр пырса ђĕнмерĕри-ха мана, Йакку пиђђе ђĕнет, тесе.

ВЕРА. Пĕлместпĕр, Урине инке. Есĕр килнĕ çĕре вăл таçта тухса çухалнă, ав ыйтăр кађђĕсенђен, вĕсем пĕлеççĕ пуђ...

УРИНЕ (турђăкине таккаса). Халех тупса панă пултăр мана упăшкама. Унсăрăн совета кайса йевитлетĕп...

ВАÇÇА. Урине инке, лăплан-ха пăртак. Вăл пĕр саманта çеç тухса кайрĕ. Халех килеп, терĕ. Мĕн вара упăшку çуккипе пăшăрханатăн, ей, пит кирлĕ пулђĕ-и?

УРИНЕ. Çăмарта тума аптранă ђăх пек вĕђĕлтетсе çӳрет, тăм пуç. Ларасђĕ пĕреххут килте хӳре пиçнĕ кушак пек... Колхос... Колхоса кĕреп... Прикатир пулап... Кăтартăп еп сана прикатир... Ак турђăкапа, турђăкапа ĕнсерен...

ВАÇÇА. Урине инке, турђăкуна ес çакăнта кĕтессе хур-ха... Кирлĕ мар вăл сана хађ... Упăшку килсен— хамах тыттарăп... Лăплан, тетĕп... Лăплан пăртак... Аťа-ха, çакăнта лартам. Уђђи, Вера, хăвăр хушăра лартăр-ха Урине инкене...

УРИНЕ. Ман пушă вăхăт çук сирĕнпе павраса ларма.

ВАÇÇА. Лар ĕнтĕ... Нуккă, хĕрсем, йурра! Унсăрăн пирĕн Урине инке лăпланас çук...

ПУРТЕ. Йурлаççĕ...

(„Ан авăн шĕшкĕ")

ВАÇÇА. Лар, лар, Урине инке. Упăшку халех килет.

УРИНЕ Хађхи çамрăксем пит килĕшӳллĕ йурлаççĕ. Ђăнах, ларсах итлем-ха килнĕ-килнĕскер...

ВЕРА. Аťăр-ха, хĕрсем, пĕркун вĕреннине. („Колхос йурри") йурлаççĕ.

ВАÇÇА. Ну, Урине инке, мĕнле, лăпланса çитрĕн-и? Мĕнле, епĕр йурлани сана килĕшет-и?

УРИНЕ (кулса). Лăплантăм-çке.. Тĕттĕм килте упа пекйăваланса выртатăп. . Ни сана ламппă çути, ни ăшă сăмах Сирĕн йурăра итлерĕм те пыллă сăра ĕçнĕ пекех туйăнђĕ... Мĕнле сирĕн кунта уçă!.. Кунта ларма та пит кăмăллă-çке...

ВАÇÇА. Пирĕн ратио та пур, Урине инке. Итлес темесĕн и? Ђăвашлах калаçаççĕ...

УРИНЕ. Ĕнейсех каймастăп çав йапалана. Рати, ратио, теçĕ, темле хăйамат вăл...

ВАÇÇА. Щупашкартан калаçаççĕ... сывлăш тăрăх...

УРИНЕ. Хăвăрах аппаланатăр пуђ... Малкай карђăкĕ ăна çапла калађђĕ пĕркун.

ВАÇÇА. Ђимĕр-ха, ђимĕр, Шупашкар калаçаť. Хытах калаçтгаратăп акă...

РАТИО. Шупашккар калаçаť... Тăнлăр! . Тăнлăр!

УРИНЕ. Есĕ ху пуђ ăна, Ваçça!

ВАÇÇА. Хуллентерех, хуллентерех... Итлĕр, кайран ăнлантарса парăп...

РАТИО. Пирĕн партти çĕршыва интустрилес политтĕка ăнăçулăн пурнăçа кўртсе пынă никĕс çинђе пролеттари револђутсин ђи йăвăр, ђи пысăк сатађне—йалхуçалăхне сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетессине татса хуђĕ. Халĕ. пĕтĕм Совет сойусне илсен, ђухăнпа вăтам хуçалăхсенђен 60% ытла колхоссенђе пĕрлешсе тăраççĕ. Кăçал вĕсен акакан çĕр лаптăкăшĕ патша самани ђухнехи пĕтĕм çĕр лаптăкăнђен иртет.

Совет сойусĕ сотсиалисăмла çул çинђе татăклăнах çирĕпленђĕ. Çак çирĕпленўсем йенђен илсе пăхсан, петтилеткă пĕр ĕмĕр пулса тăрат.

Пĕрремĕш петтилеткăра Совет сойусĕ пĕтĕм халăх хуçалăхне технĕккă тĕлĕшĕнђен рекконструкси тăвассине пурнăçа кĕртсе çитерме интустриллĕ никĕс хывма пултарђĕ Акă нумай та пулмаст епĕр Тнеппăр шывне çĕнтерсе кунта шывпа ĕçлекен електростантси туса лартрăмăр. Мускавра, Сталинкратра, Коркки хўлинђе, Йарославра автомашшинсем, вăйлă çĕнĕ паравоссем, трактăрсем туса кăларатпăр. Çĕнĕ хуласем лартатпăр. Акă çитес çулсенђе паттăрăн йухса выртакан Атăла пĕвелесе, Атăл тăрăх та Тнеппĕр çинђи пекех шывпа ĕçлекен мăн електростантси туса лартăпăр...

УРИНЕ. Куна есĕр, хăвăрах пуђ... Кайса пăхам-ха... Çавăнта кăмака хыçĕнђе, пĕри каласа тăмаст-и?

ВАÇÇА. Никам та çук унта.. Ахалех ђăрманатăн, Урине инке.

УРИНЕ. Çапах пăхам-ха...

ВЕРА. Унта никам та çук... Лар выранна...

УЉЂИ. Вăт ĕненмест вĕт... Никам та çук унта...

УРИНЕ Епĕ кăмака хыçне кайса пăхам-ха (упăшкине курса). Вăн, мĕнле вăл! Ес кунта иккен.. Еп ратио, Щупашкартан пуђ, тесе. Есĕ иккен вăл павраса ларакканни... Тух-ха, тух-ха, упăшкам, кунталла...

ЙАККУ. Ну, мĕнле, Урине, килĕшрĕ-и сана ратио? Мĕнле, лайăх калаçççĕ-и?

УРИНЕ. Килĕшрĕ.. Килĕшрĕ... Ађи ђипер те, анђах сăмси лапраллă... Мĕн, есĕ, кунта йур çинђе кăмпа щыраса

çӳретӗн? Е? Каласа пар мана... Ей, хӗрарӑм старӑстине çырӑнтӑн-и?

ЙАККУ. Хуллентерех, хуллентерех... Ђӗлхӳ шултӑра.

УРИНЕ. Мӗн мана! Шултри, вӗтти, мана пурте пӗр. Мӗн колхоса çырӑнас, тетӗн-и тата?

ЙАККУ. Çырӑнтӑм ӗнтӗ. Тин ӗнтӗ ђӗ ем лӑпланђӗ.

УРИНЕ. Анђӑк çӳри... Тин çуралнӑ пӑру пек тайкаланса çӳрет. Мӗн унта, колхосра, сана пылпа çу çитереççӗ-и мӗн?

ЙАККУ. Килте вара мӗн çиес?

УРИНЕ. Килте!.. Латнӑ паçӑр пулмарӑн, турђӑка хуçӑлиђђен хураттӑмђђӗ. Халӗ ӗнтӗ çилӗ уçӑлђӗ те, алӑ та çӗкленмест. Анђах мӗн пирки-ха есӗ унта кӑмака хыçне кӗрсе ларса ратиолла кӑшкӑратӑн-ха? Ей çӗрӗпе калаçма кӗрӗшрӗн-и?

ПУРТЕ. Ха-ха-ха!..

УРИНЕ. Ватӑ пуçӗпе мӗн хӑтланать вӑл, шайттан....

ВАÇÇА. Вӑл мар ӑна, ђӑнахах Шупашкартан калаççӗ. Акӑ, итле...

РАТИО. Çак китростантсисене Атӑл çинђе малтанхи ђеретпе Йарославӗл, тата Коркки хулисем тӗлӗнђе тума йышӑннӑ. Кайран, иккӗмӗш ђеретпе китростантсине Шупашкар хули тӗлӗнђе те тума йышӑннӑ...

УРИНЕ. Епӗ—есӗ унта кӑмака хыçӗнђе павраса ларатӑн, тесе... Ђӑнахах, ес мар иккен...

ЙАККУ. Ес йаланах çапла... Ӗненместӗн, шанмастӑн еп каланине... Ав итле, мӗн калаççӗ унта.

УРИНЕ. Ну, латнӑ, килнӗ-килнӗ, итлер еппин...

РАТИО. Ку тӗлӗшрен пирӗн иккӗмӗш пилӗкçуллӑхӑн малтанхи çулӗсенђе пур хатӗрленӳллӗ ӗçсене те майлаштарса çитерес пулать... Вара кайран...

ЙАККУ. Ек-кей! Атӑла пӗвелесе електритсӑ тӑвасси çинђен калаçаççӗ... Мӗнле пысӑк ӗç. Епӗр кунта арман таппине çеç пӗвекелетпӗр те татса кайать, вӗсем Атӑла пӗвелесшӗн.

УРИНЕ. Атӑла!? Неуштӑ вара Атӑла пӗвелесси çинђен каларӗç. Епӗ тӑнланса та йулаймарӑм... Мӗнле вара ӑна улӑмпа пӗвелеççӗ-и?

ПУРТЕ. Ха-ха-ха!..

КИРУК. Ну, каларӑн та, Урине инке!.. Пӳрнӳпе тӳрех пӗлӗте тивертрӗн.

ЙАККУ. Ха-ха-ха!

КИРУК. Епӗ ав Тнеппӑр шывӗ ҫинҙе пӗве тунӑ ҫӗртҫ ӗҫлерӗм. Унта та Атӑл пекех пысӑк шыв... Ҫук, унта улӑмпа пӗвелемеҫҫӗ, Урине инке...

ВЕРА. Каласа пар еппин пире мӗнле ӗҫленине. Ӑҫтан пӗлес-ха пирӗн йалта ларса...

УРИНЕ. Ҙӑнахах, хам ӑсӑмпа епӗ улӑмпа пуҙ, тесе...

КИРУК. Улӑмпа мар, петтонпа, тимӗрленӗ петтонпа пӗвелеҫҫӗ ӑна...

ВЕРА. Петтонпа пӗвелеҫҫӗ, тет. А мӗн-ха вӑл петтон? ҫӑкӑрпа ҫийеҫҫӗ-и ӑна?

КИРУК. Ес тата петтона мӗнрен тӑваҫҫӗ, тесе ыйт, вӑл тӗрӗсрех пулӗ... Петтона хӑйне савӑтра пысӑк кӑмакара ҫунтарнӑ ҙул ҫӑнӑхӗнҙен, ҙемӗнтран, хӑйӑртан, тата вак ҙулсенҙен шыв йарса ҙуста пек ҫӑрса тӑваҫҫӗ. Ҫак ҙул ҙусти вара хӑвӑртрах хытса ларать. Мӗн ҙухлӗ ӑна хытсан шыв сапатӑн, вӑл ҫавӑн ҙухлӗ хытӑ пулать. Петтон тата ҫирӗпрех пултӑр тесен, ӑшне тимӗр хураҫҫӗ. Вара кун пек тимӗрленӗ петтон кранит ҙулӗнҙен те ҫирӗпрех пулать. Вӑт мӗнле улӑмпа пӗвелеҫҫӗ ӑна, Урине инке...

УРИНЕ. Вӑн мӗнле иккен вӑл. Апла пулсан, пӗве тума петтонӗ ҫӗр лав та сахал пуҙ?

КИРУК. Ҫӗр лав! Мӗн калаҫатӑн есӗ, Урине инке. Мӗлйунпа шутлас пулать. Есӗ пӑх-ха ӑна: пӗвен тӑршши ҫухрӑм ҫурӑ, ҫӳллӗшӗ 50—60 ҙалӑш, хулӑнӑшӗ 100 ҙалӑш та пуртӑр!.. Сахал кирлӗ-и унта петтон!

УРИНЕ. Апла пулсан ӗҫлекенсем те унта пӗр йал ҫынни ҙухнӗ ӗҫленӗ пуҙ?

КИРУК. Пӗр йал ҙухлӗ! 30 пин ҫын ӗҫленӗ унта, икӗ Шупашкар ҙухлӗ.

УРИНЕ. Паттушки, маттушки, тӑн-пуҫ анкӑ-минкелесех кайрӗ, ҫав тӗрлӗ пысӑк ӗҫ, ҫав тӗрлӗ халӑх... Унта аташса та кайӑн... Сӗм вӑрманти пекех пуҙ...

КИРУК. Кунӗн-ҫӗрӗн електритсӑ ҫунать, ҫӗрле кӑнтӑрлахинҙен те ҫутӑрах...

УРИНЕ. Ҫӗрле кӑнтӑрлахинҙен те ҫутӑрах!? Ентӗ калаҫма та аптратӑп санпа... Йакку, калаҫ-ха пӗреххут

есĕ. Епĕ итлесе кăна ларам. Тем, ес калани халап пек туйăнать.

ЙАККУ. Есĕ, Кирук, çав Тнепростройра ĕçленĕҧ-ҧĕ-и-ха? Мĕнле, туса пĕтерсе хута йатăра ăна?

КИРУК. Йатăмăр-çке. Пит ҧаплăн уçрăмăр. Мускавран Калинин йулташ пырса уçса кайрĕ...

ЙАККУ. Апла пулсан халĕ унта електритсă шывранах тăваççĕ еппин?

КИРУК. Шыв вăйĕпех çав. Тнеппăр шывне пĕвенĕ те, шыва çав пĕве урлă сиктереççĕ. Шыв сикки вара електрисă тăвакан машшинсене ĕçлеттерет.

УРИНЕ. Ҧăн-и?

КИРУК. Каласа та ĕненмĕн, кашни машшинĕ 60 пин лаша вăйĕ ҧухлĕ вăй парать. Халĕ унта ултă машшинă ĕçлеççĕ. Вăт хăвах шутласа пăх ĕнтĕ миçе лаша ĕçлеççĕ унта. 360 пин хĕрлĕ лаша!

ЙАККУ. 360 пин лаша! Пĕр Тнеппăр шывĕнҧен çавăн ҧухлĕ вăй!

УРИНЕ. Мĕн тăваççĕ вара вăл електритсă вăйĕпе?

КИРУК. Вăл йенҧе, Урине инке, тимĕр, ҧукун шăратакан савăтсем нумай, тата çĕнĕрен те нумай тунă. Çĕнĕ хуласем, çĕнĕ савăтсем вĕçĕхĕрисĕр лараççĕ. Машшинсем тума унта хурçă шăратаççĕ. Çав ĕçе кайать електритсă. Тата електритсăпа çывăхри колхоссене, йалсене те çутатаççĕ... Виçĕ çул çав Тнеппăр çинҧе китростантси тунă çĕрте ĕçлерĕм. Малтан çав вырăнта йалсем лараҧҧĕç. Вăл йалсене тепĕр вырăна куçарҧĕç. Халĕ ĕнтĕ çав вырăнсенҧе тинĕс пек шыв хумханса, çуталса выртать.

ВАÇÇА. Ав Атăла та çаплах пĕвесе хурăпăр-ха. Унта та вара китростантси тăвăпăр. Ав мĕн каларĕ-ха ратио? Иккĕмĕш пилĕкçуллăха ăна тăвассипе ĕçлемеллех, терĕ.

КИРУК. Малтан тумалли тĕпҧевлĕ ĕçсене унта тăваççĕ те ĕнтĕ. Ăçта стантси тумаллине те паллă тунă.

УРИНЕ. Мĕн кăна курмăпăр-ха хамăр ĕмĕрте... Тем те курăпăр.

КИРУК. Çак хамăр Атăл çинҧи китростантсийе тăвас килет. 3 çул хушши Тнепростройра ĕçлесе епĕ пĕтĕм ĕçпе ăсталанса килтĕм. Пĕр хам ăсталăха Атăл çинҧе кăтартăттăм...

ВАҪҪА. Ну вара ҫав електростантсине туса пĕтерсен, пирĕн Ђăваш ҫĕршывĕ пĕтĕмпех урăхланăђђĕ. Вара ун сăнсăпатне паллас та ҫук. Ах, епĕ шухăшлатăп ҫавăн ҫинђен те, ҫакăн пек карттин куратăп вара: Анлă Атăл вĕҫĕ-хĕррисĕр, тинĕс пек ҫуталса выртаť. 2—3 ҫухрăмлă ђул пĕве урлă шыв сиккисем кăпăкланса сикеҫҫĕ. Китростантсти ҫурђĕ, ђултан тунăскер, хĕрелсе лараť. Атăл хĕрринђе ҫĕнĕ хула, ҫĕнĕ савăтсем ӳссе ларнă. Трамвайсем, автопуссем пĕр вĕҫĕмсĕр ҫӳреҫҫĕ. Атăл тăрăх пысăк прахутсем ђупаҫҫĕ... Провăтсем тăрăх електритсă вăйĕ районсене кайаť. Унта вăл пысăк претприйаттисене пыраť, совхоссене, колхоссене кĕрет, вĕсене ҫутатаť, йалхуҫалăх ĕҫĕсене тума вăй параť... Акă сĕтҫу ферми... Кунта електритсă кĕртнĕ. Кунта електритсăпа ĕне сăваҫҫĕ; ĕнене тасатаҫҫĕ, шăвараҫҫĕ, апат параҫҫĕ. Сунă сĕтне електритсăпа шăнтаҫҫĕ, електритсăпах хăймине илеҫҫĕ, уҫлаҫҫĕ. Електритсă ҫуттипех кунта вылђăх-ђĕрлĕхе те ӳстереҫҫĕ.

УРИНЕ. Ес аташсах карăн пуђ капла, Ваҫҫа. Ăҫтан, йелектритсă ҫуттипе вылђăх-ђĕрлĕхе ӳстереҫҫĕ ха...

ВАҪҪА. Пĕрте суймастăп, ав хăť Кирукран ыйт, вăл курнă та...

УРИНЕ. Неуштă вара ун ђухне ĕне сăвассине те йелектритсăпах?

ВАҪҪА. Електритсăпах ҫав. Мĕн пур ĕҫе вара ун ђухне електритсăпа.

УРИНЕ. Арлассине те-и, сӳс тылассине те-и, кăмака хутассине те-и?

ВАҪҪА. Пурне те, пурне те... Навус хырассине те...

УРИНЕ. Неуштă вара вăл пирĕн ĕмĕртех пулаť?

ВАҪҪА. Иккĕмĕш пилĕкҫуллăх пĕтнĕ ҫĕре ку йапала Совет сойусĕнђе пулатех.

УРИНЕ. Паттушки, маттушки! Неуштă вара ун ђухне ҫавăн пек самана пулаť? Тĕлĕнмелле, тĕлĕнмелле сирĕнпе, ҫамрăксем. Килсе лартăм та, ҫĕнĕ тĕнђе курнă пекех туйăнђĕ... Неуштă вара ҫавăн пек кунсем пулаҫҫĕ?

ВАҪҪА. Парттипе Совет власĕ ҫавăн пек малта пыракан технĕккăпа усă курса, пирĕн рапођђисемпе колхоҫнĕксен пурнăҫне ҫăмăллатасшăн тăрăшаҫҫĕ те...

... АССР

Вăт мĕн йапала вăл, Урине инке... Хĕрсем хавасланса йурăсем йурласа йараççĕ. (2—3 йурă йурлаççĕ).

ВЕРА. Ну, Урине инке, вăрçмастăни ĕнтĕ пире сана кунта ђĕнсе килнĕшĕн? Мĕнле ӳкĕьместĕн-и пирĕнпе ларнăшăн?

УРИНЕ. Вăрçмастăп кăна мар, тав тăватăп сире ђĕннĕшĕн. Кунта килмен пулсан епĕ ăçтан илеттĕм-ха кун пек ырă сăмахсене. Кунта килнипе ман куç-пуç уçăлђĕ.

УЉЉИ. Апла пулсан Йакку пиђђе çине те çиленме пăрахрăн пуљ?

УРИНЕ. Мĕншĕн вăрçас-ха ăна... Темскер усал туман вĕт вăл.

УЉЉИ. Колхоса кĕнĕшĕн те вăрçмастăн-и?

УРИНЕ. Колхоса!.. Колхоса кĕме епĕ ăна темиçе хут та хам канаш панă, анђах вăл хăй кĕресшĕн мар... Пăркаланса тăрат...

ЙАККУ. Мĕн? Канаш панă, тетĕн! хăçан-ха вăл канаш пани?

УРИНЕ. Лăплан, лăплан, упăшкам. Çакăн пек маттур çамрăксемпе кирĕк ăçта ĕçлесен те епĕ хăрамастăп. Пайантан вара епĕ хама хам колхоçнĕк тесĕ шутлатăп.

ЙАККУ. Мĕн, мĕн тетĕн? Кала-ха тепĕр хут!

УРИНЕ. Пайантан вара хама хам колхоса кĕнĕ, тетĕп. Мĕншĕн тесен, çав малашнехи çутă пурнăç колхосшĕн çеç пулат. Еп çав çутă пурнăçа кĕресшĕн-ха...

ЙАККУ. Урине! Есĕ те колхоса-и?

УРИНЕ. Епĕ те...

ВЕРА. Вăт Урине инке те... Турђăкапа килђĕ, халĕ упăшкипе ытаlансах тăраççĕ.

УРИНЕ. Мĕн мана. Епĕ тăнланса çитрĕм. Упăшкам та тăнланнă. Колхоса кĕнĕ, сирĕнпе пĕрлех епĕр иккĕмĕш пилĕкçуллăха, електритсă кунĕсене... (хут купăс сасси)?

ЙАККУ. Вăт ку тĕрĕс сăмахсем... Урине ђунăм, карђăкăм, кил-ха пĕр ыталаса илем...

УРИНЕ. Ах! Ан пăхăр, çамрăксем вăтанатăп... Ах!

ЕУРТЕ. (Кулса алă çупаççĕ. Йурă йанраса кайат. Унтан ташă. Каллех йурă).

ЙАККУ. (Кĕслепе тата парапанпа пĕрле)

Тӳн! тӳн! параппан та,
Ҫак параппан мӗн калаҭ.

УРИНЕ (хутшӑнаҭ):
Вуник туйа кайрӑм, тет те,
Вуник парне ҫакрӑм, тет.

ЙАККУ ПИЂЂЕ. Парнӳсемпех ҫак есӗ карђӑк...
Урӑххине йурлар мар-и?

УРИНЕ. Ђим-ха... старик. Ан кансӗрле халӗ есӗ...
Путӗр-путӗр путене
Сар ыраша йуратаҭ,

ЙАККУ (хутшӑнаҭ):
Епӗр хамӑр савӑн пекех
Сарӑ хӗре пӑхатпӑр...

УРИНЕ. Ҫакӑн йалӑн хӗрӗсем
Пусма ларнӑ ђӑхӑ пек
Кӑтӑкласа ҫӳреҫҫӗ.

ЙАККУПА пӗрле:
Пирӗн йалӑн хӗрӗсем
Кӗҫ-вӗҫ сиксе ларас пек
Кађакалла ҫӳреҫҫӗ.

ЙАККУ. Вуник пӑђӑр тирӗнђен
Ђӗн тилхепе турӑмӑр.
Ђӗн тилхепе шартлатрӗ,
Хура лаша хартлатрӗ,
Лешин тути мӑртлатрӗ.

УРИНЕ. Катӑр, катӑр катӑркас та
Катӑр, катӑр катӑркас
Катӑркаспа мухтанаҭ.
Манӑн Йакку упӑшкам та
Манӑн Йакку упӑшкам
Пӗр калпакпе мухтанаҭ.
Калпакӗ те хӑйӗн мар та
Калпакӗ те хӑйӗн мар,
Ҫын калпакпе мухтанаҭ.

ЙАККУ. Пӗлтӗр тӗртнӗ улађа,
Урлӑ пулђӗ улађа,
Кӑҫал тӗртнӗ улађа,
Тӑрӑх пулђӗ улађа.
Ђипер-ђипер аппипе

Епир кула пуçласан
Йӳçĕ пулђĕ сар ађа...
(Пурте алă çупаççĕ).

ВЕРА. Татах! Татах!

УЉЂИ. Урине инке! Урине инке!

ВАÇÇА. Йакку пиђђе!

КИРУК. Ташша! Ташша! (Йаккупа Урине ташлаççĕ)
(Улахрисем алă çупса тăраççĕ. Кайран ташласа пама та пултараççĕ).

ВАÇÇА. Çураçтартăмăрах, çураçтартăмăр...

ВЕРА. Пайан килсе ларман пулсан, Йакку пиђђен ĕçĕ те тухас çукђĕ...

УЉЂИ. Урине инке те кĕрес çукђĕ-ха...

УРИНЕ. Мĕн мана ухмах тесе шутлатăр-и? Колхоссем ĕнтĕ хăйсен çулталăкри тупăшĕсене валеçсе пĕтерђĕç. Йури кӳршĕсем патне кайса çӳрерĕм. Ентри кумăн тулли, пăрçи, йасмăкĕ, хуратулĕ, ырашĕ кĕлет тулли. Çийĕнђен тата укçанта илнĕ. Карађăм хăтасем сăра тăваççĕ. Сăра тумаллăх та илнĕ. Пирĕн пур: кĕлете тухса пăхатăн та — ĕнтĕркесех кайатăн—ним те çук. Те çитет, те çитмест çăварнине.

ВАÇÇА. Апла пулсан есĕ шуррипе хурине малтанах ăнкарса илнĕ?

УРИНЕ. Мĕн ухмах тесе шутлатна пире? Епĕ тахçанах колхосшăн...

ЙАККУ. Пыр та калаç унпа. Пĕреххут ку сăмахсене малтан мана каласђĕ.

УРИНЕ. Каларăм вĕт, тата мĕн кирлĕ. Аўа, Ваçça, çыр колхоса сайавлени.

ВАÇÇА. Колхос правленине. Урине инкепе Йакку пиђђе *сайавленийĕ.*

*Çак кунтан пуçласа пире колхос членне кĕме ирĕк ыйтатпăр. Колхос йĕркисене пăхăнса ĕçлесе пыма пулатпăр.*
Йура-ти çапла?

ЙАККУПА УРИНЕ. Самăй рас... Йураў, йураў.

ВАÇÇА. Апла пулсан алă пусăр...

ЙАККУ. Йакков Сретђакков.

УРИНЕ. Урине Сретђакковă.

ВАÇÇА. Пулђĕ. Ку сайавленийе ыран хамах правленийе кайса парап...

ЙУРĂ... („Колхос йурри“)

ЙАККУ. Ну, арăм, капла ларнипе çитет пулĕ ĕнтĕ. Кайса выртас... Вăхăт çурçĕрелле те çитет пулĕ.

УРИНЕ. Кайар, еппин. Колхоса кĕретпĕр ĕнтĕ. Колхоса кĕнĕ май иккĕмĕш петтилеткăна та кĕретпĕр. Ну, упăшкам, йулашкинђен ташла та, кайăпăр.

Ташă кĕвви, алă çупаççĕ. (Йакку пиђђе ташлаť. Ђăтаймасăр Урине инке те хутшăнаť).

УРИНЕ. Çук, ђăтаймарăм. Ман та хутшăнас (ташлаť). Ну, кунпа çитĕ. Кайас, ырăкаç пултăр. Сыв пулăр. Пирĕн пата та пырса ларăр.

ЙАККУ. Ан ўпкелĕр ĕнтĕ...

ВЕРА. Урине инке, турђăкуна маннă, илсе кай, кирлĕ пулĕ...

УРИНЕ. Кăмакана, вутта пăтратма ђăнах кирлĕ пулĕ çав... Сыв пулăр...

Пысăк хаваслă йурă. („Çĕнĕ улах йурри"). Йурă пĕтсен пĕр састђў те çук. Нумай тăрсан, хăйĕн шаккине шаккаса хуралçă иртсе кайаť.

Кайран—автан авăтни.

# Тăшман ĕçĕ.

3 пайлă акитпйессă-хаçат.

**Выљакансем:**

1) Кашкăр Иванĕ, Иван Каврилђ—колхос шђеттовођĕ, 1918-мĕш çулта шурă çарта çӳренĕскер, пйантсă.

2) Тевиккĕн Николай Николайђ—кулак, сăтăрçă

3) Пăру Петĕрĕ—Петр Сафронђ—колхос претçетаттĕлĕ, çемçеккей етем, „шлепке“.

4) Нилăв—йалсовет претçетаттĕлĕ.

5) Саттур Çтаппанĕ—колхоçнĕк-утарнĕк, краштăнвăрçинђе пиçнĕскер.

6) Мархва инке—тăлăх арăм, красноармейккă, утарнитсă.

7) Куçма—комсомолĕс, колхоçнĕк.

8) Прикатир—рапођђи, парттийтсă.

## 1-мӗш пайӗ.

Теккоратси: колхос правленин пӳлӗмӗ.

ТЕВИККӖН. Иван Каврилҫ, тархаслатӑп сана, тӑван аттене йӑлӑннӑ пек йӑлӑнатӑп, хута кӗр, тархасшӑн. Ес те ман хута кӗмесен, манӑн пӗтмеллех. Акӑ, ес канашланӑ тӑрӑх, виҫ-тӑват уйӑх маларах епӗ колхоса кӗтӗм. Колхосра тӑратӑп халӗ. Анҫах ман лару-тӑру капла та тӗреклӗ мар ха, Иван Каврилҫ... Колхосран мана халӗ тасатса кӑларасшӑн калаҫаҫҫӗ... Тархасшӑн хута кӗр, Иван Каврилҫ.

КАШКӐР. Тархасшӑн хута кӗр!.. Тасатса кӑларасшӑн! Иван Каврилҫ!.. Тӗлӗнетӗп епӗ санран, Николай Николайҫ. Ҫав тӗрлӗ ҫаплӑ, ӗлӗк пуйан пурӑннӑ етем, таврари йалсенҫи ҫӗрсене 40 ҫухрӑм таран тара илсе акса пурӑнаканскер, халӗ пирӗн умра ҫӗлен пек йавкаланса хӑйӗн пурнӑҫне ҫӑлма йӑлӑнат. Ҫав тӗрлӗ йӗрӗнҫӗклӗ, ҫав тӗрлӗ хӑравҫӑ пулмалла-ши санӑн, Николай Николайҫ?

ТЕВИККӖН. Ҫӑмӑл сана манпа калаҫма, Иван Каврилҫ. Есӗ вӗреннӗ ҫын. Есӗ нумай пӗлетӗн. Ӗҫкӗ йали пулман пулсан, есӗ халӗ таҫта ҫӳлти вырӑнта та ӗҫлеттӗнчӗ ӗнтӗ. А епӗр? Револҫутсипе ҫука тӑрса йулнӑ мӗскӗн ете‹м›сем.

КАШКӐР. Мӗскӗн етемсем! Кулак—мӗскӗн етем!? Есӗр ҫи усал тӑшмансем, ҫи тискер тӑшмансем. Колҫҫака, Теникҫӗна, Йутениҫа Совет ҫӗрӗ ҫине вӑрҫӑпа кӳрекенсем есӗр мари-ха?. Вӑл, мӗскӗн етемсем, тет!

ТЕВИККӖН. Пурне те пӗр виҫепе ан виҫ есӗ, Иван Каврилҫ. Пӗрисем ҫӑнахах есӗ каланӑ пекех пулҫ, анҫах теприсем, ман йышшисем апла мар. Акӑ мана хамах ил. Лашасене, ӗнесене колхоса патӑм. Пӗр вите патӑм.

Кёлет. Урапа. Мён йулђё хама? Тёрёссипе каласан, колхоса ман ђухлё пурлăх хывакан пулман та...

КАШКĂР Йатне тунă! Йатне! Пёлмест тетён-и мана? Витёр куратăп. Ылтăну ăçта? Аçу пеххиллесе хăварнă ылттăнна ăçта хунă ха есё? Вăл ылттăнпа есё халё хула илме пултаратăн.

ТЕВИККЁН. Çăмăл вăл çыннăнне хисеплеме... Тёрёссипе каласан, кётменђё епё, Иван Каврилђ, есё çав тёрлё хирёçессине. Сахал-и, нумай-и, çапах сана ырлăх туман мар вёт. Аçуна лаша илме укçа панă, пўрт лартнă ђух вăрман илсе панă. Хăвна тата? Хăвна вёреннё çёрте сахал пулăшнă-и? Вёренсе тухсан та пулăшнă. Тата сахал-и сана хăна туни? Астăватăн-и, шурă çара кайнă ђухне ик-виç тавлăк ёçсе ўсёрёлсе выртнă ман патăмра хăнара.. Калас теменђё те, нушти калаттарђё...

КАШКĂР. Лăплан, Николай Николайђ, ђарăн, çитё. Малтанах сана каланăђђё: покка епё йалта, есё ман çумра пи ёшти çумёнђе пекех сыхă. Никам та сана пырса тивмё, пёр пёрђё çўçў те тăкăнмё. Пёлетён есё йёркине. Пёл те, ху ăшăнта тыт. Ёçлем пек ту. Пример пар. Йаланах малта пул. Йалсовет претçетаттёлне те, комсомол çекреттарне те хисеп ту. Сан сыхлăхлă пурнăçу çавсенђен килет. Вёсем сана тивмесен сана урăх никам та тивес çук. Пёђёккисемпе хамăрах пёлёпёр. Асту есё çакна...

ТЕВИККЁН. Тавтапуç сана, Иван Каврилђ. Ёмёр манмăп епё сана, хута кёнёшён.. Анђах çав тасатуран мёнле хăтăлас-ха? Çав хăратать вёт мана?

КАШКĂР. Каланă сана пёрре, тасатмёç тесе. Тата мён хăрамалли пур санăн?

ТЕВИККЁН. Шанатăп, ёненетёп, тавтăватăп. Ну, урăх ним те каламастăп. Иван Каврилђ, кил-ха кунталла... (Лешё пырать, кёсйинђен ерех кăларса) Мухмăра уçма сыпмастăн-и пăртакçă? (парать)

КАШКĂР. Тавай! (Ёçет) Пытар... Такамсем килеççё, кёрсе тăр çакăнта ђăлана. Еп сана питёрсе илем (питёрет).

Пăру Петёрё кёрет.

ПĂРУ. Ну, ёçсем мёнле пыраççё, Иван Каврилђ? Укçа-тенкё пухасси пирки райколхоссойусран килменђ-

ђĕ-и-ха хутсем? Мĕн шутлатăн есĕ çавсем çинђен? Кварттăл вĕçне тухса пыратпăр, а пирĕн мĕн пурĕ те 12 прођђăн çеç вĕт... Ман шутпа как-нипуŤ тултарасђĕ.

КАШКĂР. Тултарасђĕ! Тултар! Есĕ претçегаттĕл. Санăн ĕçлемелле. Епĕ мĕн? Епĕ колхос шђеттоводђĕ çеç. Мана ĕçкунĕсем çырнă пултăр. Ытти-хытти, маншĕн пулсан...

ПĂРУ. Иван Каврилђ, мĕн есĕ темле хирĕç калаçатăн. Есĕ ун пек хирĕç калаçмалла мар-çке. Неуштă вара пирĕн вăл ĕçе пĕђђсн тумалла?

КАШКĂР. Авă калаç пайан прикатирсен канашлăвĕнђе. Йатарласа ыйту ларт. Çынсем хĕрсе çуракине хатĕрленеççĕ, вăл укçа-тенкĕ çинђен... Темле ăнланаймастăп епĕ сана, Петĕр Софронђ.. Укçи вăл кĕтме те пултарĕ-ха. Çав çуракине лайăхрах иртересђĕ. Хăвах пĕлетĕн: çурхи кун çулталăка тăрантарать, тенĕ ваттисем. Çавăнпа та ђи малтан çураки çинђен калаçас пулать.

ПĂРУ. Районти канашлура тĕрĕсех каларĕç: çураки хăйне, укçи хăйне, иккĕшне те пĕр вăхăтра тултарса пымалла, терĕç.

КАШКĂР. Каланине пурне те хăлхана ђиксен, йапалана туса та çитерес çук. Хăвăн вара санăн пуçу çук-им? Неуштă укçа пухас, тесе пĕтĕм çураки ĕçне пăрахас? Акă плуксем тӳрлетмелле, акакан машшинсене йусамала... Вăрлăхне тасатмалла, çумалла. Кам тăвĕ-ха вĕсене? Кам йертсе пырĕ ку ĕççене? Çакăн çинђен шутламалла санăн, есĕ укçа çинђен...

ПĂРУ. Тата пайан çак çураки ĕçĕсемпе пĕрлех колхоса кулаксенђен тасатни çинђен те сӳтсе йавмалла вĕт-ха... Пĕтĕм колхос çав Николай Николайђа хирĕç калаçать. Пурте ăна колхосран кăларасшăн...

КАШКĂР. Халăх вăл темскер те калаçĕ. Вăл каланине пурне те туса пырсан, пирĕн колхос тахçанах саланмалла. Ман шутпа халăха хытăрах тытмалла, ăна çăвар уçма та памалла мар. Мĕн пĕлет вăл халăх? Мĕнле епĕр Николай Николайђсăр пурăнăпăр-ха? Вăл пире йаланах ĕçре пулăшса пырать. Ман шутпа, ăна тасатасси çинђен мар, ăна пысăкрах ĕç парасси çинђен калаçас пулать.

ПĂРУ. Ес колхос ĕçĕсене пĕлетĕн ĕнтĕ, Иван Каврилђ... Мана мĕн? Маншăн пулсан, пурĕ пĕрех.

КАШКĂР. Петĕр Софронђ, халăх вăл темскер те калĕ. Есĕ ăна ан итле. Ĕç тăвас пулсан, унпа мар, уйрăм çынсемпе тума тивет. Астăваган пуљ, иргнĕ суйлавра ĕлĕкхи йалсовет претçетаттĕлне, лайăх ĕçлекеннех, сирпĕтме пĕлтĕмĕр. Мĕн тăвас тенĕ, çавна тунă... Есĕ мана итле, Петĕр Софронђă. Вара сан ĕç тухĕ. Николай Николайђа колхосран тасатасси пирки йахăнне те ан йар. Ӳкĕнесси пулмĕ...

ПĂРУ. Мĕн мана? Маншăн пулсан, Николай Николайђă пит те лайăх çын. Çынпа вăрçмасть, йатлаçмасть. Ахалех ăна тулаççĕ...

КАШКĂР. Ахаљ пулмĕ... Ан тăрăн ун çине...

ПĂРУ. Мĕн мана? Йатă-им вара? Маншăн пулсан, колхосра мĕн ђухлĕ лăпкă, мана çавăн ђухлĕ лайăхрах.

(Саттур, Мархва, Куçма Нилăв, тата ыт. те кĕреççĕ).

НИЛĂВ (мала тухса). Ну, Петĕр Софронђ, канашлăва уçма вăхăт çитнĕ те пуљ. Мĕн тата, кама кĕтсе тăмалли пур?

ПĂРУ. Айтăр, ларăр еппин маларах, йулташсем. Калаçма пуçлăпăр. Мĕнле ыйтусем пур сирĕн, йулташсем? Манăн çакăн пек ыйту: çуракине хатĕрленесси, тата укçа-тенкĕ пухасси.

САТТУР. Тата колхоса кулаксенђен тасатассине те сӳтсе-йавас пулать.

МАРХВА. Ку ыйтăва малтанах лартас пулать. Епĕр нимле майпа та колхосра кулака ђăтма пултараймастпăр. Ĕлĕк те вĕсем пирĕн йуна ĕçнĕ, халĕ те вĕсем çаплах ĕçме пăхаççĕ.

КУÇМА. Ђăнахах ĕнтĕ вăл Ку ыйтăва, Мархва каланă пек, малтанах сӳтсе-йавмалла.

ПĂРУ. Апла пулсан, мĕнле тăвăпăр-ха?

КАШКĂР. Мĕнле тăвăпăр? Паллах, мĕнле тăвасси. Ыйтусене мĕнле лартнă çаплах тăвас. Тасату кайранхи ђеретпе те пырĕ-ха вăл. А... Нумайи-ха пирĕн колхосра кулаксем? Ыйтам-ха епĕ çурма хисеплĕ Саттуртан.

САТТУР. Пур, сахалах мар. Аллас тăк, тупăпăр.

КАШКĂР. Камсем? Ну, кала?

МАРХВА. Николай Николайӗ, пӗрре, Иван Фетӑрӗ, иккӗ, Ҫемен Ҫтепанӗ, виҫҫӗ.

САТТУР. Аристарх Путӑӗ, тӑваттӑ, тӗаккӑн пулнӑ Алексей Иванӗ пиллӗк...

КАШКӐР. Апла шутласан, есӗр пӗтӗм колхоса салатма пултаратӑр. Пирӗн колхосра вара ҫын та йулас ҫук. Колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнӗен ҫирӗплетес вырӑнне есӗр колхоса салатасшӑн ҫеҫ. Тасату ыйтуне, ман шутпа лар малла та мар.

САТТУР. Орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнӗен! Ӑста есӗ калаҫма!.. Кулака таҫатни колхоса орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнӗен ҫирӗплетни пулмасӗ-им вара?

КАШКӐР. Амунтан кайса ыйт, манран ан ыйт, ҫамрӑкрах-ха есӗ манпа калаҫма.

НИЛӐВ. Петр Софронӗ, айта, пуҫла, мӗнле лартнӑ ҫаплах. Пурне те ӗлкӗрӗпӗр-ха, сӳтсе-йавма.

ПӐРУ. Апла пулсан пуҫлӑпӑр... Ҫураки вӗт сӑмса ҫинӗе. Ӑна хатӗрленмелле: ҫейӑлкки, вейӑлкки, сорттировкки, формалинӗ-мӗнӗ, тата ытти те. Ҫак вӑхӑтрах укҫа-тенкӗ пухма хушаҫҫӗ. Епӗ шутлап-шутлап та, укҫи-тенкипе халӗ вӑйа сапалантарас мар, пухма пӑрахма та йурӑӗ пулӗ. тетӗп. Малтан ҫуракине, унтан укҫи-тенкине. Кайран как нипуӗ штурмӑ туса та пухӑпӑр. Инвенттар тӳрлетес пулаӗ, ҫавӑ клавнӑй ӗҫ. Ман пӗтрӗ. Тавай сӳтсе-йавӑпӑр.

САТТУР. Тӗлӗнетӗп епӗ сиртен, Петӗр Софронӗӑ. Ну, ҫураки ҫинӗен пултӑр. Каллех пирӗн кулаксене колхосран тасатасси ҫинӗен калаҫма тивет. Пӗлтӗр есӗр акӑ Иван Фетӑрӗа прикатир туса хутӑр. Ну, вӑл йурӗ. Анӗах вӑл мӗнле ӗҫлерӗ-ха? Ун прикати пек наӗар ӗҫлекен урӑх пулмарӗ те. Ҫуракине 15 кунта пӗтерес вырӑнне 25 кун таран тӑсрӗҫ. Кайран вырнӑ ӗухне, каллех тем ӗухлӗ таккалани пулӗӗ. Типнӗ ыраш келтисене уй тӑрӑх ыта-ыта пӗтӗм уйа ыраш тӑкрӗҫ. Йӗтем ҫинӗен 100 пӑт таран тырӑ вӑрлаттарчӗҫ... Ӗҫ кунӗсем ӳстерсе ҫырнӑ Неуштӑ вара есӗр тата та ҫав Иван Фетӑрӗа прикатиртах хӑварасшӑн? Тасатас пулаӗ, урӑх ним те мар. Акӑ ман сӑмах...

МАРХВА. Кам пулнӑ-ха вӑл Иван Фетӑрӗ? Ӗлӗкхи усламҫӑ, мыттарнӗк. Есӗр ӑна колхосра тытатӑр. Вӑл

пирĕн ĕçе пăсса çеç пыраĭ. Вăл халĕ те пасартан пасара çӳресе услам тăвасшăн, унта та кунта пăхкаласа çӳрет.

КУÇМА. Йе тата Аристарх Путăђ. Ăна коњуха ларт-нă. Вал кĕнĕренпе пирĕн 80 лаша çине 20 урапа çеç йулђĕ. Çав мари-ха пирĕн урапасене, хăмăт-пăйава салатса пĕтерекенни? Ăна и вара колхосра тытас? То-лой! Пĕр самант та тытас çук. Уретник, политси тав-рашне ђăтас çук...

МАРХВА. Нилăв йулташ, мĕн тата есĕ ђĕнмесĕр ларатăн? Неуштă вара Совет влаçĕ кулаксене хӳтĕлеме хушаĭ? Калăр. Сирĕн сăмах татăклă пулĕ.

КАШКĂР. Парăр-ха мана сăмах. Кулак та кулак Иван Фетăрђ та, Аристарх Путăђ та кулак пулсан вара, пирĕн колхосра пурте кулак. Ђи малтанах çак çурма хисеплĕ Саттур Çтаппанĕ, Мархва, Куçма ђи хайар кулак-сем пулаççĕ. Мĕншĕн тесен Саттур Çтаппанĕн аслашшĕн аслашшĕ йалта ђи первăй пуйан пулнă, темелле. Мар-хва амăшĕн инкĕшĕ мăнастирте манашкă пулса ĕмĕрне иртерђĕ. Куçма ашшĕн пиђђĕшĕ вăрă ĕçĕпе тĕрмерех пĕтрĕ. Неуштă вара есĕр те çак кулаксене те колхосрах хăварасшăн?!

САТТУР. Тата мĕн туртса кăларас тетĕн? Тĕлĕкре курнисем-им вăл санăн? Мăшкăлама памăпăр. Епĕр краштăн вăрçинђе йун тăкса ку ирĕке илтĕмĕр... Есĕр ăна шурă çарта çӳресе..

МАРХВА. Сирĕнпе путсĕрсемпе çапăçса ман упăш-кам та фронтрах пĕтрĕ. Ђарăн суйма, йăгă, шурă пантит!

КАШКĂР. Ђимĕр-ха, ђимĕр... Сăмаха ан пӳлĕр-ха есĕр. Мĕнле вĕсем кăшкăраççĕ! Йун тăкнă! Вăрçăра пĕтнĕ! Шурă пантит! Ăçтан-ха епĕ шурă çарта пулнине пĕлетĕр. Çук! Епĕ хам шуррисемпе çапăçнă. Пĕтĕм Çĕпĕрĕпех Колђђака хам хăваласа тухнă... Ĕç ак мĕнле. Çирĕп пару хурас пулаĭ вĕсем çине. Налок! Акă мĕн. Атту вĕсем пăсăлсах кайнă.

МАРХВА. Кулак йатти! Шурă пантит. Мĕн ђухлĕ илтĕн-ха Николай Николайђран çак сăмахсемшĕн?

САТТУР. Сволăђ! Сутăннă пĕтĕмпех, пантит. Пирĕн çине мар, ху çине налок хумалла. Колхосран та тасат-малла.

КАШКĂР. Мĕн!? Кала-ха тепĕр хут! Епĕ-и? Ес пĕлетĕн-и епĕ кам иккенне. Мана-и тасатма? Епĕ сана пĕр самантрах инçе çĕре! Нилăв йулташ, тархасшăн ђарăр есĕр çак пантита...

НИЛĂВ. Итлетĕп, итлетĕп те... Есĕр ĕлĕкхинпех, хăçантанпа ĕнтĕ есĕр кушакпа йăтă пек харкашатăр. Халĕ те пăрахман. Ман шутпа, ку ыйтусене пирĕн халех татас пулаť, унсăрăн пирĕн колхос ĕçĕ малалла каймĕ. Шутлăр ха... Вĕсене те кăларсан ĕçлекен тата кам йулĕ,— хамăр вăйсем çитес те çук Вĕсем пурте ăстаççем, пире кирлĕ. Йалхуçалăх машшинĕсене пирĕн кам тўрлетĕ-ха!? Ман шутпа вĕсене пурне те, иншенерла техникла вăй шутне кĕртсе, хамăрăн колхосăн машшин сарайĕ çумне ĕçлеме çирĕплетес пулаť. Ан тив, ĕçлеђђĕр. Кайран машшинсене тўрлетсе пĕтерсен, колхосран толой. А, есĕр Суттур, Мархва, Куçма, харкамша пăрахăр. Маншăн пулсан, кунта харкашнипе ĕç тухмасť. Кунта вырăнти политтĕк кирлĕ.

КАШКĂР. Калама та çук ăслă решшени. Халĕ хăварас, кайран толой.

САТТУР. Ку оппортунисла решшени... Пирĕн апла кунта ларни те ахалех. Айтăр, кайар, йулташсем...

МАРХВА. Нилăв, й-ш, епĕ те кайатăп. Тўсме пултараймастăп кун пек сăмахсемпе...

НИЛĂВ. Канашлатăп йулма... Текех çапăçнипе пулмасť вăл...

МАРХВА. Кайатпăр епĕр.

(Саттур, Мархва, Куçма тухаççĕ).

ПĂРУ. Ђимĕр-ха... Тата тепĕр ыйту кăна вĕт... Çапах пăртак лармаллађђĕ...

НИЛĂВ. Ан тив йăлáнтарђђĕр... Ман шутпа, вĕсене иншенерсемпе технĕксен шуђĕпе хăвармалла пулаť. Ĕçĕ те вара пĕтнĕ...

ПĂРУ. Укçи-тенки тата мĕнле?

НИЛĂВ. Тупас пулаť. Шгопă çитес ернерех пĕтернĕ пултăр... Ну, саланатпăр-и?

ПĂРУ. Апла пулсан, пĕтерĕпĕр.

(Нилăвпа Пăру тухса кайаççĕ).

КАШКĂР (халăха). Есĕр тата мĕн пăхса тăратăр! Куратăр, канашлу пĕтнĕ... Кайас пулаť ĕçе... Тухса кайăр кунтан! Ман çыру çырмалла-ха.

(Халăхсем шавласа тухса кайаççĕ. Çыру çырма лараŤ).

„РАЙ РКИ-ККА уполномођђăйне"., Лешсем çырма пуçлиђђен малтан хамăн çитерес-ха... Саттур Çтаппан, Мархва, Куçма Куçмиђ колхоса окранисатсипе хуçалăх йенђен çĕмĕресшĕн.

ТЕВИККĔН (ђăлантан шаккаса). Иван Каврилђ... Иван Каврилђ... Уçмастăн-и? Кунта ларса пĕтĕмпех киђемленсе кайрăм...

КАШКĂР. Лар-ха, лар пăртакçă... Ман çырмалли пур-ха (çыраŤ). Ку тĕлĕшрен ĕçе çӳлерех çĕре çитерсен те йурĕђђĕ. Унсăрăн пирĕн колхос саланма та пултараŤ... „Ырă сунакан" (çыруне конверта ђиксе кăсйине хураŤ. Ђăлан алăкне уçат), Аŭа, тух, шăммушаккуна тӳрлеткеле...

ТЕВИККĔН. Ђунăм, пепкем, кил пĕр ыталаса ђуптуса илем... Ĕмĕр манас çук сана, Иван Каврилђ, пайанхишĕн (ыталашаççĕ).

САТТУР (хулен кĕрсе пăхса тăраŤ). Тапак хутаççине манса хăварнăђђĕ...

(Николай Николайђ сасартăк Кашкăр хыçне пытанаŤ).

КАШКĂР. Шпион! Вăрттăн пăхса çӳретĕн... Епĕ сана!

САТТУР. Хуллентерех, хуллентерех...

КАШКĂР. Вон кунтан!..

САТТУР. Тăшман! Кулак йытти! Нумайах киленей мĕн те-ха... (тухса кайаŤ).

КАШКĂР (кулака). Аŭа, сан патна... Кунти ĕçсене пăхас та килмест ĕнтĕ. Пĕр растройствă кăна... (тухса кайаççĕ).

*Ђаршав.*

## II-мĕш пайĕ.

Текоратси колхосăн машшин сарайĕ, ампарĕсем.

Стсенă çинђе Тевиккĕн пĕђђенех. Вăл плуксем сăрлаŤ. Аллинђе пысăк сăрă мелкисем. Хăй пĕђђенех калаçаŤ.

ТЕВИККĔН Çĕнĕ çултанпа ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ-ха. Колхосран тасатаймарĕç. Иван Каврилђ çине те тăрăнђĕç те, шурă çарта пулнă тесе, анђах нимех те тăвайма-рĕç. Халĕ ĕнтĕ епĕ колхос савхосĕ.

Çитменнине тата мана йалхуçалăх машшинĕсем йусас çĕре технике хуђĕç. Тем пек пысăк ĕçсем шанса

паҫӗҫ. Ака халӗ ҫураки ваҫҫи плуксене йусатăн-ха... Ха-ха-ха! Ҫийелтен пăхсан, плуксем макаҫăнри пекех, а ӗҫлеме тытăнсан... Ха-ха-ха! Кашнийӗнҫен пӗрер кайккă кăна... Нумай кирлӗ и вара ӗҫлеме пӗлсен... Кайккă ҫук ҫӗре лайăхрах сăрлас-ха (сăрлаҫ).

(Нилăвпа Пăру кӗреҫҫӗ).

НИЛĂВ. Лар ха ҫакăнталла, Петр Софронҫ. Кунта йут ҫын никам та ҫук-ха. Есӗ, Николай Николайҫ, ӗҫле, пирӗн ҫине ан пăх. Епӗр хамăрăнне, есӗ хăвăнне...

ТЕВИККӖН. Йурӗ-ҫке. (Ӗҫлет, анҫах вăхăҫӗпе кусем хыҫнелле пырса, итлесе те пăхаҫ).

НИЛĂВ. Епӗ хаҫ кăна райӗҫтăвком пленăмӗнҫен килтӗм. Ну, вăт йапала тăк йапала. Каласа та ӗненмӗн. Ҫав тӗрлӗ строкă, ҫав тӗрлӗ строкă халӗ. Пăртак ҫеҫ аташсан та, вунă ҫул, йе ҫи пысăк наккасани. Пӗлен пуҫ мӗнне?..

ПĂРУ. Мӗн ҫинҫен есӗ, Нилăв й-ш? Епӗ пӗртте тăнланмастăп.

НИЛĂВ. Сотсиалисăмла пурлăха, колхос, копператси, патшалăх пурлăхне сыхă тытса усрасси ҫинҫен. Пӗр ыйту кăна пулҫӗ. Шупашкартан уполномоҫҫăннăйсем килнӗ. Нихăҫан пулман пек хӗруллӗн, активлăн иртрӗ пленăм. Халиҫҫен тухса калаҫман йалсовет претҫетаттӗлӗсем те ҫăтаймарӗҫ, тухса калаҫрӗҫ... Шупашкартан килнӗ йулташсем ăнлантарса париҫҫен, вăл опҫăлăх пурнăҫне сыхласси ҫинҫен кун пек шутламан та епӗр...

ПĂРУ. Аҫа, тытăннă-тытăннах, вӗҫне ҫитиҫҫенех каласа пар ӗнтӗ. Ку сăмахсем мана пырса тивеҫҫӗ вӗт.

НИЛĂВ. Ҫи малтанах, ҫапла. Опҫăллă пурлăх вăл таса, ăна никам та тӗкӗнме пултараймасҫ. Сотсиалисăмла пурлăха харампырсем, параҫитсем тапăнасран хытă сыхламалла. Пирӗн опҫăллă пурлăх вăл пӗтӗм ӗҫхалăхӗн пурлăхӗ. Ҫас-ҫасах епӗр ҫав опҫăллă пурлăха сыхламастпăр. Ҫакна кура, клас тăшманӗ кулаксем, сăтăрҫăсем, шуҫăксем, ҫпекуҫантсем ҫын шуҫӗпе пурăнма йуратакансем вăрласа, ҫунтарса, патшалăх пурлăхне салатса, патшалăхне хăйне те пӗтерес шӗн кӗрешеҫҫӗ. Кун пек револютсийе хирӗҫ ӗҫсем ака Шăмăршă, Куславкка, Канаш районӗсенҫе те пулнă мӗн.

К... СР
г. Чо...

ПĂРУ. Пирĕн район çинҫен калаçмарĕç пуҫ-çке?

НИЛĂВ. Çук. Анҫах, ку тĕлĕшрен сыхă пулмаллине шаккасах каларĕç. Пирĕн колхосра та çав сáтăрлă, контр революҫутсилле ĕçсем çук мар тăр, тетĕп епĕ. Кĕркунне, ыраш çапнă ҫухне, йĕтем çинҫенех вăрлани çинҫен калаçмасҫĕçи-ха?

ПĂРУ. Ҫăнахах ун пек ĕçсем пулнă, анҫах ĕçсем çаплах йулнă. Вăл тата мĕн пурĕ те 10 кĕренке çеç.

НИЛĂВ. 10 кĕренкке! Совет сойусенҫе халĕ 200 пин колхос шутланаҭ. Кашнийĕнҫе 10 кĕренкке çухалсан та, вăл 50 пин пăт! Пăхас пулаҭ, Петр Софронҫ.

ПĂРУ. Ну, малалла пулмĕ, Нилăв йулташ. Ку тĕлĕшрен çирĕп ĕçлĕпĕр. Пухура та сӳгсе-йаватпăр пуҫ-ха ку ыйтăва.

НИЛĂВ. Какшĕ! Йавас пулаҭ. Сутсе-йавăпăр (хуллен). Ку, Николай Николайҫ тата мĕнле ĕçлет-ха. Сийенлĕ мар-и?

ПĂРУ. Иван Каврилҫ та, хам та, пит тавуҫнă. Нихçан та пулманхи пек машшинсене йусаса хуҫĕ, хăҭ ыранах çуракине тух. Куç умĕнҫе вĕт... Ей, Николай Николайҫă... Кил-ха кунталла.

ТЕВИККĔН (пырса). Мĕн калас тетĕр, Петр Софронҫ?

ПĂРУ. Каласси-тăвасси çакă çеç. Акă, Нилăв й-ш йалхуçалăх машшинĕсене есĕ лайăх хатĕрлени çинҫен пĕлесшĕн. Кăтарт-ха акă пире плуксене.

ТЕВИККĔН. Мухтанма пултараймастăп. Мĕнле ăсталăх çитнĕ, çавăн ҫухлĕ. Акă хаҫ те плуксене сăрлап-ха... Симĕс сăрăпа...

ПĂРУ. (Нилăва) Аҭа, пăхар-ха еппин. Мĕнле вăл хатĕрлет (пăхаççĕ).

НИЛĂВ. Та! Хапрăкра тунă пекех. Сăрлани çитмест, кассисене тата çутатнă, краççын сĕрнĕ. Ҫăнах, сан кунта макаçăнри пекех...

ТЕВИККĔН. Тăнлă колхоçнĕк пулас тетпĕрçке. Опҫă пурлăхне епĕ хам куçран та тирпейлĕрех пăхатăп.

НИЛĂВ. Ну, ĕçле, ĕçле, Опҫăллă пурлăха пăхма çапла кирлĕ те. Ну, кайар епĕр, Петр Софронҫ.

(Кайаççĕ, Тевиккĕн ампар алăкĕ патне пыраҭ те, алăкне уçаҭ).

ТЕВИККĔН. Пурте кайрĕç. Хаљ никам та çук. Тултартăн и? Аћа, тух ђасрах, çын çук ђухне.

(Пысăк михпе тырă тулгарса ампартан Кашкăр тухаћ)

КАШКĂР. Никам та çук-и? Аћа, пулăш хăвăртграх... Йавăр, мур илешшĕ! Аћа, аћа, хăвăртрах...

(Миххе машшин сарайне кўртсе хураççĕ).

КАШКĂР. Каçхине, çынсем çывăр ан, лаша кўлетпĕр те, кунта. Унган тўрех пасара... Мĕн пăвраpĕç ха лешсем?

ТЕВИККĔН. Вĕсем хăйсеннех... Пурне те итлеймерĕм-те, çапах пĕр ик сăмах хăлхана кĕрсе йулђĕ. Колхос пурлăхне хытăрах сыхламалла теççĕ.

КАШКĂР. Ха ха ха! Хăçан вĕсем вăраннĭ. Ăна малтангарах вăранмаллађђĕ... Ну, мĕнле сан савхос, вăл кутаса пулĕ?! Ревиçи тăвраш тусан, пурте тĕрĕс пуљ?

ТЕВИККĔН. Пĕлетĕн ĕнтĕ. Тарасапа тырра тургтарнă ђухне йаланах ытлашши шутлагăп. Вара çав ытлашши тырă ман халĕ 100 пăт ытла шугланаћ. Мĕн есĕ, колхос тыррине тетĕн-им?

КАШКĂР. Хо-хо-хо! Ĕçленĕ тунă... Ан шарла... Тупăшĕ пĕрле. Есĕ маншăн, епĕ саншăн... Пурăнăпăр-ха хулленех çапла...

ТЕВИККĔН. Тс-с-с-с! Такамсем килеççĕ. Ђарăн... (кĕреççĕ, прикатир, Саттур тата Пăру).

ПĂРУ. Ак ку пирĕн колхосăн йалхуçалăх машшинĕсен сарайĕ. Кунтах ампарсенђе колхос тырри. Пĕтĕм пурлăх пĕр çĕрте. Кунтах çĕрĕн-кунĕн, ăйхине, апатне пĕлмесĕр, пирĕн савхос пурăнаћ Акă вăл хăй те кунтах... халĕ машшинсене йусатпăр-ха,..(Кашкăра) Иван Каврилљ, есĕ пĕлнĕ и-ха, пирĕн колхоса Шупашкартан прикатир килнĕ вĕт. Çавăнпа çўретпĕр ха колхоса курса.

КАШКĂР. Пит лайăх. Районтан вара пирĕн пата килкелеççĕ, анђах Шупашкартан пирвайхи хут-ха... Ну, штошĕ? Пăхăр. Паллашăр...

ПРИКАТИР. Ђăнахах пăхма лайăх. Плуксене сăрланă... Кассисене çутатнă... Епĕ кун пеккине малтанласа куратăп ха.. Аћа, туртса кăларар-ха пĕрне çутăрах çĕре...

(Саттур пĕр плукне кăлараћ).

САТТУР. Та, çийелтен лайăх сăрланă... Ах, шеремет-сем, пĕлеççĕ ĕçлеме...

ПРИКАТИР. А... кунти кайкки ăçта? (плука çавăра,

çавăра пăхать). Кунти тата? Кунта кайккăсем пулмалла-çке. Ăçта вĕсем? Мĕн цĕн есĕр сăрланă хыççăн кайккăсене тăхăнтарса хуман...

ТЕВИККĔН. Ай, мур илешшĕ, маннă. Пĕр плукĕ кайккăсăрах йулнăђђĕ çав. Çавăнта кăларса хунăђђĕ. Илсе килем-ха... Есĕр пăхăр, пăхăр. Ав çейăлккăсене пăхăр тата... (тухса кайать).

ПРИКАТИР. Колхос претçегаттĕлĕ есĕ-и-ха?

ПĂРУ. Епĕ-çке.

ПРИКАТИР Нађђас Саттурпа пĕрле пăхса тухăр-ха плуксене, пурте тĕрĕс-и вĕсем? Миçе ха сирĕн плук?

ПĂРУ. Пĕр касăлли 12, икĕ касăлли 25, пурĕ 37.

ПРИКАТИР. Çырса хурăпăр (çырать).

КАШКĂР. Мĕн пăхмалли пур унта? Плук—и плук! Урăх ним те çук. Пурте тĕрĕс... Мĕн унта... Атăр-ха луђђĕ, епĕ сире çейăлккăсем кăтартам... Вăт лараççĕ тăк лараççĕ. Премă йур айăнђе... Çитменлĕхсене те пĕлес пулать вĕт. Атăр-ха.

ПРИКАТИР. Атăр, пăхса тухар-ха нађђас. Паллашас тăк тĕппипех паллашас (Саттурпа Пăру сарайа кĕреççĕ).

КАШКĂР. Тĕлĕнетĕп епĕ сиртен... Петр Софронч. Ей, Петр Софронђ, кил-ха кунталла (Петр Софронђ пырать, темскер пăшăлтатса илеççĕ).

САТТУР. (Сарайра шутлать) Пĕрре, иккĕ, виççĕ.. (кайалла тухать) 33, 37 плукран вăзăр виççĕшин касси-сем айĕнче пĕрер кайкки çук...

КАШКĂР. Мĕн тетĕн! Пĕрер кайкки çеç. Сан шутупа вĕсем ăçта пек?

САТТУР. Епĕ ăçтан пĕлетĕп? Теприсене ку йапала. тен, çаплах кирлĕ пуљ... Ман шутпа кунта..

КАШКĂР. Мĕн? Кала, мĕн ђĕнмесĕр тăратăн? Çав колхос правлени çине тăрăнса, пирĕн айа шăтăк ђавсах пурăнатăн ĕнтĕ... Çав тĕрлĕ елеклемесен те йурĕђђĕ.

САТТУР. 33 плукăн пĕрер кайккă çук. Мĕн иккенне хăвах кала... Çăтăрçă ĕçĕ ку... Вот вăл мĕн!

ТЕВИККĔН (кĕрсе). Мĕн есĕр, мĕн çинђен... Çав плуксем çинђен мари. Кайккисене епĕ тимĕрçе кайса панăђђĕ йусамашкăн... Епĕ мансах кайнă... Акă пурте кунта... Сăрри типсе çитсенех вырнаçтаратпăр...

КАШКӐР (хуллен). Ҫӗрем лаштах кайрӗ... Епӗ темскер тесе.

ПРИКАТИР. Мӗн? Есӗ мӗн пирки?

КАШКӐР. Ахалех, епӗ хам тӗллӗн калаҫатӑп (Саттур ҫине пӑхса). Ну, мӗнле, плуксем ҫипер-и, ҫуракине хатӗр-и, ҫурма хисеплӗ утарнӗк.

САТТУР. Хатӗр. Хатӗр...

ПРИКАТИР. Аӑр-ха, колхос вӑрлӑхне пӑхар тата. Ку алӑка тата мӗншӗн питӗрмен? Ӑҫта-ха претҫетаттӗл?

ПАРУ. Епӗ кунтах-ҫке...

ПРИКАТИР. Мӗншӗн питӗрмен? Мӗншӗн алӑкӗ уҫах?..

ПӐРУ. Пӗлместӗп епӗ. Николай Николайҫ, кам уҫнӑ тата ку алӑка?

ТЕВИККӖН. Е, мӗн тетӗн-ха, тӑванӑм? Мӗншӗн уҫӑ?! А, епӗ унта сӑрӑсем, сӑрӑ мелкисем хуратӑп. Паҫӑр кӑнакӗнӗҫҫӗ. Питӗрме маннӑ пулас...

ПАРУ. Халех питӗр. Мен ҫаварна карса ҫӳретӗн.

ТЕВИККӖН Айаплӑ... Мӗн тӑвас, вӑрҫма та пултаратӑр. Ҫӑн сӑмахӑн суйи ҫук ӗнтӗ...

ПРИКАТИР. А, ку тата мӗн? Тулӑ тӑккаланҫӑкӗ ҫакӑнта сарай йеннелле пымасӗ-и?

ПӐРУ. Ҫӑнахах ҫке! Ку мӗн йапала тата? Иван Каврилч! Николай Николайҫ! Ку мӗне пӗлтерет.

КАШКӐР. А! вон мӗн вӑл! Паҫӑр машшин сарайне ҫейӑлккӑна пропӑвӑт тума илсе тухнӑҫҫӗ. Есӗр тӑрӑр-ха, епӗ йӑтса тухам (кӗрсе сарайӗнҫен тырӑ йӑтса тухать). Акӑ вӑл.

ПРИКАТИР. Пропӑ! лайӑх пропӑ! Кунта сахалтан та пӗр ҫентнӗр тулӑ пулӗ. Неуштӑ вара ҫавӑн ҫухлех кирлӗ пулҫӗ...

КАШКӐР. А, ӑна пропӑвӑт тӑк, лайӑхах пропӑвӑт тӑвас пулать...

ПӐРУ. Пӗркун кун ҫинҫен лару туса калаҫнӑҫҫӗ. Ҫӑнахах ҫапла йышӑннӑҫҫӗ. Ун ҫинҫен протокол та пур-ха пирӗн...

КАШКӐР. Ӑҫтан саккунсӑр ҫапла колхос ампарӗнҫен тырӑ илсе тухас-ха? Хаҫ вӗт уншӑн, турӑ сыхлатӑр, 10 ҫул йе ҫи пысӑк наккасани параҫҫӗ.

ТЕВИККӖН. Епӗ савхос тата тырра токкумӗнтсӗр

ампартан кăлармалла-им? Манăн акă протоколтан çырса илни те пур. Пăхăр акă хăвăрах, шанмастăр пулсан...

САТТУР (хуллен). Тфу! Кайаннăйсем! Хăш йенђен, хăш йенђен пырса çыртас, пур йенђен те йака тăвасшăн... Ну, çапах тыгăпăр-ха...

КАШКĂР. Мĕн тетĕн?...

САТТУР. Хăçан пуçĕсене çийĕç-ши? тетĕп...

КАШКĂР. Ха-ха-ха! Камсем?

САТТУР. Анкли пуршуйĕсем, тетĕп...

ПРИКАТИР. Та, сирĕн кунта çуракине лайăх хатĕрленеççĕ, колхос тыррине те лайăх сыхлаççĕ. Сирĕн колхо ра ман пĕр ик-виç кун пуранас-ха. Кун пек колхоспа лайăхрах паллашмасăр май килмест.

САТТУР. Ђăнахах йулăр-ха, прикатир йулташ, пĕр ик-виç куна. Акă сопранисем тăвăпăр. Ĕççемпе тĕпренех паллашăр.

ПĂРУ. Йулăр çав. Мĕн васкамалли пур. Кăтартса хăварăр, вĕрентер... (Нилăв кĕрет).

НИЛĂВ. Па! Есĕр кунта çитнĕ те-и, прикатир йулташ? Епĕ ĕнер кăна сана пленăмра курнăђђĕ.

ПРИКАТИР. Ĕнер унта, пайан кунта.. Çапла ĕнтĕ пирĕн пурнăç. Сирĕн патăрта епĕ пĕр виç кун пурăнасшăн-ха.

НИЛĂВ. Мĕнле пысăк хисеп, мĕнле пирĕншĕн пысăк савăнăç? Мĕн кунта тăратпăр. Айтăр йалсовет кăнђелерне...

ПРИКАТИР. Тырпул планне тултарнă-и?

НИЛĂВ. Пăртак кăна тултарайман-ха.

ПРИКАТИР. Укçа-тенкĕ пухасси...

НИЛĂВ. Калама та намăс, 22%.

ПРИКАТИР. Мĕн?

НИЛĂВ. 22 прођăн çех.

ПРИКАТИР. Нилав йулташ, халех йалти активиссене, комсомолĕссене, ќуљттурла вăйсене пуçтар... Васкавлă йĕркепе пуху туса иртеретпĕр.

НИЛĂВ. Аťа, ђуптар-ха (Саттур кайаť).

ПРИКАТИР. Йалсоветне...

(Тухса кайаççĕ. Стсенă çине Тевиккĕнпа Кашкăр çеç йулаççĕ).

КАШКĂР. Ха-ха-ха! Ха-ха-ха! Ђавса таран, ђавса таран вĕт. Кайккисем те тупăннă. Протоколĕ те çумрах! Ха-ха-ха! Ваг çерçисене пырса та ан çыхлан...

ТЕВИККЁН. Хе-хе-хе! Еп хăрасах ўкнĕҫҫĕ... кайран вара ҫмиллентĕм... Асту, Иван Каврилҫ, вал-ку пулсассăн, систер. Хăлхана ҫивҫĕ тытăс пулаť...

КАШКĂР. Пасара каймалли пулмарĕ ĕнтĕ, пуринҫев ытла епĕ ҫавăншăн кулҫанатăп. Укҫи пит кирлĕҫҫĕ. Тăлăп илес тенĕҫҫĕ...

ТЕВИККЁН. Укҫи вăл тармĕ-ха. Ҫак Шупашкар хăнине ăса сан хамах пулăшăп..

КАШКĂР. Ха-ха-ха! Пропă! Йăтса тухатпăр. Вунă пăт ытла пулҫ пропи! Лайăх пропă! Ха-ха-ха! Епĕ тўсейместĕп... Кулса премă вар ыратаť... Ха-ха-ха! Туллине кўртсе хур р та, кайăпăр...

(Туллине кўр еҫҫĕ. сарайне тирпейлеҫҫĕ те, кайаҫҫĕ).

КАШКĂР. Ха-ха-ха!

ТЕВИККЁН. Ҫав тĕрлĕ хытă ан ахăлтат ĕнтĕ, таҫта йалта та илтеҫҫĕ пулĕ.

КАШКĂР. Ха-ха ха! Есĕ итле-ха. Итле-ха...

(Кайаҫҫĕ. Кĕтес хыҫĕнҫен Мархва тухаť).

МАРХВА. Тфу. Харам пырсем! Сăтăрҫăсем! Хăҫа кăна пуҫĕсене ҫийĕҫ. Нумай ҫўреймĕҫ те. Унҫен хан. Вара пурне те каласа парăттăм. Тфу, пĕтме маннăскерсем!

*Ҫаршав.*

## III-мĕш пайĕ.

Теккоратси: Колхос правлени пўлĕмĕ.

Стсенă ҫинҫе пуху. Пухура колхос активĕ кулаксен сăтăрҫăлла ĕҫĕсене сўтсе-йаваť. Преҫитиумра прикатир, Кусма, тата Мархва инке. Претҫетаттĕл умĕнҫе Кашкăр, Тевиккĕн, Пăру тăраҫҫĕ.

ПРИКАТИР. Тевиккĕн краштанин, хаҫ ҫеҫ колхосҫнĕксем калани тăрăх ху айăпусене йышăнагни?

ТЕВИККЁН. Ҫук, йышăнмастăп Колхоса епĕ хам кĕмен, мана пухупа илнĕ. Еп хам кĕресшĕн те пулман, мана вăйпа кĕртнĕ. Колхоса йалхуҫалăх машшинĕсене йусама ҫын кирлĕ пулнă та, вĕсем вара мана иншенерсемпе техниксен шуҫĕпе ĕҫлеме илнĕ. Епĕ вара ĕҫленĕ. Ăна ав Петр Софронҫ та калама пултараť. Ҫапла вĕт, Петр Софронҫ?

ПĂРУ. Ҫапла, ҫапла, Николай Николайҫ. Сана пула ҫирĕм ĕнтĕ хама, хам пуҫа... ҫапла... ҫапла...

ПРИКАТИР. Краштанин Тевиккĕн, кунта акă колхоçнĕксем сана, Кашкăрпа пĕрле колхос тыррине сутнă тесе, айăпларĕç. Тата санах йу ри сăтăр тăвас шутпа плуксен кайккисене пытарни çинҗен каларĕç. Есĕ тата çейăлккăна пăхмасăр йур айне хăварнă. Есĕ колхос пурлăхне салатас ĕçпе сăтарлă ĕçсем туна. Çуракине хатĕрлеиессине пăсса пынă. Йышăнатăн-и ху çине çакăнта тухса каланисене?

ТЕВИККĔН. Йахăнне те йамастăп. Епĕ ку ĕçре тап-тасах. Ман çине мана курайман сем тăрăнаççĕ. Епĕним те айăплă мар.

ПРИКАТИР. Есĕ тата, Кашкăр краштанин, ху айăпусене йышăнтăн и?

КАШКĂР. Çук, йышăнмастăп. Епĕ айăплă çын мар.

ПРИКАТИР. Есĕ тата, колхос претçетаттĕлĕ, мĕн калама пултаратăн?

ПĂРУ. Каланисене пурне те йышăнатăп. Пур ĕçшĕн те епĕ айăплă.

САСĂ. Саттур Çтаппанĕ паçăрах калама сăмах ыйтрĕ. Çавна калаçма сăмах парăр-ха.

САТТУР. Парăр-ха, тата епĕ калам. Ман каламалли пур.

ПРИКАТИР. Аҫа, кала.

САТТУР. Йулташсем! Колхос ĕçне мĕн пурĕ те çакăнта ларакан, колхоса хĕсĕнсе кĕнĕ кулак, çак Николай Николайҗ, Кашкăрпа пĕрле, пăсса пынă. Вĕсем колхос ĕçĕсене, вăрттăн ĕçлесе, хăйсен аллине илме пăхнă. Колхос претçетаттĕлĕ Петр Софронҗ вĕсен ирĕкĕнчен туха шăн пулман. Ырă йатлă пуласшăн пулнă. Ку шайккăна акă мĕншĕн айăплатăп епĕ. Кунта епĕ Тевиккĕнпа Кашкăр çинҗен калатăп. Пĕр пĕринпе канашласа тата хăйсен „активне" ĕçсе ӳсĕртнипе вĕсем Нилăв умĕнҗе пулнă йалсовет претçетаттĕлне вырăнтан кăларма пĕлнĕ. Кунĕн-çĕрĕн ĕçнĕ. Ĕçлĕ çынсене те ĕçке хутшăнтарма тăрăшнă. Ĕçсен çапăçса пĕтнĕ, пăшал персе çӳренĕ, халăха хăратнă. Весемех суйа токкумĕнтсем панă. Вçаткăсем илнĕ. Колхоçнĕксенҗен пухнă укçасене хăйсем çумне җикнĕ. Çамрăксене совета хирĕç йурăсем вĕрентнĕ. Ĕçленĕ хушăра колхос тыррине пасара кайса суттарнă, укçине хăйсен кăсйине җикнĕ. Çуракине ан тухҗăр тесе, плуксен кайккисене кăларса илнĕ.

МАРХВА. Тата вĕсемех, парттирен мăшкăлас шутпа, лашасене йапăха кăларса, йапăх лашасене „Полъшевик“, „Комсомолкă“, тесе ђĕннĕ.

САТТУР. Тĕрĕс. Çаплах мăшкăлатђĕç. Епĕ çакна калас тетĕп. Çак пирĕн умра ларакансем виççĕшĕ те колхосăн хайар тăшманĕсем. Вĕсем — клас тăшманĕсем, контр-револђутсионерсем. Вĕсем сăтăрçăсем. Çавăнпа та вĕсене пĕр шеллемесĕр, халех арĕслесе, сут аллине памалла.

САСĂ. Тĕрĕс, халех колхосран кăларса пăрахас.

ТЕВИККĔН. Саттур суйаť. Халăхсем, ăна ан итлĕр. Епĕр унпа вăрçăллă... Ĕлĕкрех ђухне епĕр ăна вăрăпа тытнă.

САТТУР. Суйатăн! Кам курнă мана вăрăпа тытнине? Хăш ĕмĕрте?...

ТЕВИККĔН. Хуллентерех, хуллентерех...

САТТУР. Йăтă! Таса çынна варласшăн... Унăн шăлĕсем халĕ те çивђĕ ха...

КАШКĂР. Таса çын! Ха-ха-ха! Николай Николайч сана вăрăпа тытнине хам куçпа хам курнă...

САТТУР. Халăхсем! Кашкăр суйаť.

ПРИКАТИР. Çук! Саттура, утарнĕк колхоçнĕке, тăшман сăмахĕпе варлама памăпăр-ха. Çук! Шанмастпăр епĕр сире. Малалла сире калаçма сăмах памастăп.

КАШКĂР. Сирĕн решшенипе епĕ килĕшместĕп. Епĕ Мускава шалăпă паратăп,

ТЕВИККĔН. Унта кăтартĕç ха вĕсене...

ПРИКАТИР. Лăпланăр-ха пăртак...

ТЕВИККĔН. Лăпланăр-ха пăртак... Итлĕр, ав мĕн каласшăн хуларан килнĕ йулташ.

ПРИКАТИР. Сире сăмах памастăп. Ђарăнăр...

ТЕВИККĔН. Епĕ йĕркеллĕ пултăр тесе-çке...

ПРИКАТИР. Йулташсем! пĕрремĕш петтилеткана тăвата çулта тултарса, Совет сойусĕ иккĕмĕш, класăр сотсиалисăмлă опђăлăх тăвакан петтилеткăна кĕрĕ. Пĕрремĕш петтилеткăра епĕр пĕтĕм халăх хуçалăхне çĕнĕлле улăштарма инт устриллĕ никĕс хыврăмăр. Йалхуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетес çул çине тăратрăмăр. Совет сойусĕпе халĕ ђухăнсем те вăтамсенђен 60 прођђăн колхосра тăраť. Ђăваш респуплĕкне илсен

петтилеткă пирĕн çĕршывăн сăн-сăпатне те тĕпренех улăштарĕ. Пирĕн çĕнĕ хапрăк-савăтсем, колхоссем шăтса çитĕнĕç. Культура тĕлĕшпе аслă шкулсем уçрăмăр, çуталăх ĕçне вăйлатрăмăр. Çак çĕнтерӳсене епĕр клас тăшманĕсемпе тата вĕсен акĕнĕсемпе—сылтăмпа „сулахай“ оппортуниссемпе хыттăн кĕрешсе пырса турăмăр. Халĕ епĕр иккĕмĕш петтилеткăра. Иккĕмĕш петтилеткăн политтĕкла тĕп сатаĕ, классене пĕтĕмпех пĕтерессн, класла уйрăмлăхсене, експлоататси кăларса тăракан сăлтавсене пĕтерессн, еккономĕкре, тата çынсен ăстăнĕнĕе кăпиталисăм йулашкисене çĕнтерсси, пĕтĕм ĕçхалăхне сотсиалисăмлă опĕествăн ăнланулла, хастарлă строиттĕлсем тăвасси пулат. Паллах, çак пысăк сатаĕсене пурнăçламашкăн çине тăрса ĕçлеме тивет. Ку ĕçе пирĕн урса кайнă клас тăшманĕн хирĕçĕвĕпе кĕрещме тивет. Колхос строиттĕлстви халĕ клас кĕрешĕвĕн тĕп фронĕ. Тĕп тăшман пирĕн—кулак. Кулакăн никĕсе вакран та вакă сапаланĕăк хресĕн хуçалăхĕсем. Ленин сăмахĕсемпе каласан, „Хресĕенсем хăйсен хуçалăхĕнĕе харпăрлăхшăн тăрăшнă пирки, кăпиталисла йеркене çĕнĕрен пуçласа пыраççĕ“. Епĕр сапаланĕăк хуçалăхсене пĕрлештерсе, кулакăн никĕсне тĕпренех çĕмĕретпĕр, кулака çĕнĕрен шăтса тухма нимĕнле те вырăн хăвармастпăр, кулаксене хăйсене те, талккăшĕпе колхоса куçнă май, класĕпе пĕтеретпĕр Кулак çакна витĕр ăнланат. Кулак хăйĕн йулашки кунĕсене пурăнса иртернинĕ аван сисет. Хăйĕн никĕсне çĕмрекенпе колхос строиттĕлствипе вăл мĕн пур вăйĕпе кĕрешет.

Кулак ĕейе. Вăл колхоспа халĕ уççăн кĕрешмест. Хăйĕн сăтăрлă ĕçĕсене вăл пăсăлнă çынсем урлă тăват. Клас сисĕмне çухатнă çĕрте вăл ытларах та ĕçлеме пĕлет.

Акă пирĕн умра ларакан Тевиккĕн кулак ĕçне илер. Колхос строиттĕлствипе вăл мĕнле кĕрешсе пынă? Кулак Тевиккĕн колхоса хĕсĕнсе кĕнĕ шурă çарта пулнă пăсăлнă етем хӳттипе—шĕетовот хӳттипе, колхоса кĕрет. Кĕнĕ хыççăнах вăл кунта ĕçкĕ урлă колхос претçетаттĕлне хăй аллине çавăрса илет. Кашкăрпа вăл малтанах туслă пулнă. Колхос претçетаттĕлĕ çемçе ĕçленĕ пирки, Тевиккĕн кулак колхоса салатма хуçа пулса тăрат.

Колхоса салатассипе вĕсем мĕн-мĕн туни ҫинчен Саттур Ҫтаппанĕ каласа паҭĕ. Епĕ вĕсем ҫинҭе ҭаранса тăмастăп. Вăл преступленисемшĕн кашнишĕнех пысăк наккасани пама тивĕҫ.

Кунга епĕ тата уйрăмах колхос пурлăхне, сотсиалисăмла пурлăха сыхласси ҫинҭен каласшăн. Сотсиалисăмла пурлăх вăл таса, ăна никам та тĕкĕнме пултараймасŤ. Сотсиалисăмла пурлăха кулаксенҭен, параҫитсенҭен, контр-револҭутсионерсенҭен, сăтăрҫăсенҭен, шулҭăксенҭен, мароŤорсенҭен пит хытă сыхламалла. Ленин калаŤ: „Кивĕ опҭăлăх пĕтне ҭухне, унăн ўт-пўне тупăка шаккаса лартса шăтăка хумалла мар, вăл пирĕн хушăра ҫĕрсе ишĕлет, вăл ҫĕрет, тата пире хамăрах ҫав ҭире йертет“, тенĕ. Ҫавăнпа та пирĕн опҭăлăх пурлăхне сыхлассине хытăн пурнăҫламалла. Кун ҫинҭен Ленин акă мĕн каласа хăварнă.

„Пуршуйсемпе шулҭăксем, вĕсем пĕр металĕн икĕ йенĕ, вĕсем—капиталисăм тăрантарса ҫитерне харампырсен икĕ тĕп уйрăмĕ. вĕсем сотсиалисăмăн ҭи пысăк тăшманĕсем. Ҫав тăшмансене пĕтĕм халăх кусĕ умĕнҭе уйрăм тытса тăмалла. Сотсилаисăмла опҭăлăх йĕркисемпе саккунĕсене пĕртак ҫеҫ пăссан та, весене пăҭăртаса пăрахмалла. Ҫак тĕлĕшрен хуŤ мĕнле те ҫемҫелсе тăни, хуŤ мĕнле иккĕленни, вĕсемпе йавашшăн ҫураҫтарса ĕҫлени сотсиалисăм умĕнҭе питĕ пысăк айăпа кĕни пулаŤ,“ тенĕ.

Ҫавăнпа та ҫак ĕҫре Тевиккĕн кулакпа Кашкăр шулҭăкăн сăтăрлă ĕҫĕсене хўтĕлесе пынăшăн колхос претҫетаттĕлĕ Пăру краштанин питĕ пысăк айăппа айăпланаŤ.

Кулак Тевиккĕнпа Кашкăр, тата Пăру ĕҫĕнҭен сирĕн пурин те политтĕкла урок тăвас пулаŤ. Ку ĕҫ сире пурне те тивет. Сирĕн кунта уйрăм партийтсăсем, комсомол йаҭейкки, йалсоветҭĕ пулнă Неушгă вĕсем те ҫак сăтăрлă ĕҫсене курман? Курнă! Анҭах вĕсем ку сăтăрлă ĕҫсем ҫине тивĕҫлĕн ҫаврăнса пăхман. Шаннă. Ĕненнĕ. Клас сисĕмлĕхне ҫухатнă. Ҫавăнпа та халĕ хăйсем те пролеттарисен тиктаттурĕ умĕнҭе пысăк айăпа тăрса йулнă.

Мĕн тумалла-ха пирĕн хаҭхи вăхăтра? Клас тăшманĕ

çапăçнине хирĕç пирĕн колхоçнĕксен активне тăратмалла. Колхоса йертсе пырас ĕçе активран илмелле. Колхосшăн çапăçакан паттăрсене ĕçе кĕртмеллле пирĕн. Кашкăр пек „активсене“ пăсăлнă егемсĕне палăртса, вĕсене вăхăтра пĕр тăсмасăр активран кăларса сирпĕтес пулаť.

Колхоçнĕксене куллен вĕрентсе пырас пулаť. Колхоса кĕмен „колхоса кĕрес-ши, кĕрес мар ши“, тесе турткаланса тăракан уйрăм хуçалăхлă ђухăнсемпе вăтамсем хушшинђе те ĕçлеме кирлĕ. Çуракине хатĕрленес майпа колхос хумне сирĕн вăйлатас пулаť.

Акă пирĕн умра иккĕмĕш петтилегкăн пĕрремĕш çуракийĕ тăраť. Мĕнле кунта пирĕн тĕп сатађ? Тĕп сатађ кунта пирĕн тырă тухăçлăхне хăпартасси, уйар çанталăкпа пољшевикла кĕрешесси. Акротехнĕккăшĕн кĕрешесси. Халĕ епĕр акмалли çĕр лаптăкне аслăлатассине татса панă. Пирĕн сатађ халĕ пахалăхшăн кĕрешесси, тырпул тухăçлăхне ӳстересси, колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетесси. Ку сатађсем иккĕшĕ те пĕр пĕринпе тађђăн çыхăнса тăраççĕ.

Çирĕп тистсиплинăшăн, кулакла туртăмсемпе хайаррăн кĕрешессишĕн çапăçмалла.

Çаксене астуса пирĕн çуракине вирлĕн хатĕрленмелле. Ку тĕлĕшрен сирĕн хăвăрăн уйрăмах тĕплĕ хатĕрленмелле. Сирĕн çак колхоса хĕсĕнсе кĕнĕ клас тăшманĕсен сăтăрлă ĕçĕсене тӳрлетсе йусамалла-ха... Çуракиђђен шутлă кунсем йулнă... Хатĕрленĕр, йулташсем!

Хамăр поçитсисене клас тăшманне парăпăр-и вара? Çук, памăпăр. Клас тăшманĕсене ним шеллемесĕр çĕмĕрсе пырар. Вара епĕр, çапла ĕçленипе, пур йавăрлăхсене те çĕнтерĕгĕр. Сталин йулт. пуçпулса тăракан пољшевиксен Партти Тĕпкомĕ кăтартнисем тăрăх ĕçлесе, атăр-ха, йулташсем, фронтри пек, рапођђисем пек, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне малалла! Ак ку тăшмансене револютсилĕ саккунлăх тата колхоçнĕксем хăйсем ыйтнă тăрăх, арĕслесе, халех хулана сут аллине ăсатмалла тăвас.

ХАЛĂХ. (Пурте хыттăн алă çупаççĕ).

САСĂ. Ăçта кайнă ха тата Нилăвĕ! Мĕншĕн вăл кунта килмен?

КУÇМА. Ђирленĕ-ха вăл... Çавăнпа килеймен.

САСӐ. Колхоса кулаксем хӑйсен аллине илме пӑхнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларманшӑн вӑл та айӑплӑ.

ПРИКАТИР. Унган та ыйтатпӑр-ха... Хӑй айӑпне пӗлсех килмен вӑл.

САСӐ. Саккуна хирӗҫ ӗҫленӗ пулсан, вӑл камне пӑхмасӑрах ответ тыттарас пулать.

ПРИКАТИР. Апла пулсан, колхосра сӑтӑрлӑ ӗҫсем тӑвакан тӑшмансене хулана ӑсатмалла тӑватпӑр еппин.

САСӐСЕМ. Хулана! хулана!

КУҪМА. Ҫуракине иртерме ан кансӑрлеҫҫӗр пире.

САСӐСЕМ. Ӑсатас, ӑсатас!

ПРИКАТИР. Сасӑлатӑп. Кам ҫак тӑшмансене колхосран тасатса, сут аллине партарас тет, ҫавсем алӑ ҫӗклеҫҫӗ.

ХАЛӐХ (пурте алӑ ҫӗклеҫҫӗ).

КАШКӐР. Епӗр ку ӗҫе хирӗҫ. Есӗр пире, курайманнипе, кӑларатӑр. Епӗр нимӗнле усал ӗҫ те туман.

ТЕВИККӖН. Ан тив, хӑтланҫҫӑр ӗнтӗ... Унта, кайран, пӑхӑпӑр..

ПРИКАТИР. Йулташсем! Мускавра кӑҫал, февраль уйӑхӗнҫе, утарнӗк колхоҫнӗксен сйесӗнҫе, Сталин йултухса калана сӑмаха пӗлетӗр-и есӗр? Унта вӑл пур колхоҫнӗксем те тӗреклӗ пурӑнакансем пулмалла, тенӗ. Ҫак ҫӗнӗ лосунка пурнӑҫлама пирӗн халӗ пур услависем те пур. Ҫӗре лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнсан, хамӑр уйхирсенҫен епӗр тырӑ 2—3 хут ытларах илме пултаратпӑр. Патшалӑха мӗн ҫухлӗ памалли пирӗн малтанах паллӑ. Тырӑ налокӗ ун ҫинҫен тӗплӗ калать. Мӗн ҫухлӗ епӗр ытларах тырӑ ӗҫлесе кӑларатпӑр, ытлашши тырӑ хамӑрах пулать. Пирӗн мӗн пур ӗҫ те колхосра тӗплӗ, саттурӑн ӗҫлесси ҫеҫ. Ытти вара, ҫине тӑрса тытӑнсассӑн, хӑйех йӗркеленсе пырать.

САТТУР. Йулташсем, колхоҫнӗксем! Акӑ пирӗн умра ҫураки ӗҫӗ тӑрать. Ку ӗҫе епӗр ӑнӑҫлӑ иртерӗпӗр. Ку ӗҫе ӑнӑҫлӑ иртересси ҫак колхос тӑшманӗсемпе кӗрешсе вӗсене ҫӗнтерни те паллӑнах кӑтартать. Малашне епӗр колхосӑн кашни пӗрҫӗ тырӑшӑн, кашни шӑрпӑк татӑкӗшӗнех кӗрешӗпӗр. Ӗҫе утарлан ӗҫлесе пырса, Сталин йулташ калана пек, колхоҫнӗк пурнӑҫне тӗреклӗ тӑвассишӗн кӗрешӗпӗр. Клас тӑшманӗсене, логӑрсене, рваҫсене малалла та тасатса пырӑпӑр. Ҫапла-и йулташсем?

КУÇМА. Пирĕн пайанах çак тăшмансем вырăнне колхоса çĕнĕ правлени суйламалла. Кама суйлăпăр?

САСĂ. Саттура! Мархвана! Куçмана!

ПРИКАТИР. Урăх кăнтитатсем çук-и?

САСĂ. Çук-çук! Вĕсенђен пуçне урăххисем никам та пулас çук.

ПРИКАТИР. Сасăлатăп. Кам колхос правленине çак йулташсене суйласшăн, алă çĕклĕр!

ХАЛĂХ. (Пурте алă çĕклеççĕ).

ПРИКАТИР. Çĕнĕ правленийе Саттур Çтаппанĕ—партти кăнтитађĕ, колхоçнĕк утарнĕк, краштăн вăрçи паттăрĕ; Мархва—красноармейккă утарнитсă; Куçма—комсомолĕс суйланаççĕ. Мĕнле, йулташсем, правленийе тивĕçлĕ çынсем суйлаиђĕç и?

САСĂ. Самăй тивĕçлĕ çынсем!

ПРИКАТИР. Апăр ха, йулташсем, мала тухса хăвăра колхоçнĕксене кăтартăр.

(Виççĕшĕ те мала пĕр çĕре пырса тăраççĕ).

ХАЛĂХ (Хыттăн алă çупаççĕ).

САСĂ. Ку правлени составĕпе, епĕ те колхоса кĕретĕп ĕнтĕ.

ПРИКАТИР. Ну, йулташсем, пур ыйтусене те пĕтертĕмĕр. Утарлăн, паттăрăн ĕçлеме ырă сунатăп... Çĕнĕ правленире сирĕн халђ хăвăр кăмăллană, ђăн-ђăн полђшевикла ĕçлекенсем. Сирĕнпе тађă çыхăнса ĕçлесси курăнса тăрат. Çавăнпа та сирĕн ĕç малалла кайĕ, тесе шанатăп. Мĕнле ĕçлемеллине сирĕн çĕнĕ правлени лайăх пĕлсе хатĕр тăрĕ. Ак ку тăшмансене халех хулана... Çакăнпа епĕ пухăва хупатăп.

МАРХВА. Ђимĕр-ха, ђимĕр, йулташсем! Епĕ хам пуçри шухăша çеç сире каласшăн... Тăшмансемпе кĕрешни усăсăр пулмарĕ вĕт. Мĕн ђухлĕ ђейе ĕçлерĕç пулсан та, епĕр вĕсене çĕнтертĕмĕр-çĕнтертĕмĕрех.

ХАЛĂХ. Тĕрĕс, тĕрĕс!

МАРХВА. Сывă пултăр хуларан пире пулăшма килнĕ прикатир-рапођђи полђшевик! Сывă пултăр пире йертсе пыракан Коммуниссен парттипе унăн çулпуçĕ Сталин й-ш!

ХАЛĂХ. Ура! Уррр-р-а!

(Пĕр самантлăха пауса. Унтан колхос тăшманĕсем пĕрин хыççăн тепри, пуçĕсене ђиксе, тулалла тухаççĕ. Халăхсем шăхăраççĕ).

*Ђаршав.*

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

КУС

Хакĕ 60 пус
Цена 60 коп.

Х-4

С. Лашман **Сборник малых форм.**

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1933